М
П 91
319-478.

А. Пушкин

# ЕВГЕНИЙ ОНЕГИН

А. С. ПУШКИН

# ЕВГЕНИЙ ОНЕГИН

*РОМАН В СТИХАХ*

*Перевод*
*Петра Хузангая*

ГОСУДАРСТВЕННОЕ ИЗДАТЕЛЬСТВО ЧУВАШСКОЙ АССР
ЧЕБОКСАРЫ — 1950

К П91

А. С. ПУШКИН

# ЕВГЕНИЙ ОНЕГИН

*СӐВӐЛЛӐ РОМАН*

*Петр Хузангай куҫарнӑ*

КОМСОМОЛЬСКАЯ РАЙОННАЯ БИБЛИОТЕКА
ИНВ. № 9906

ЧӐВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР — 1950

16319-чув

Республиканская
библиотека
им. М. ГОРЬКОГО
Чувашской АССР



Витĕрех каппайчăкскер, вăл тата темле уйрăмах мăнкăмăллă пулнă; çавнашкал мăнкăмăллă çын хăйĕн киревсĕр ĕçĕсене те, ыррисене те пĕр пекех ним уямасăр йышăнать; ку ĕнтĕ çын хăйне ыттисенчен пысăкраха хунинчен килет, çав пысăклăх, тен, ун шухăшĕнче çех пулин те.

*Ахаль çыруран.*

Шухăшламарăм йăпатмашкăн
Çӳлти мăнаçлă çынсене:
Юлташлăха савса, пĕр саншăн
Ман халалас килет парне.
Эп тивĕçлĕ пуласшăн санăн
Таса ĕмĕтпелен çунан,
Чĕрĕ поэзипе çуталнă
Хăватлă шухăшлă чунна.
Йышăнсамах эппин эс манăн
Çак чăп-чăпар сыпăксене,
Çурма-шӳтле, çурма-салхуллă,
Ял хавалле те идеаллă,
Тирпейсĕр çыркаланине.
Унта ман чун хавхаланни те
Пĕр ыйхăсăр çĕр каçнисем,
Ем-ешĕл яш чухне çырни те
Йăлтах сархайнă çулхисем,
Аспуçăм сиввĕн сăнани те
Чĕремĕн хурлă паллисем.

## ПĔРРЕМĔШ ПАЙĔ

Пурнасшăн таваскать, туйса та юлас, тет.

*К. Вяземский.*

### I

«Çав ман куккан чи тӳрĕ кăмăл;
Чăнах вăл аптраса ӳксен,
Хăйне сума сутарчĕ çăмăл,
Унтан аван мел çук иккен;
Ăна пăхса ытти вĕрентĕр;
Анчах кичем те-çке, сикмесĕр
Яра куна та çĕрĕпе,
Лармашкăн чирлĕ этемпе!
Мĕнлеултав ку, шутласассăн:
Çур вилене эс йăпатан,
Ун минтерне хăпарткалан,
Хуллен эмел сыптаркалатăн,
Сывлатăн ассăн, ху шутлан:
Хăçан кăнтас сана шуйттан!»

### II

Çапла шухăшласа, вĕçтернĕ
Яш çын тусанлă çулпалан;
Зевес ирĕкĕпе — пилленĕ
Мулне ăна мĕнпур тăван.
Людмилăпа Руслан тус-йышĕ!
Сире эп, кăмăлăр уççишĕн,

Роман геройĕпе тӳрех
Паллаштарам çак сехетрех:
Онегин, манăн ырă тантăш,—
Нева çыранĕ хĕрринчен.
Эсир те, вулаканăм, тен,
Çавăнталли. Эп хам унта кăшт
Çӳренĕччĕ, анчах сиен
Кӳрет мана çав çурçĕр ен.

III

Хăй службинче тăрса пит тӳрĕ,
Тухмарĕ ашшĕ парăмран;
Виç тапхăр балл çуллен вăл турĕ,
Вара йăлт юхăнчĕ кайран.
Евгение шăпи сыхларĕ:
Малтан мадам астукаларĕ,
Унтан мĕсье хăй йĕркипе.
Ачи шухрахчĕ те—чипер.
Мĕсье аббат, француз мăнтарăн,
Ача ĕшенесрен — ăна
Вĕрентнĕ шӳт туса кăна,
Пит хистемен ырпа-усалшăн,
Алхаснăшăн кăшт вăрçнă та
Çӳретнĕ Çуллахи сада.

IV

Евгений çитĕнсе çитсессĕн,
Пăлхавлă çамрăк чĕрине
Ачаш ар шанчăкĕ кĕрсессĕн —
Хуса кăларнă мĕçьене.
Ак ман Онегин ирĕк каччă;
Çӳçне çĕн модăпа кастарчĕ;
Тумланчĕ Лондон денди пек:
Тĕнче çути курать тинех.
Вăл французла пĕр такăнмасăр
Сăмахлашать, яка çырать;
Мазурка çăмăллăн ташлать,
Пуçне тайма пĕлет пит капăр:
Çынсем пекех. Тата мĕскер?—
Вăл ăслă, терĕç, вăл чипер.

## V

Пурте эпир кăшт-кашт вĕреннĕ —
Мĕн ĕлкĕрнĕ, мĕн лекнĕ пек.
Пире тĕлĕнтерес текенĕн —
Ансат çиçме хăй пĕлнипе.
Онегина пайтах сăнарĕç,
Вăл (çирĕп тиркешсем каларĕш)
Вĕреннĕ çын, анчах педант:
Ун пур пĕр ăнăçлă талант —
Калаçура, пит хистенмесĕр,
Пурне те сĕртĕнет хуллен,
Мăн тав-шавра нумай пĕлен
Питпе-куçпа ларать чĕнмесĕр,
Е пултарать хĕрарăма
Эпигрампа вăл култарма.

## VI

Латынь кучух йăларан тухрĕ;
Чăнне калас пулсан — пĕлет
Вăл латинла та кирлĕ чухлĕ:
Эпиграфсене тĕшмĕртет,
Ювенала кăшт тапраткалĕ,
Çыру хыçне вăл лартĕ: *в іле*,
Тата кăшт Энеидаран
Пĕр-ик йĕрке пĕлет аран.
Чаваланма вăл юратмастчĕ
Эпир пурнан çак çут тĕнчен
Çуллен çулхи тусанĕнче,
Анчах хăй асĕнче усратчĕ
Анекдотсем иртни çинчен —
Шăп Ромулран хальхи кунччен.

## VII

Поэзишĕн чун хĕрхенмесĕр
Çунас кăварĕ çуккипе —
Ăна хорей те, ямбĕ те пĕр,
Уйăраймастчĕ нимĕнпе.
Гомерпала Феокрита вăл
Вăрçатчĕ; хăй вулатчĕ хапăл

Адам Смита, çавна пулăх
Пит ăслă эконом вăл ак:
Чухлать — мĕнле пуять патшалăх,
Мĕнпе вăл пурнăç пурăнать,
Ма ылтăн кирлĕ мар ăна,
Продукт пулсан тыткаламалăх.
Ун ашшĕ ăнланман çакна,
Çĕрне вăл хывнă саклата.

## VIII

Шутлаймăп эп тата Евгений
Мĕн пĕлнине: ерçӳ çук ман.
Анчах мĕнре вăл чăн-чăн гений,
Мĕн пĕлнĕ пуринчен аван,
Мĕнпе яшран вăл хавасланнă,
Мĕнпе йăпаннă, асапланнă,
Мĕнре вăл кунĕ-кунĕпе
Киленнĕ тунсăх чунĕпе,
Ку — юрату науки пулĕ:
Ăна мухтанă хăй Назон,
Çампа хĕн-хурлă иртнĕ ун
Пăлхавлă та хитре кун-çулĕ
Молдавин лăпкă хирĕнче,
Тăван Италинчен инçе.

## IX

. . . . . . . . . . . . . . . . . .
. . . . . . . . . . . . . . . . . .
. . . . . . . . . . . . . . . . . .

## X

Епле вăл ир икĕпитленнĕ:
Пĕр шаннă, пĕр кӳлешнĕ пек,
Пĕр ютшăннă, пĕр ĕнентернĕ,
Пĕр хурлăн курăннă вăл тек.
Пĕр вăл мăнаçлăн, пĕр тӳлеккĕн,
Пĕр ăшшăн пăхнă, пĕр сивлеккĕн!
Чĕнмен чухне — сăпайлă чун,
Çăвар уçсассăн — хып та çун,
Çырăвĕсем чуна витерĕç!

Савсан-тусан епле тата
Хăйне манмашкăн вăл ăста!
Епле ун куçĕ çивчĕ, çепĕç,
Вăтанăçлă та, шухă та,
Куççуль те ялкăшать унта!

## XI

Хăйне вăл тĕрлĕрен кăтартнă:
Е иментернĕ хĕр чунне,
Е унăн сехрине хăпартнă,
Е йăпăлтатнă хăш чухне.
Вăл пĕлнĕ самантне тытмашкăн,
Хăюсăр хĕр шикне вăшт-ваштăн
Ăспа, вĕрилĕхпе çĕнме,
Хĕр хăй ачашласса кĕтме,
Тархаслама, сăмах татмашкăн,
Чĕре тапраннине илтме,
Юратăва йĕр йĕрлеме,
Сасартăк вăрттăн курнăçмашкăн,
Кайран, куçма-куç чух, вара
Тăна кӳртмешкĕн шăплăхра!

## XII

Епле вăл ир хускатнă вĕçкĕн
Кокеткăсен чĕрисене!
Эхер те пĕтерес тесессĕн
Хăйне пӳлен тăшмансене—
Епле хăртса намăслантарнă!
Мĕнле серепесем вăл карнă!
Анчах эсир, кил пуçĕсем,
Эсир ялан — ун тусĕсем:
Ăна савать пĕр никама та
Шанман старик те, Фобласран
Вĕреннĕ çын та, мăшкăлтан
Туха пĕлмен ыр упăшка та —
Ялан çав сапăрскер хăйпе,
Апачĕпе, арăмĕпе.

XIII. XIV

. . . . . . . . . . . . . . . .

. . . . . . . . . . . . . . . .

XV

Вăл выранĕ çинчен тăман-ха,
Лакей çыру илсе кĕрет.
Мĕскер? Йыхрав-им? Чăн та акă —
Виç килĕ харăсах чĕнет:
Ача праçникĕ, бал... Ăçта-ши
Вĕçтерĕ Питĕрĕн ачашĕ?
Камран вăл пуçлĕ? Пурпĕрех:
Çитме пулать виç киллипех.
Унччен, ирхи тумтирĕ вĕççĕн,
Вăл сарлака боливарпа
Бульваралла каять утпа,
Унта йăлт уçăлса çитсессĕн,
Ыйха пĕлмен Брегет сехет
Ăна апат тума чĕнет.

XV

Ак каç: çуна çине ларать вăл.
«Сыхлан! сыхлан!» янрарĕ сас.
Ун хăнтăр çухинче йăл та йăл
Кĕмĕлленсе пырать шăн пас.
*Талон* патне вĕçтерчĕ вирлĕн,
Пĕлет: унта кĕтет Каверин.
Кĕрейрĕ — пăкă мачча́на,
Эрехĕ сирпĕнет кăна!
Умра ак юнлă ростбиф, трӳфĕл —
Яш-кĕрĕмĕн çав чун пахи,
Француз кухнин чи лайăххи,
Ав — Страсбургран кӳртернĕ кукăль,
Чĕр Лимбург чăкăчĕ тата
Çут ылтăн ананас унта.

XVII

Вĕри те çулăскер, котлечĕ
Бакал ыйтать çине-çине;
Анчах Брегет ĕнтĕ пĕлтерчĕ

Çĕнĕ балет пуçланнине.
Хаяр, тиркевлĕ тишкерӳçĕ,
Актрисăсен самантлăх тусĕ,
Ķулиса хыçĕнче ялан
Хисеплĕ гражданин пулан —
Онегин театра кустарчĕ;
Унта çын ирĕккĕн сывлать:
Антрашана вăл ал çупать,
А Ķлеопатрăна шăхрать çеç,
Е вăл Моинăна чĕнет:
Ķăшкăрнине çын илттĕр, тет.

XVIII

Сатира ашшĕ, ирĕк тусĕ—
Фонвизин ялкăшрĕ унта, .
Ķняжнин ют ăспалан. чап курчĕ,
Унтах вăл Озеров тата
Семеновăпалан тем чухлĕ
Тăктарчĕ савăнăç куççулĕ,
Çуптарчĕ алă çынсене;
Унта Ķорнелĕн генине
Катенин пирĕн чĕртсе ячĕ;
Ķĕрлерĕ Шаховскойăн та
Ķомеди шутсăрах унта;
Унта Дидло та чаплăланчĕ;
Унтах, кулиса хыçĕнче,
Ман çамрăк ĕмĕр ыткăнчĕ.

XIX

Пирĕштисем! Ăçта халь эсĕр?
Илтсемĕр хурлăхлă сасса:
Çавсемех-и? Е урăх, тĕссĕр
Хĕрсем сире ылмаштарса?
Янрай-и маншăн сирĕн хорăр?
Кăтарти вырăс Терпсихори
Чунпа вĕçсе ĕлĕкхи пек?
Е хурлă куç тупаймĕ тек
Çав сцена çийĕнче паллан сăн?
Е хамăн писнĕ лорнета
Ютсем çине тыта-тыта,

Хаваслăха сивлен пăхсассăн,
Шав ларăп эп анасласа,
Ĕлĕкхине çеç асăнса?

XX

Çын тулнă; ложăсем йăл та йăл,
Кресли, партерĕ—йăлт вĕркет;
Галеркара çăтăл та çатăл;
Пĕтĕрĕнсе чаршав сĕрлет.
Çап-çутă, çурма-сывлăш, калăн,
Асамлă купăса тăнланăн,
Пĕр ушкăн нимфа варринче
Тăрать Истомина, чечен
Хăрах ури уҫ чĕрне вĕççĕн,
Тепри хуллен çавăрăнать;
Кĕç ялт сикет те ярăнать,
Вĕçет вăл, мамăк çилпе вĕçнĕн;
Пĕр явăнать, пĕр сӳтĕлет,
Ури çат-çат туса илет.

XXI

Йăлт ал çупать. Кĕрет Онегин;
Çын урисем çине пусать,
Кресли патне, ют дамăсенĕн
Ложисене лорнет тытать;
Пур яруса та пăхса илчĕ:
Çынсен тумтирĕ, сăнĕ-пичĕ
Чăтма çук килĕшмест ăна;
Йĕри-тавра пур арçынна
Пуç тайрĕ вăл, унтан саланчăк
Куçпа кăшт пăхрĕ сценалла,
Кĕç çаврăнчĕ те анаслать:
«Пурне те улăшсан аванччĕ;
Балет пайтах эп тӳсрĕм те,
Дидло та йăлăхтарчĕ!»—тет.

XXII

Шавлаççĕ-ха шуйттан-çĕленĕ,
Амурĕ сцена анинче;
Çывраççĕ урамра ĕшеннĕ

Лакейӗсем тăлăп çинче;
Тапу, çупу, шăхру янрать-ха,
Ӳсрӳ те шăнкару пырать-ха;
Тулта, шалта та хӗрӗнсе
Çунаççӗ-ха хунарӗсем;
Утсем шăнса тăпăртатаççӗ;
Кучерӗсем вут хунă та—
Вăрçса тăраççӗ улпута,
Алсатульне шарт-шарт çапаççӗ:
А ман Онегин палт тухать,
Вăл тумланма килне каять.

XXIII

Сăнлайăп-ши тӗрӗс картинăн
Уллах кăна кабинета?
Унта çур пурнăçӗ çак сыннăн:
Тăхнать, хывать, тăхнать тата...
Мӗскер сутать хитрен те анлăн
Пурнан валли вак сутăç Лондон,
Мӗн Балти хумӗпе кӳрет
Вăрманшăн, çушăн вăл пире;
Мӗскер Париж, куç астармашкăн,
Усламлă вак ăсталăхра
Юсав-йăпавшăн кăларать,
Ӗлккенлӗхшӗн, ачаш йăлашăн—
Йăлт кабинет илемӗ ун,
Вунсаккăрти философăн.

XXIV

Царьград чӗлӗмӗсен янтарӗ,
Фарфор, бронзи сӗтел çинче;
Ачашлăх сисӗмӗн кантарăш—
Духи хрусталь савăтсенче;
Тура та пӗчӗк хурăç пăчăк,
Тӳр хачă пур, пур кукăр хачă,
Щӗтки пӗр вăтăр евӗрли.
Чӗрне валли те шăл валли.
Руссо (аса илем çул майăн)
Ăнланайман: епле хăйса,
Ун умӗнче лăпках ларса,

Чӗрне тасатнӑ Грим мӑнаҫлӑн?
Ҫын ирӗкне хӳтӗлекен
Ун чух хӑй йӑнӑшнӑ иккен.

XXV

Чӗрне ҫинчен шухӑшламашкӑн
Пит ӑслӑ пуҫпалах пулать:
Ма ҫӗнӗ ӗмӗрпе тавлашӑн?
Ҫынна йӑла пӑхӑнтарать.
Чадаев хӑраххи—Евгений
Ҫынсем тиркессинчен шикленнӗ,
Педант вӑл пулнӑ тум енчен,
Тата эп шукӑль тенӗччӗ.
Сахал хурсан та, виҫ сехет-тӗр
Ун иртнӗ тӗкӗр умӗнче,
Вара вӑл тухнӑ чеп-чечен,
Ҫӑмӑлттайрах Венера евӗр,
Хӗр-турӑ ар ҫипуҫӗпе
Маскарада ӑсаннӑ пек.

XXVI

Кунта, вӗреннӗрех ҫынсемшӗн,
Хӗртсе тӗпчевлӗ куҫсене,
Ҫырса кӑтартӑттӑм эп тӗплӗн
Ун юлашки туалетне.
Ку пит хӑюллӑ ӗҫ, ҫапах та
Маннах ҫырас пулать: анчах та
Жилет е панталон, е фрак
Пӗртте вырӑсла мар-ҫке ҫак.
А эп куратӑп, каҫарсамӑр,
Ахаль те чухӑн слогӑм ман
Ютран кӗрен сӑмахпалан
Ытлашширех чӑпарланать-тӗр,
Пӑхса пулин те яш чухне
Эп Академи Словарьне.

XXVII

Халь пирӗн вӑл ялала марччӗ:
Бала васкар пӗрех хутчен.
Унта вут тухнӑ пек кустарчӗ

Онегин ям кӳмипелен.
Сĕм çурт-йĕр умĕнче, тӳлеккĕн
Çывран урам тăрăх ĕретĕн
Темчуль кӳме хунарĕсем,
Хаваслă çутă ӳкерсе,
Юра йăр-яр ялкăштараççĕ;
Ак çап-çутах йĕри-тавра—
Кермен пек пысăк çурт ларать;
Тем анлăш кантăкра шăваççĕ,
Вĕлтĕртетеççĕ дамăсен
Е чудаксен ĕмĕлкисем.

XXVIII

Ак ман геройăм çитсе анчĕ,
Швейцарĕ умĕн ухă пек
Вăл мрамор пусмапа хăпарчĕ,
Çӳçне тӳрлетрĕ аллипе,
Кĕрсе тăрать. Зала çын тулнă;
Янравлă музăк халсăр пулнă;
Мазурка халь ташлаççĕ ав;
Хĕсеççĕ, тăвăр, шăв та шав.
Янрать кавалергардăн шпорĕ;
Вĕçеççĕ дама урисем;
Урасене сăнанăçем
Çунса тăрать куçсен кăварĕ;
Хуплаççĕ вĕçкĕн арăмсен
Кӳлешӳне ян купăссем.

XXIX

Хавaслă кунсенче эп балшăн
Çухатрăм пĕтĕм тăнăма:
Пит меллĕ вырăн калаçмашкăн,
Тата çыру-мĕн тыттарма.
Хисеплĕ кил хуçи, ар-măшăр!
Сире эп пулăшасшăн, тăнлăр,
Ан манăр ман сăмахсене:
Пулсамăр сыхă, тесшĕн эп.
Эсир те, амăшсем, ан тартăр
Хĕрĕрсене пит умăртан:
Тӳп-тӳрĕ тытăр лорнета!



1639-нуб
Республиканская
КОМСОМОЛЬСКАЯ

А унсăр... унсăр, тур сыхлатăр!
Хам ашкăнса ирттернĕрен
Çыратăп эпĕ кун çинчен.

XXX

Нумай эп тĕрлĕрен йăпавшăн
Тăксаттăм чĕрĕ вăй-хала.
Çын кăмăлне вăл пăсмасассăн,
Бала эп халь те савмалла.
Хаваслăха, тăкăслăха та
Пуçтах çамрăклăха саватăп,
Саватăп дамăсен тумне,
Савап вĕсен урисене,
Анчах Российĕпех тупаймăр
Виç мăшăр та хитре ура.
Ах, ман пĕр мăшăр асăмра!
Хам сивĕннĕ, салху ку тапхăр,
Çапах манмастăп: тĕлĕкре
Вĕсемшĕн хускалать чĕре!

XXXI

Хăçан, ăçта, епле манайтăр
Пĕрре курсан çын вĕсене?
Ах, урисем! Ăçта ашатăр
Çурхи чечен чечексене?
Ќăнтăр ачашлăхĕнче эсĕр
Ўссе, салхуллă юр çине йĕр
Хăвараймарăр çурçĕре:
Çемçе палас тăрăх сире
Утма вĕрентнĕ çав. Тин мар-и
Эсир мантарнăччĕ мана
Тăван çĕре те тыткăна?
Çухалчĕ ăрăскалăм, кайрĕ,
Эсир хăварнă йĕр ирпе
Çаран çинчен çухалнă пек.

XXXII

Ќăкри—Дианăн, пичĕ—Флорăн.
Илемлĕ, тусăмсем! Анчах
Мана темскершĕн Терпсихорăн

Ури илемлĕ ытларах,
Вăл, ун çине пĕрре пăхсассăн,
Нимрен паха парне парассăн
Туртать хăй май кӳрнекпеле
Пур тунсăха хăй еннелле.
Савап ăна, Эльвина тусăм,
Сĕтел çитти айĕсенче,
Çурхи çемçе çаран çинче,
Хĕлле камин çине пусуçăн,
Яка паркетлă залсенче,
Гранитлă тинĕс хĕрринче.

XXXIII

Эп куртăм тинĕс тăвăл умĕн:
Епле эп кĕвĕçрĕм чунтан,
Хум чашкăрса пырса хĕр-тусăн
Ури умне савса выртсан!
Епле çав урана çав туххăм
Хумпа эп чуптăвасшăн çунтăм!
Çук, нихăçан та çамрăк юн
Хĕрсе, сиксе вĕренĕ кун
Ун пек асаппалан хыпман-тăр
Эп астивесшĕн хĕр тути
Е роза пек питçăмарти,
Е тунсăхпа хăпарнă кăкăр;
Çук, нихăçан та çулăм ман
Чуна ун евĕр çунтарман!

XXXIV

Эп тепĕр вăхăт астăватăп:
Хăш чух хам вăрттăн ĕмĕтпе
Йĕнер пусси тытап, унпа та
Алла ура çакланнă пек;
Татах вăл шухăша вĕретрĕ,
Татах вăл сĕртĕнни тивертрĕ
Ман шаннă чĕрене, татах
Эп тунсăхлап, эп юратап...
Анчах çитет пакăлтатмашкăн
Мăнаçлă пикесем çинчен:
Вĕсем хăйсем хĕтĕртекен

Юрра та тăраймаççĕ маншăн;
Сăмахĕ, куçĕ те вĕсен
Ури пекех суять иккен.

XXXV

Ăста Онегин? Ыйхăланăн
Каять балран вăл çывăрма.
А Питĕр—канăççăр, пуçланă
Параппанпа вăл вăранма.
Тăрать купса, утать усламăç,
Биржа сĕтĕрĕнет ав лавăç,
Ав кăкшăм йăтнă хĕрваскать
Пуссассăн юр чăкăртатать.
Ирхи сассем; кĕç кантăк сирчĕç.
Мăръесенче çĕкленчĕ ак
Юпа пек тĕтĕм кăн-кăвак;
Тирпейлĕ, хут калпаклă нимĕç
Уçать-хупать кантăк куçне:
Сутать вăл çăкăр çынсене.

XXXVI

Анчах бал шавĕ ывăнтарнă
Алхаслă та ĕлккем ача—
Вăл ырлăха çитсе выртайнă,
Ирхи куна хурса каçа.
Кăнтăрласем иртсен тăрать те—
Ирччен ун пурăнăçĕ хатĕр:
Пĕр евĕр сăнарсем, пĕр шав,
Ĕнер мĕскер—ыран та çав.
Анчах телейлĕ-и Евгений—
Çамрăклăхпа, ирĕклĕхпе,
Юратури çĕнтерӳпе
Куллен çапла киленекенĕ?
Сыхлайнă-и вăл, ĕçкĕре
Асăрханмасăр, сыв тĕрек?

XXXVII

Çук, час вăл сивĕнчĕ; тăрантрĕ
Пĕр майлă пуш шăв-шав ăна.

Шухăшламашкăн вăл пăрахрĕ
Чипер хĕрсем çинчен кăна:
Вĕсен ултавĕ ывăнтарчĕ;
Тус-йышĕ те час йăлăхтарчĕ:
Аçтан пултарăн кулленех
Бифштекс е Страсбург кукăльне
Шампанскипе лӳшкентермешкĕн;
Мухмăрпалан пуç ыратсан—
Хивре сăмах та тухмĕ сан;
Çынни тӳлек пулмин те, темшĕн
Пур вăрçăран, хĕç-пăшалран
Йăлтах вăл сивĕнчĕ кайран.

XXXVIII

Çын ма сивĕннине пĕлесчĕ,
Сăлтавĕ пур пуль-çке ара.
Акăльчансем ăна сплин теççĕ,
Вăл вырăсла пулать хандра.
Çав чир пекки ăна хуллен-мĕн
Çĕнтерне; перĕнсе вилмешкĕн
Шухăшламарĕ те, анчах
Вăл писрĕ пурнăçран пачах.
Гостинăя пырса кĕретчĕ
Салхуллă Чайльд Гарольд майлах;
Ни карт, ни çын саран сăмах,
Ни ăшă куç, ни хĕр тивлечĕ
Тивмест халь унăн чĕрине,
Курмасть, илтмест вăл вĕсене.

XXXIX. XL. XLI

. . . . . . . . . . . . . . . . .
. . . . . . . . . . . . . . . . .
. . . . . . . . . . . . . . . . .

XLII

Çӳлте çиçен хĕрарăм-терĕш!
Сиртен вăл писрĕ чи малтан.
Чăнах та: пит кичемлентерĕ
Вĕсен сăмахĕ, тăнласан.
Хăть тепĕр дама ăнсăртран, тен,

Бентам е Сей ҫинчен тапратӗ,
Анчах пӗтӗмӗшпе илсен—
Пуплеҫҫӗ вак-тӗвек ҫинчен;
Хӑйсем курнасшӑн питӗ аслӑ,
Пит сыхлӑ, пит паха, таса,
Упрасшӑн пит вара чыса,
Тивлетлӗ, ҫылӑхсӑр та ӑслӑ,
Вӗсен патне ан пыр арҫын...
Сӑнӗсемех лектерӗҫ сплин.

XLIII

Сире те, трантаспа каҫ-каҫӑн
Чул Питӗр тӑрӑх вӗҫтерсе
Яшсем ӑсатнӑ хӗрупраҫӗ,
Илемлӗ, хӳхӗм сар хӗрсем,
Сире те манчӗ ман Евгений.
Хӗрӳ киленӗве тиркенӗ
Онегин халь тухмасть килтен,
Пера тытать кичемпелен,
Сырас, тет вӑл: анчах ҫитмерӗ
Ӗҫченлӗхӗ; пӗр нимӗн те
Тухмарӗ унӑн перинчен,
Хастар цеха вӑл лекеймерӗ;
Ҫав цех... шарламӑп ун ҫинчен:
Эп хам унти этемсенчен.

XLIV

Каллех ӑна ӳркевлӗх пусрӗ;
Чун пушшипе йӑлт япӑхса,
Пӗрре вӑл ырӑ шухӑш тытрӗ—
Хӑйне илмешкӗн ют ӑса.
Пӗр ҫӳлӗк кӗнеке тӑратрӗ,
Вулать, вулать—пайти пулмарӗ:
Пӗри кичем, тепри лартать,
Теприн ҫук чыс та, намӑс та;
Пурин ҫинче те тӗрлӗ сӑнчӑр;
Аваллӑх та пит кивӗ те,
Ҫӗнни те киввипе йӳтет.
Ҫаплах пур кӗнеке те кӑнчӗ,

Тусанлă çӳлĕкĕ урлах
Чаршав вăл карчĕ траурла.

XLV

Йăла-тĕсел çине пăхмасăр,
Пур пуш хĕвĕшӳрен тухса,
Унпа туслашрăм эп çав тапхăр,
Юратрăм хамăн çĕн туса.
Мана пит килĕшетчĕ унăн
Темле раснах хăй майлă чунĕ
Ун вичкĕн ăсĕ. Вăл салху,
Эп усалланнăччĕ ун чух;
Чĕре вăйӳи суранлă тунă
Иксĕмĕре те пурнăçра.
Сӳнтернĕ çамрăк кăвара;
Иксĕмĕре те сĕм Фортуна
Тата çынсем çилĕпелен
Юнанă çамрăклах иккен.

XLVI

Ķам шухăшпа пурнать—çынна вăл
Ķураймастех хăй ăшĕнче.
Ķам сисĕмлĕ—шутлать пуль çавă
Таврăнайми кунсем çинчен:
Вăл урăх юратса киленмĕ,
Ăна аса илӳ çĕленĕ,
Ăна халь ӳкĕнӳ ĕмет.
Çак пурте час-часах кӳрет
Ķалаçăва чылай пахалăх.
Малтан Онегин чĕлхинчен
Имментĕм эп, анчах хуллен
Эп хăнăхрăм ун тăрăхлавлă,
Шӳтпе хăртан тавлашуне,
Эпиграмсен хаярлăхне.

XLVII

Епле час-час, çăва тухсассăн,
Ķаçхи тӳпе Нева çинче
Çап-çуттăн, витĕр курăнсассăн,
Хаваслă шыв тĕкĕрĕнче

Сар уйăх сăнĕ палăрман каç,—
Пур иртнĕ романа, пур манăç
Юратăва аса илсе,
Каллех чĕр сисĕмлĕн çиçсе,
Каç ырă суннă майăн эпĕр
Чĕнмесĕр киленеттĕмĕр!
Ем-ешĕл вăрманпа пĕр-пĕр
Тĕрме çынни тĕлленнĕ евĕр—
Çул тытнă эпĕр ĕмĕтре
Яш пурнăç тытăннă çĕре.

XLVIII

Чунтан-вартан темскер хĕрхеннĕн,
Тĕреленсе гранит çумне,
Тăратчĕ шухăшлăн Евгений,
Поэт сăнланă пек хăйне.
Тӳлек; каçхи хуралçăсем çеç
Таçта пĕрне-пĕри чĕнеççĕ;
Тата кăшт инçерех трантас
Мильоннăйра таккать кас-кас;
Кĕсмен сулкаласа пĕр кимĕ
Ишет сĕнк пулнă çырмара:
Янратчĕ пирĕн хăлхара
Шăхлич сасси те юрă-çемĕ.
Анчах Торкваттăн сăввисем
Илемлĕрех пуль çав каçсем!

XLIX

Эй, Адриатик тинĕс хумĕ!
Эй, Брента! Курăп-ха сире.
Каллех ман чунăм хавхаланĕ,
Илтсессĕн сирĕн кĕввĕре!
Поэтшăн сирĕн сассăр хаклă.
Ăна эп Байронăн хăватлă
Юрри тăрăх пĕлеттĕмччĕ.
Италин ылтăн çĕрĕнче
Каç-каç тулли чĕрепелен эп
Венецин çамрăк хĕрĕпе—
Пĕр чĕвĕлти, пĕр чĕмсĕрпе—
Уллах гондолăра киленĕп,

Вӗренӗп юратупалан
Петрарка чӗлхине унран.

L

Ҫити ман ирӗклӗ сехетӗм?
Часрах, часрахчӗ!—тетӗп эп;
Ҫӳреп ҫырпа, мехел кӗтетӗп,
Курнан парӑссене чӗнеп.
Сӗм тӑвӑл айӗн, ҫиллӗ-хумлӑ,
Ейӳ те ирӗк тинӗс урлӑ
Хӑҫан эп тарӑп ҫакӑнтан?
Часрах кӑмӑлӑма кайман
Кичемлӗ ҫырантан хӑпасчӗ,
Кӑнтӑр енчи хумсем ҫинче,
Хам Африка ҫӗршывӗнче,
Салху Россияшӑн хыпасчӗ:
Унта юратрӑм, тӳсрӗм эп,
Унта пытартӑм чӗреме.

LI

Онегин хатӗрччӗ курмашкӑн
Манпа пӗрлех ют ҫӗршывсем;
Анчах вӑрахлӑх уйрӑлмашкӑн
Пире тӳркилчӗ ҫав ҫулсем.
Ун чух ун ашшӗ ҫӗре кӗчӗ.
Онегин умӗн кӗпӗрленчӗҫ
Кивҫен парса тӑнӑ ҫынсем,
Кашнин расна ӑспуҫ вӗсен:
Суд-тавраша пит кураймасӑр,
Евгений пӗтӗм пурлӑхне
Тӑкса хӑварчӗ ҫавсене—
Сиен пит пулмӗ, терӗ, ахӑр,
Е вата куккӑш вилессе
Вӑл пӗлнӗ, ӑнсӑртран илтсе.

LII

Сасартӑк, чӑнласах та, илнӗ
Ҫыру вӑл управительрен:
Старик выртать-мӗн, патне ҫитнӗ,
Курса вилесшӗн тет иккен.

Çав хыпарпа кăшт хурлансассăн,
Часах Евгений курнăçмашкăн
Кустарчĕ кӳмепе хĕрсе,
Çитичченех хатĕрленсе
Укçашăн кăшт кичем тӳсмешкĕн,
Ах ахлатма, улталама
(Пуçланчĕ çавăнтан роман);
Анчах, старик ялне çитсессĕн,
Вăл курчĕ: куккăш—тупăкра,
Ăна кĕтет иккен тăпра.

LIII

Çын йышлă, пурте пулăшаççĕ;
Тус-йышĕсем, тăшманĕсем
Мĕнпур енчен пуçтарăнаççĕ
Пытарăва хавасскерсем.
Вилнĕскере пуçтарчĕç, чикрĕç.
Хăни те пупĕ—ĕçрĕç, çирĕç,
Унтан, темскер ĕç тунă пек,
Саланчĕç шăппăн, ерипе.
Ак ман Онегин—ял этемĕ,
Вăрманăн, çĕрĕн, шыв-шурсен—
Пурин хуçи вăл, а унччен—
Йĕрке тăшманĕ, мул пĕтермĕш;
Вăл пит хавас хăй çул-йĕрне
Капла хăть улăштарнине.

LIV

Пĕр-икĕ кун пăхса сăнарĕ
Уллах уя вăл, улăха;
Вăрман кашланине тăнларĕ,
Çăл шывĕ туйăнчĕ паха.
А виççĕмĕш кунне уй-улăх
Ăна йăпатаймарĕ урăх:
Çыврас кăна килет пăхсан;
Унтан вăл курчĕ пит аван:
Ялта та çав-çавах кичем-мĕн,
Хăть ни урам, ни чаплă çурт,
Ни карт, ни бал, ни сăвă çук;

Хандра сыхлать ăна тĕреклĕн,
Мĕлке пек, арăм пек иккен
Чупса çӳрет ун хыçĕнчен.

LV

Эп канлĕ пурнăçшăн çуралнă,
Савап ялти тӳлеклĕхе.
Унта уççăнтарах янранă
Ялан ман лирăн хĕлĕхĕ.
Хутран ерçӳллĕ сехетре эп
Çут кӳлĕ хĕррипе çӳретĕп,
Пĕрĕçсĕрлĕх—ак ман саккун.
Ирпе тăратăп кашни кун
Эп тутлă ĕмĕтпе, чун ирĕк:
Сахал вулап, нумай çыврап,
Сăхлантармасть çунатлă чап.
Ак çакăн евĕр мар-и ĕлĕк
Ирттертĕм эп ялта чухне
Хам чи телейлĕ кунсене?

LVI

Чечек те юрату, хир-уйăм!
Пур чунăмпа та сирĕн эп.
Ялан Онегинран хам уйрăм
Пулнишĕн эпĕ хĕпĕртеп:
Пĕр те пĕр ăстиçук элекçĕ
Çырнисене кĕнекелевçĕ
Е лĕкĕрти пĕр вулакан
Мана хама геройпалан
Танлаштарса ан пакăлтаттăр:
«Хăйне сăрлать ку, Байрон пек»
Тесе ан сартăр вăл элек.
Шет эпĕр ĕнтĕ çыраймастпăр
Çынсем çинчен поэмăра,
Аса илмесĕр хамăра?

LVII

Калам çав май: поэт савсассăн
Ĕмĕтпелен çунать вара.

Мĕнпурĕ çавăн пек. Ман хамăн
Пайтах илемлĕ ят асра.
Вĕсен сăнне усрарĕ чунăм,
Ҫайран сасартăк чĕртрĕ Музăм:
Ҫапла чечен Кавказ хĕрне
Тата Крымри ик мĕскĕне
Савса ун чух эп юрласаттăм.
Халь, тантăш-тусăмсем, ялан
Эсир ыйтатăр ак манран:
«Ҫама, хăшне ытараймастăн?
Ытти хĕрсем кӳлешнĕçем,
Хăшне çыратăн сăвăсем?

LVIII

«Ҫам санăн кăмăлна çĕклерĕ?
Ҫам шухăшлă сан юрруна
Ачаш куçпа пăхса итлерĕ?
Ҫам пирĕштийĕн курăнать?»
Никам та çук, туссем, ĕненĕр!
Юратрăм эп хĕпĕртеймесĕр,
Хур куртăм çеç юратуран.
Кам, юратсан, рифмăпалан
Хĕмленнĕ—çавă пархатарлă:
Апла, поэзи вучĕпе
Ик хут çунса, Петрарка пек,
Вăл чĕрине те лăплантарнă,
Чапне те тытнă хушăран.
Эп пур—савсан та шарламан.

LIX

Юратрăм—иртрĕ, Муза килчĕ,
Ҫуталчĕ тĕттĕм ăсăм ман.
Пур шухăш-туйăм пĕрлешинччĕ
Таса поэзире ялан.
Ҫыратăп—тунсăх çук асра та,
Перам, ĕçе манса, сасартăк
Тумасть халь сăввăмсем çумне
Ни хĕр пуçне, ни урине,
Пĕр сӳннĕ кĕл тек çулăмланмĕ,
Эп хурланап; куççуль тек çук,

Часах ман ҫил-тăвăллă чун
Лăпланĕ йăлт, тинех поэма
Ҫырма эп пуҫлăп ҫав кунран
Пĕр ҫирĕм пилĕк юрăран.

LX

Эп ĕнтĕ шухăшласа хутăм
Ун формине, герой ятне.
А халлĕхе пĕтернĕ пултăм
Романăн малтанхи пайне;
Ăна эп тĕплĕн пăхса тухрăм,
Хирĕҫӳсем тем чухлĕ тупрăм,
Анчах тӳрлетмĕп: цензора
Хам парăма тӳлем часрах;
Антив журналистсем тăранччăр,
Сăввăмсене кавле-кавле:
Каях Нева хĕрринелле,
Тин тунă ĕҫĕм! Туянтарччĕ
Мана мухтав парни: шăв-шав,
Тăрлавсăр тишкерӳ, ятлав!

## ИККЕ́МЕШ ПАЙЕ

Эй, ял!

*Гораций*

Эй, Русь!

I

Евгенишĕн кичемлĕ ял-мĕн—
Чипер кăна уллах кĕтес;
Кам пурăнасшăн лăпкăн, канлĕн,
Çав калĕччĕ: турра мерттес!
Шыв хĕрринче улпут керменĕ,
Çилтен сăртпа вăл хӳтĕленнĕ;
Ун умĕнче—кăшт катара—
Чечекленсе выртать çаран,
Ыраш йăлтăртатать сар хумлăн,
Па́т-пат курăнкалать сала,
Кĕтӳ çӳрет çаранпала;
Унтах—пăрахăç, тĕттĕм, сулхăн—
Ларать, тем шухăша кайса,
Дриадăсем илешнĕ сад.

II

Хисеплĕ керменне тутарнă
Епле тума тивĕçлипех:
Раснах тĕреклĕ, канлĕ, анлă—
Ăслă аваллăх йĕркипе.
Пур пӳлĕмсем те çӳлĕ, чаплă.
Гостинăйне штоф-пурçăн çапнă,
Темчуль патша стена çинче,

Ӑамакисем—чăпар чепче.
Ҫак таврашсем кучух кивелчĕҫ,
Пĕлместĕп эпĕ мĕншĕнне:
Ман тус унпа ватман пуҫне,
Ăна пулсан—пурте пĕрехчĕ:
Ӑĕрет-и ҫĕн зала этем
Е киввине—ҫавах кичем.

III

Вăл куккăш пӳлĕмне вырнаҫнă;
Унта старик пĕр хĕрĕх ҫул
Хăй ключниципелен ятлаҫнă,
Шăна вĕлернĕ пушă чух.
Юман урай, ик хутлă кантăк,
Ик шкап, сĕтел, диванĕ мамăк;
Тумлам чернил та курăнмасть.
Онегин шкапсене уҫать:
Ак пĕринче расход тетрачĕ,
Теприн тулли наливкăсем,
Улма-ҫырла сĕткенĕсем,
Саккăрмĕш ҫулăн календарĕ;
Старик, ĕҫсем пит нумайран,
Ытти кĕнекене пăхман.

IV

Хăй ҫĕрĕ-паҫминче пĕчченĕн,
Ӑашт вăхăт irттерес тесех,
Малтан шутларĕ ман Евгений
Тумашкăн ҫĕн йĕрке кĕҫех.
Мужикĕсен хутне вăл кĕчĕ:
Улпутшăн ĕҫлессе пĕтерчĕ,
Хăварчĕ куланай вĕсне;
Чура тав турĕ шăпине.
Анчах юнашарти улпучĕ,
Ун пысăк сиенне курса,
Машлатрĕ кăмăлсăрланса;
Тепри, куҫне хĕссе, кăшт кулчĕ;
Вара каларĕҫ пурте ак:
Питрех хăрушă ку чудак!

## V

Малтан çынсем çӳрекелетчĕç;
Анчах, çулпа кустаракан
Трантас сассисене илтсен кĕç,
Ăна хыçал енчен ялан
Лаша йĕнерлесе паратчĕç,
Вăл утланатчĕ те таратчĕ.
Çапла хăтланнипе çынсем
Унтан йăлт писрĕç кӳренсе.
«Пускил тӳрмен; çук умĕ-сумĕ;
Вăл фармазон; ĕçет текех
Стаканĕпе хĕрлĕ эрех;
Хĕрарăм аллине чуптумĕ;
Шав **да** та **нет**; каламĕ **да-с**
Е **нет-с**». Çапла саланчĕ сас.

## VI

Хăйсен ялне çав вăхăтра шăп
Çĕнĕ улпут персе çитет,
Çаплах ăна та кӳршĕ-аршă
Тем тĕрлĕ тишкерсе тиркет.
Владимир Ленский ячĕ унăн,
Геттингенра вĕренсе тухнă,
Илемлĕ, çамрăк, хăй поэт,
Канта пит хытă хисеплет.
Тĕтреллĕ нимĕç çĕрĕнчен вăл
Çитернĕ темĕн те илсе:
Хăюллă, ирĕк ĕмĕтсем;
Хĕрӳллĕ чун, пăлхавлă кăмăл;
Хивре сăмах, тата хура—
Хулпуççине çитен кăтра.

## VII

Сив аскăнлăх тавраше унăн
Чунне шăнтса ĕлкĕреймен:
Тусне-йышне вăл сума сунă,
Йăпаннă хĕр куллипелен.
Пурне те вăл ача пек шаннă,
Чăн пурнăçа начар ăнланнă;

Çут тĕнчери çĕн чап, мухтав
Ăна шухăшлаттарнă шав.
Вăл тутлă ĕмĕтпе йăпатнă
Иккĕленен чун-чĕрине,
Çак пирĕн пурнăç тĕллевне
Юмахăн курнă вăл, пуç ватнă
Пĕлесшĕн ун вĕçне-хĕрне,
Ĕненнĕ чудо пуррине.

## VIII

Вăл шаннă — чун çемми пике хĕр
Хăйпе савса пĕрлешессе;
Пăшăрханса, кун сиктермесĕр,
Ăна вăл ăшшăн кĕтессе;
Вăл шаннă: тусĕсем хăюллăн
Сăнчăрланмашкăн хатĕр уншăн,
Элек саракана вĕсем
Пĕр харăс тăкĕç çĕмĕрсе.
Вăл шаннă хăш çынна хăй пурнăç
Этемлĕх тусĕ тунине:
Çавсем çак пирĕн тĕнчене
Нихçан сӳнми илемлĕх кӳрĕç,
Çутатĕç ĕмĕрлĕх, тесе
Вăл ĕмĕтленнĕ ĕненсе.

## IX

Усалшăн тарăхнă, юратнă
Вăл ыр тумашкăн çынсене.
Мухтав асапĕ ир хускатнă,
Килентерсе, ун яш юнне.
Вăл çул çӳренĕ, Гёте, Шиллер
Çĕрне-шывне вăл тухнă витĕр;
Вĕсен поэзи çулăмне
Вăл хунă хăй чĕри çумне.
Телейлĕскер — искусствăна вăл
Нихçан та намăс кăтартман:
Ялан таса кăмăлпалан,
Таса ĕмĕтпелен шăраннă
Ун пархатарлă сăввисем,
Унта упраннă чăн илем.

X

Вăл савнине савса юрлуçăн,
Юрри ун тăнă янраса,
Япшар хĕр шухăшĕ пек уççăн,
Ача ыйхи пек тап-таса;
Пĕр нимĕн пытарма пĕлмесĕр,
Çуталнă вăл çут уйăх евĕр.
Вăл уйрăлу çинчен, чечен
Ытарайми чечек çинчен,
Темле тĕтре çинчен юрланă;
Юрланă вăл ют çĕршывра
Пĕччен çӳренĕ вăхăтра
Куççуль тăкни çинчен; хурланнă
Вăл çамрăк ĕмĕр шаннăран,
Хăй пур — вунсаккăр тултарман.

XI

Кунта Евгений çеç пултарнă
Хака хума ун талантне;
Ытти улпутсенчен вăл тарнă,
Савман вĕсен ĕçкисене.
Ялан пĕрпек вĕсен шăв-шавĕ,
Калаçнисем те ĕмĕр çавă:
Ут çуласси, тăван-пĕтен,
Эрех те йытăсем çинчен
Пупленипех çӳле вĕçеймĕн:
Хивре сăмах та, шухăш та,
Пурнас ăсталăх та унта,
Поэзи те пулман вĕсен;
Юратнă майрисем вара
Пушшех калаçнă айванрах.

XII

Такам та Ленскине юпкурĕ:
Пуян, чипер, — кĕрӳ тăвас!
Çур вырăс улпута мĕнпурĕ
Хĕрне качча пама хавас.
Ялта йăли çапла вара вăл:
Пырса кĕрен — кил-йыш алхапăл

Сăмах пуçлать хуллен-хуллен
Хусах кичемлĕхĕ çинчен;
Кĕç сăмавар патне чĕнеççĕ,
А Дуня чей ярать, ăна
Тĕртеççĕ: «Дуня, эс сăна!»
Унтан гитар илсе килеççĕ;
Тăсать вара вăл ун чухне;
*Пырсем ман ылтан кермене!..*

## XIII

Анчах та Ленский çыхăнмашкăн
Шухăшламарĕ авланса.
Онегинпа вăл тачăраххăн
Пурнасшăн пулчĕ паллашса.
Вĕсем пĕрлешрĕç: хумпа чулăн,
Сăвăпа прозăн, пăрпа вутăн
Пулаймĕ уйрăмĕ ун пек.
Малтан, хăйсем пит раснипе,
Кичемччĕ кăшт; унтан ак тупрĕç
Пĕр кăмăл, шав юланутпа
Çӳре пуçларĕç пĕр çулпа,
Кайран — уйрăлайми те пулчĕç.
Çапла (хам ӳкĕнем малтан)
Çынпа çын тус — ним ĕç çукран.

## XIV

Анчах апла танлаштармастпăр;
Пур танлăха та пĕтерсе,
Çынна эпир нуля хуратпăр,
Мăн хисепре пĕр хамăр çеç.
Эпир Наполеон пуласшăн,
Пин-пин этем вăл пирĕн чапшăн
Юравлă хатĕр çеç иккен;
Кулатпăр хĕрхенекентен.
Аплах пулман ĕнтĕ Евгений;
Паллах, вăл пĕлнĕ çынсене,
Картман ниме те вĕсене,
Анчах пурне те мар тиркенĕ:
Хăшне вăл, пит сума суса,
Илме пултарнă уйăрса.

XV

Вăл Ленские кулса итленĕ:
Поэт вĕри сăмахĕсем,
Тĕреклĕнсех çитмен ăс-тăнĕ,
Хавхаланулла куçĕсем —
Онегиншăн йăлт çĕнĕ пулнă;
Хăй ăшĕнче вăл шухăшланă:
Кăларам мар сив сăмаха,
Ыр куртăр вăл самантлăха,
Кансĕрлем мар айван çын евĕр.
Мехелĕ çитĕ мансăрах;
Антив вăл халь пурăнтăрах,
Тĕнче пахалăхне ĕнентĕр;
Каçарăпăр çын яш чухне
Хыпса çунса аташнине.

XVI

Вĕсем тавлашнă темĕн чухлĕ,
Хускатнă шухăша-ăса:
Этемĕн авалхи кун-çулĕ,
Наука, ырăпа усал,
Ĕмĕртенхи суя та тĕшмĕш,
Çĕрти, çӳлти,—пурне те иккĕш
Тапратнă вырăнтан вĕсем.
Поэт, хĕрсе пуплеНĕçем,
Хăй ăçтине манса, çĕкленнĕ—
Вуланă хăйĕн çурçĕр ен
Поэмин сыпăкне хиврен.
Яш çын хутне кĕрен Евгений,
Сахал ăнланнă та ăна,
Çапах итленĕ шăп кăна.

XVII

Нимрен ытла туссем пупленĕ
Чĕре туртăмĕсем çинчен.
Лăпланнă, сивĕннĕ Евгений,
Ĕлĕкхине аса илсен,
Ирĕксĕрех сывланă ассăн.
Пĕрре хыпса çунса курсассăн—

Телейлĕ çын çак тĕнчере;
Курайманни—телейлĕрех:
Кам инçетрен кăна юратнă,
Тăшманĕпе тăрса вăрçман,
Кам арăмпа, тус-йышпалан
Ним кўлешмесĕр кун кунланă,
Кам картшăн тустарман мулне—
Çав çын телейлĕ ĕмĕрне!

## XVIII

Тўлек хўтте кĕрсе ўксессĕн
Эпир лăпланнă чунпала,
Ăшри вĕри кăвар сўнсессĕн,
Пире мĕнпурĕ кулăшла:
Яш чух çунни те, алхасни те,
Чарусăр юн сăрăлтатни те.
Аран лăпланнă этемсем—
Ун чух эпир яшрах çынсен
Кăварĕпе кăшт ăшăнасшăн;
Каллех тапать вара чĕре;
Çаплах пăрахăç кив пўртре
Итлет ват инвалид та шăппăн
Уссиллĕ паттăр салтаксен
Калаçуне, пуçне пĕксе.

## XIX

Вĕри яш-кĕрĕм хăй те çавă
Пултараймасть ним пытарма:
Хаваслăх, хурлăх, çилĕ, савăш—
Йăлт хатĕр каласа пама.
Юратура хăйне Евгений—
Аманнă, инвалид-çын, тенĕ;
Халь шăппăн çамрăк тусĕнне
Итлет вăл тўрĕ сăмахне.
Çынна ĕненекен поэчĕ
Чунне йăлтах уçса парать:
Евгение, ыйтмасăрах,
Вăл хăй савни çинчен пĕлтерчĕ.
Ăша хыптаракан сăмах—
Пире вăл кивĕ тахçанах.

## XX

Ах, вăл юратнă пек никам та
Юратаймасть халь пирĕн тек.
Поэт кăна, мĕскер пулсан та,
Юратмалла-ха çавăн пек:
Ялан, кирек ăçта пĕр тунсăх,
Ăçта кайсассăн та пĕр хурлăх,
Пĕр ĕмĕт чĕрере çиçет!
Ни сивĕтсе яран инçет,
Ни тунсăхăн вăрăм кун-çулĕ,
Ни сăвă çырнă самантсем,
Ни ют çĕршыв илемĕсем,
Ни ăслăлăх, ни вăйă-кулă
Улăштарман иккен унне
Кăвар пекех вĕри чунне.

## XXI

Ачаранпах ăна вăл савнă,
Чĕре тертне пĕличченех
Ачаш куçпа пăхса сăнанă
Вăл пĕчĕк Ольгăн вăййине;
Унпа пĕрле хăй те вылянă,
Вăрман ăшне кĕрсе çухалнă.
— Мăшăрлантарăпăр ӳссен,—
Тесе йăпаннă ашшĕсем.
Шăпра, хула шавне пĕлмесĕр,
Хăй ашшĕ-амăш умĕнче
Хĕр çитĕннĕ таса, чечен,
Пытанчăк лантăш çеçки евĕр:
Ни хурт, ни лĕпĕш ун чухне
Курман çав хӳхĕм çеçкене.

## XXII

Пĕрремĕш чун савнин вăл курчĕ,
Хĕре çитсессĕн, поэта.
Поэт пĕрремĕш юрă хучĕ,
Асне илсессĕн çав ята.
Вăл вăйă выляма пăрахрĕ,
Çăра вăрмансене юратрĕ,
Пĕчченлĕхе, тăнăçлăха,

Çăлтăрсене те уйăха.
Çав уйăх айĕнче мĕн чухлĕ
Эпир çӳренĕ сĕм çĕрле,
Мĕн чухлĕ вăрттăн тертпеле
Юхтарнă савăнăç куççулĕ...
Кучух пире вăл тĕксĕмрех—
Хула хунарĕ евĕр çех.

XXIII

Ялан йăваш, ялан сăпайлă,
Ялан ир пек хаваслăскер,
Поэт пек уçă чунхавалла,
Савса чуптунă пек чипер;
Сенкер тӳпе манерлĕ куçĕ,
Кулли, сап-сарă йĕтĕн çӳçĕ,
Сасси, çĕре тивмен утти—
Йăлтах пур Олгьăн... пур ытти
Романсенче те ăна тупăр:
Хитре çав сăн; эп ĕлĕкрех
Саваттăм хам ăна питрех,
Анчах вăл йăлăхтарчĕ шутсăр...
Ун аппăшпе халь, вулакан,
Паллашăр, кăмăлăр пулсан.

XXIV

Ун аппăшне Татьяна тенĕ...
Ку ят романсене кĕмен,
Пĕрремĕш хут кӳртме пикенĕп
Ăна эп хам ирĕкпелен.
Вара мĕн? Ят кервен, янравлă,
Анчах пĕлетĕп эп: аваллăх
Аса килет çав ятпалан.
Тĕрĕссипе калас пулсан—
Ятсем те пирĕн пит килпетсĕр,
Çук ним тути-маси, йĕрки
(Мĕн калăн сăвăсем пирки!).
Эпир çутта тухма пĕлместпĕр,
Унран мĕскер лекни кучух—
Курнăçлану, тек ним те çук.

## XXV

Çапла, асли Татьяна ятлă:
Йăмăкĕ пек илемлĕ мар,
Пултарас çук писев сăнарлă
Питпе те вăл сăхлантарма.
Сăмахламасть, ялан салхуллă,
Пăлан пек шиклĕ, ютшăнуллă.
Тăван кил-йышĕнче вăл тек
Курнать ют çын хĕр ачи пек.
Ачашланма-тума пĕлмен вăл
Ни ашшĕпе, ни амăшпе;
Ача чухне ачасемпе
Выляс та сиккелес темен вăл;
Хăш чух яра куна пĕччен
Вăл ларнă кантăк умĕнче.

## XXVI

Вăл ир шухăшлама вĕреннĕ,
Çав майăн тĕрлĕ ĕмĕтсем
Ун пусĕнче вара тĕрленнĕ,
Ял пурнăçне илемлетсе.
Чечен пӳрни йĕп-çип тытман ун,
Çĕлес-çыхас ĕмĕт пулман ун,
Çут пурçăнпа тире-тире,
Эрешлемен вăл шур пире.
Хĕр ачаллах хуçа пуласшăн:
Вăл пĕчĕкçеç пуканепе
Шӳтлех хатĕрленет—тирпей,
Саккун, йăла-халам тытмашкăн,
Шав вĕрентет вăл «папине»
Хăй амăш мĕн каланине.

## XXVII

Анчах Татьяна ачалла та
Пуканине тытса курман;
Хула çинчен е çĕнĕ мода
Çинчен унпа вăл калаçман.
Ача вăййи ют пулнă уншăн;
Хĕлле, сĕм тĕттĕм каç, хăрушшăн

Илтĕнекен халлап-юмах
Чунне хускатнă ытларах.
Няни çаран çине пухсассăн
Ольгин пур тантăшĕсене,—
Ун аппăш юлнă пĕчченех,
Хурал вăййи чупман хавассăн:
Лешсен кулли, ян сассисем—
Йăлт пулнă Таняшăн кичем.

XXVIII

Балкон çине тухса, юратнă
Кĕтсе илме вăл шуçăма:
Шупкалнă тӳперен пуçланă
Ун чух пур çăлтăр ăсанма,
Çĕр хĕррисем хуллен çуталнă,
Çĕн ир çинчен çил хыпарланă,
Çут кун хăпарнă ерипен.
Хĕлле, сĕм каç шăналăк пек
Çур тĕнчене ытла каруçăн,
Тĕтреллĕ уйăх çуттинче—
Тӳлек канăçлăхра—темччен
Юлхав мал енĕ çывăруçăн,
Вĕреннĕ сехетрех тăрса,
Çĕр каçнă хĕр, çурта çутса.

XXIX

Вăл час роман вула пуçланă,
Тек нимĕн те туртман ăна:
Руссо суйнисене юратнă,
Юратнă вăл Ричардсона.
Ун ашшĕ кăмăллă çын пулнă,
Кив ĕмĕре вăл тăрса юлнă;
Анчах кĕнекере синкер
Курман; нихçан вуламанскер—
Ăна вăл вăййă пек шутланă,
Мĕн евĕр вăрттăн том ирччен
Хĕрин минтерĕ айĕнче
Выртнишĕн пит хыпсах çунман вăл.
Ун арăмĕ—Рычардсонран
Хăй кайнă пĕтĕмпех тăнран.

## XXX

Вуланипех те мар юратнă
Ричардсона вăл, Ловласран
Грандисона саварах панă
Пирки те мар вăл ун асра;
Анчах авал княжна Алина,
Ун Мускавра пурнан тăванĕ,
Час-час тапратнă çавсене.
Мăшри ăна-ха ун чухне
Çураçнă çеç хĕр—хирĕç пулнă;
Вăл шав сĕмленнĕ тепринпе,
Леш ăсĕпе те чĕрипе
Ăна кăшт ытларах-мĕн туртнă;
Çав Грандисонĕ пулнă франт,
Карт чунĕ, гвардири сержант.

## XXXI

Каччи пекех—ялан хĕр капăр
Тумланнă, килĕшӳллĕ те.
Анчах, хĕр шухăшне ыйтмасăр,
Ăна ăсатнă венчете.
Ун хурлăхне сирсе ямашкăн
Ăна ак упăшки вăшт-ваштăн
Яла илсе каять; малтан,
Курман этемсене курсан,
Унта вăл йĕнĕ, турткаланнă,
Кĕç уйрăлман хăй мăшринчен;
Унтан хуçалăх ĕçĕнче
Вăл хăнăхнă та йăлт лăпланнă.
Телей çук чух эс хăвна ху
Тупатăн ырă хăнăху.

## XXXII

Епле пулсан та, хăнăхсассăн,
Пусарăннă çав шар-инкек.
Час, тепĕр пысăк мел тупсассăн,
Лăпланнă арăм пĕтĕмпех.
Ĕç хушшинче йăпаннă майăн,
Упăшкине хуçа пулмашкăн

Секрет вăл тупнă шутласа,
Вара йалт кайнă майлашса.
Вăл ĕçсене пăхса çӳренĕ,
Хĕле кăмпа тăварласа,
Расход тытса, салтак парса,
Шăматкунсем мунча вăл кĕнĕ,
Хĕненĕ хăрхăмне—йалтах
Упăшкинчен ыйтмасăрах.

## XXXIII

Малтан хĕр альбомне тĕрленĕ,
Çырса вăл хăй юнĕпеле.
Прасковьяна Полина тенĕ,
Қалаçнă тăсарах темле;
Пит тăвăр корсетпа çӳренĕ,
Вырăсла Н-а француз пек пĕлнĕ
Сăмсапараххăн калама;
Анчах час кайнă калла май:
Қорсет, альбом, княжна Полина,
Хĕрӳллĕ сăвăллă тетрадь—
Йалт манăçнă; пулса тăрать
Акулька ĕлĕкхи Селина;
Қайран-кайран çĕлетнĕ ак
Вăл мамăклă халат, калпак.

## XXXIV

Анчах мăшри ăна юратнă,
Ун ĕç-хĕлне ермен пачах.
Пĕр шухăшсăр ăна вăл шаннă,
Хăй ĕçнĕ-çинĕ халатпах.
Тӳлек ун пурнăçĕ кустарнă;
Қаçпа хăш чух пухăнкаланă
Пĕр ыр кил-йыш пек пускилсем,
Пит вăтансах тăман туссем:
Ах ахлатма, çынна çимешкĕн,
Тăрăхлама ăна-кăна.
Сехет шăвать: кĕç Ольгăна
Хушаççĕ чей хатĕрлемешкĕн;
Унтан—апат, çыврас пулать:
Хăна-вĕрле килне каять.

## XXXV

Тӳлек кун-ҫуленче упранă
Вĕсем аваллăх йăлине;
Ҫăварние ҫупа уянă,
Пĕҫернĕ вырăс пĕлĕмне,
Ҫулне ик тапхăр типĕ тытнă,
Чуччу ярăнтарма юратнă,
Уяв е ҫĕрĕ юррисем;
Труйски кунне, мĕнпур этем
Анасласа кĕлĕ итлӳҫĕн,
Вĕсем юн-курăкĕ ҫине
Тумлатнă ăшă куҫҫульне;
Ялан квас йӳҫĕтнĕ ĕҫмешкĕн,
Хăна умне вĕсем иккен
Чыс лартнă чин йĕркипелен.

## XXXVI

Ҫаплах вĕсен ватти те ҫитнĕ,
Пурна-киле упăшкине
Ҫĕре кĕме кун тухнă, витнĕ
Ҫĕн пуҫкăшăл... ун ҫамкине.
Вăл кăнтăр апат умĕн вилнĕ,
Пускилĕ уншăн йĕрсе илнĕ,
Ачи-пăчи, хăй мăшăрĕ —
Ыттисенчен таса чĕре.
Аван улпут, пит пархатарлăн
Вăл пурăннă, хăйне кура,
Юпи ҫинче ҫыру куран:
Ҫунта канать Дмитрий Ларин,
Мухтавлă бригадир, турра—
Йăваш та ҫылăхлă чура.

## XXXVII

Хăй ҫĕршывне таврăнсассăн,
Владимир Ленский пĕркуннне
Кӳршин вилтăприне курмашкăн
Ҫул тытрĕ кив масар ҫине.
Поэт хурланчĕ: «Мĕскĕн Йорик!—
Тесе вăл, ахлатса, каларĕ.—

Мана вăл тытнă аллине.
Эп ун Очаков медальне
Çумма çакса мĕнчуль вылянă!
Пиллетчĕ Ольгине мана:
Курасчĕ, тетчĕ, çав куна...»
Вара, чунтан-вартан кулянпăн,
Владимир çавăнтах калкал
Çырса хăварчĕ мадригал.

XXXVIII

Унтах вăл куççуль витĕр курчĕ
Хăй ашшĕ-амăш тăприне;
Салхуллă сăвă çырса хучĕ
Вĕсен чул палăкĕ çине.
Мĕн тăвăн! Çавнашкал тĕнчемĕр,
Сын йăхĕ—акнă тырă евĕр:
Шăтать, пулса çитет, тӳнет,
Ун вырăнне тепри килет...
Çапла халь пирĕн çамрăк, вирлĕ
Ăру ӳсет, шавлать, вĕркет,
Ватти масаралла тĕртет.
Çаплах, çаплах ак вăхăт килĕ:
Ăчамăр ачисем пĕрре
Хĕссе кăларĕçĕ пире!

XXXIX

Унччен-ха, тусăмсем, киленĕр,
Çак пит черченкĕ пурнăçпа!
Пĕлетĕп эп: вăл ним хисепсĕр,
Пурнассăм та килмест ытлах.
Мĕлкесене халь тин шанмастăп;
Вăхăчĕпе чуна çапах та
Çĕклет пĕр шанчăк инçетрен:
Пит хурлăх пек çак тĕнчерен
Тухса кайма йĕр хăвармасăр.
Пурнап, çырап мухтавшăн мар;
Анчах хам тертлĕ шăпама
Чапа эп кăларасшăн, ахăр:
Пĕр сас пулин те ман çинчен
Аса илтертĕр эп вилсен.

## XL

Тен, тивӗ пӗр чуна сас хумӗ;
Тен, Манăç çырмине вара
Путса çухалмӗ вăл, хур пулмӗ—
Халь эпӗ хывакан çавра.
Тен, малашне (ак ырă шанăç!)
Кăтартӗ пӳрнипе айван ăс
Ман чаплăланнă портрета:
Ку пулнă, тейӗ, поэтах!
Тавах сана, тивлетлӗ Музăн
Юррисене юратакан,
Тавах, халь эп сапалакан
Сăмахсене эс упрасассăн,
Тавах, ăш аллупа кайран
Ман ват пуçа эс лăпкасан!

## ВИÇÇЕМЕШ ПАЙĔ

Вăл хĕр пулнă, вăл юратнă
*Мальфилатр*

I

«Ăçта? Эй, çак поэт таврашĕ!»
— Сывпул, Онегин, вăхăт çук.—
«Чармастăп эп; анчах ăçта-ши
Қаç-каç пулатăн эс кучух?»
— Эп Ларинăсемпе.—«Қаларĕ!
Вара унта сана хĕн мар-и
Қашни каçах сая яма?»
— Хĕн мар-çке.—«Йывăр ăнланма.
Қайичченех курса тăратăп:
Нимрен малтан (тăнла-ха эс),
Ну... вырăсла кил-йыш, тесе,
Хăнасене пит тарават-тăр:
Варенье; сăмаххи вĕсен:
Шав çумăр, йĕтĕн, выльăхсем»...

II

— Қунта-ха эп инкек курмастăп.—
«Қичем-çке, тусăм, ак—инкек».
— Пуш шăв-шава эп кураймастăп,
Мана паха тӳлек килтех,
Унта... — «Қаллех эклога санăн!
Е, çитĕ, çитĕ-çке, тăванăм.
Эппин, каятăн? Питĕ шел.
Итле-ха, Ленский: çук-и мел

Ҫав сан Филлидӑна курмашкӑн,
Сан шухӑшу, рифму, перу—
Йӑлтах унпа пулас хӗрӳ.
Паллаштарсам.»—Эс шӳт тӑватӑн.—
«Ҫук».—Эп хавас.—«Хӑҫан-ха?»—
Кӗҫ.
Вӗсем пире пит хапӑллӗҫ.

III

Ҫаяр.—
Туссем тухса кустарчӗҫ,
Ҫитеҫҫӗ; ак вӗсен умне
Сарать аваллӑх—ыр сӑйлавӑҫ—
Йывӑртарах килен сӑйне.
Хӑна тӑвас йӑла пӗрре-мӗн:
Елпеш тиркӗсемпе варенье,
Ҫӑкшӑмпалан кӗтмел шывне
Лартаҫҫӗ сар сӗтел ҫине
. . . . . . . . . . . . . . . . .
. . . . . . . . . . . . . . . . .
. . . . . . . . . . . . . . . . .
. . . . . . . . . . . . . . . .
. . . . . . . . . . . . . . . .

IV

Чи тӳрӗ ҫулпалан вӑр-варрӑн
Вӗсем каяҫҫӗ ак килне.
Эпир халь итлӗпӗр кӑшт вӑрттӑн
Ҫав ик геройӑн сӑмахне.
— Епле, Онегин? Анаслатӑн?—
«Мӗн тӑвӑн, Ленский!».—Анчах
саншӑн
Халь кичемрех пек.—«Мар, пӗрех.
Сӗм каҫ хупларӗ те хире;
Ҫустар, Андрюшка! Эй, кустарччӗ!
Мӗнле айван ҫӗр ку тавра!
А Ларина, хӑйне кура,
Пит кӑмӑллӑ та уҫӑ карчӑк;
Хӑрап: кӗтмел сӗткенӗнчен
Мана ан пултӑрччӗ сиен.

V

Ҫала-ха: хăшĕччĕ Татьяна?»
— Леш, хурлăхли; леш... кĕчĕ те
Ларайрĕ, шăп-шăпăрт Светланăн,
Чĕнмесĕр кантăк тĕлĕнче.—
«Шет, эс кĕçĕннине саватăн?»
— Вара мĕн?—«Эп, поэт пулсассăн,
Суйлаттăм аслине. Ольгин
Çук пурнăç сăнĕ, вăл — картин,
Шăпах Ван-Дейк Мадоннипе пĕр:
Çап-çаврака та хĕп-хĕрлĕ,
Ак çак айван пĕлĕтпеле
Шăвăн айван çак уйăх евĕр».
Владимир, перкелешрĕ те,
Çул тăршшĕпех чĕнмерĕ тек.

VI

А Ларина çуртне Евгений
Пырса кайни çав хушăра
Пурне те хытă тĕлĕнтернĕ,
Хускатнă пур кӳрше вара.
Ҫашни чăнне пĕлесшĕн пулнă.
Мĕнпурĕ йăпăштăн пуçланă
Ҫулма та шахвăртса тĕртме,—
Татьянăна илет, теме;
Хăшĕ-пĕри йăлт ĕнентернĕ:
Туй хатĕр пĕтĕмпех вĕсен,
Анчах та капăр çĕрĕсем
Тупманнипе тăхтаççĕ, тенĕ.
А Ленский туйĕ—тахçанах
Вĕсемшĕн татăклă сăмах.

VII

Татьяна кӳренсе тăнланă
Çын сарнă сăмаха; çапах
Хăй те çавнах вăл шухăшланă
Ăнланайми хаваслăхпа;
Çав шухăш чĕрине вырнаçрĕ;
Мехелĕ çитрĕ, вăл юратрĕ.

Чĕр пĕрчĕ те, çĕре ӳксен,
Шăтать çурхи ăш нӳрпелен.
Тахçан хĕр ĕмĕчĕ вăраннă,
Ачашшăн, хурлăн çуннăскер,
Вăл тунсăхланă темĕскер.
Тахçан чечен чĕре йăшканă,
Хĕстернĕ кăкăра, тахçан
Чун кĕтнĕ... кама та пулсан.

VIII

Кĕтсе те илчĕ. Уçăлаççĕ
Ун куçĕсем: ку çавă!—тет.
Халь çамрăк хĕрĕн кунĕ, каçĕ—
Йăлт çав çынпа тулса çитет.
Выртсан тĕлĕкĕнче те шав вăл
Çавнах курать, темле асамлă
Хăват ялан пĕр ун çинчен
Каланă пек. Хĕре кичем
Ачаш сăмах та, тарçă-тĕрçĕ
Пăхни те. Шав вăл кулянать,
Хăнасемпе сăмахламасть:
Тек ĕçсĕр аптраса çӳреççĕ,
Лараççĕ усăнса темччен,
Тесе ятлать хăй ăшĕнче.

IX

Епле вăл халь ытараймасăр
Вулать илĕртекен роман;
Каçса кайса, чарăнаймасăр
Вăл килĕнет ултавпалан.
Телейлĕ ĕмĕт вăй-хавалĕ
Чун кӳртнĕ пур сăнар та халĕ—
Юли Вольмар юратнă ар,
Малек-Адель те де-Линар,
Пăлханакан асаплă Вертер,
Леш Грандисон асар-писер,
Пире ыйха яраканскер,—
Чечен пикешĕн пĕтĕмпех пĕр
Сăн-сăпата пуçтарăнчĕç,
Онегин çеç пулса тăчĕç.

## X

Юратнă автор героини
Пулса Татьяна ăшĕнче,
Клариса, Юлия, Дельфина
Пулса, шăп вăрманта пĕччен
Хăруш кĕнекепе кун-каçăн
Çӳрет, шырать, тупать мăнтарăн
Унта хăй вăрттăн ĕмĕтне,
Тулли чĕри мĕн ыйтнине;
Ах, тет хĕр, хăйĕн пек тăвать вăл
Ют хурлăха, ют хаваса,
Герой валли, хăйне манса,
Ăшра çыру пăшăлтатать вăл...
Анчах геройăмăр, камах
Пулсан та, Грандисон марах.

## XI

Авалтарах хĕрӳ писатель
Пире мăнаçлă слогпалан
Хăй геройне шав кăтартатчĕ
Чи ырă кăмăллăн, тасан.
Усал çав героя йĕрлетчĕ,
Чăн çинченех ăна хĕсетчĕ.
Геройăн çепĕç чун, ăс-тăн,
Ытарайми илемлĕ сăн.
Ялан вăл çын хутне кĕресшĕн,
Çынна кăмăл тăвас тесен,
Темскер тӳсме те хатĕр, тен;
Кайран, романĕ пĕтереххĕн,
Усал пулатчĕ аяла:
Ырри çĕнетчĕ усала.

## XII

Кучух мĕнпур ăссем тĕтреллĕ,
Мораль пире ыйха ярать,
Усал ĕç романра та меллĕ,
Унта вăл пуç пулса тăрать.
Британ музин пули-пулмийĕ
Хĕр ыйхине вĕçтернĕ, сирнĕ,

Халь пулчĕ-тăчĕ ун кумир.
Е шухăша яран Вампир,
Е леш Мельмот—тĕнче кастарĕш,
Е Агасфер, е хай Корсар,
Е вăрттăн ĕмĕтлĕ Сбогар.
Лорд Байрон ăнăçлăн чăркарĕ
Ним шанчăксăр эгоизма
Кулянчăк романтизмпа.

XIII

Туссем, а мĕн усси ку майăн?
Тен, пĕлĕт ирĕкĕпеле
Пăрахăп эп поэт пулмашкăн,
Хĕмленĕп çĕнĕ хĕмпеле;
Вара, Феб вăрçнине пăхмасăр,—
Тиркемĕп — проза пуçлăп, ахăр:
Авалхилле романпала
Хавассăн вĕçлĕп кун-çула.
Унта хаяррăн эп сăрламăп
Усал ĕç вăрттăн асапне,—
Пĕр вырăс килĕн халлапне
Ансат кăна каласа парăп—
Аваллăх кăмăлĕпелен
Çынсем епле савни çинчен.

XIV

Каласа парăп эпĕ ашшĕн
Е куккăшĕн сăмаххине,
Шыв хĕрринче, ват çăка айĕн
Ачи-пăчи тĕлпулнине;
Пĕртакçĕ кӳлештерĕп, уйрăп,
Килĕштерсе куççуль тăктарăп.
Каллех вăрçтарăп, вĕçĕнче
Эп пиллĕп вĕсене венчет...
Асилĕп эпĕ, çырнăçемĕн,
Ачаш та çепĕç сăмахсем.
Иртейнĕ кунсенче вĕсем—
Чипер савнишĕн çуннăçемĕн—
Килетчĕç ман чĕлхем çине,
Халь мантăм эпĕ вĕсене.

## XV

Татьяна, чунăмçăм Татьяна!
Куççуль тăкатăп санпалан.
Çав капăр тирана тыттарнă
Ху шăпуна эс паянтан.
Çухалăн, чунăм, сая кайăн.
Анчах унччен-ха эс шанатăн,
Курман ырăлăха чĕнен.
Çак пурнăç пылакне пĕлен,
Асамлă наркăмăш сыпатăн,
Сана çут ĕмĕт илĕртет:
Кирек ăçта та, пур тĕлте
Телейлĕн тĕл пулма шутлатăн;
Çав çын ăçта та умра сан
Хăрушă сăхлантаракан.

## XVI

Татьяна тунсăх юратушăн,
Сада тухать вăл кулянма;
Пуçне лăш ячĕ те пыруçăн,
Ўркев тепре ярса пусма:
Çĕкленчĕ кăкăрĕ, сăн-пичĕ
Вĕри кăвар пек çунса илчĕ,
Сывланă сывлăш чарăнать,
Хăлха шавлать, куç ялтăрать...
Çĕрле пулать, хуралçă евĕр
Çӳрет çут уйăх тӳпере,
Янравлă шăпчăк вĕтлĕхре
Юрлать, тĕрĕлтетет тем те пĕр.
Татьяна çывăрмасть, хуллен
Вăл калаçать нянипелен.

## XVII

«Çук ыйхăм, няня: пăчă тем пек!
Уç кантăка, лар çак енчен».
— Мĕн пулчĕ, Таня, мĕн?—«Кичем пит.
Пуплер-ха авалхи çинчен».
— Мĕскер-ши, Таня? Ĕлĕк эпĕ
Асра усраттăм темĕн те пĕр:

Пули-пулми усал-тĕсел,
Хĕри-пăрас юмахĕсем;
Халь пурте тĕксĕм маншăн, Таня:
Мĕн пĕлнине те маннă ав,
Начарланса пыратпăр çав!
Супатпăр...—«Каласамччĕ, няня,
Хĕр чух епле пурăннине:
Юратнăччи эс ун чухне?»

## XVIII

— Мĕн тен, пикем! Унчух хĕр-
качча
Илтмен те юрату çинчен;
Ман пăянам çавтер хаярччĕ,
Чуна кăларĕччĕ пĕлсен.—
«Епле эс мăшăрлантăн, няня?»
— Çапла тур хушнă пуль. Ман Ваня
Кĕçĕнтерехчĕ вăл манран,
Хам эп вунвиççĕ тултарман.
Пĕр-ик эрне çӳрерĕ евчĕм
Тăванăмсем патне, унтан
Атте пиллерĕ. Эп малтан
Хăранипе пит хытă йĕтĕм,
Йĕртсех салатрĕç çивĕте,
Вара ăсатрĕç венчете.

## XIX

Ак кӳртрĕç ют киле-йыша та...
Эс итлеместĕн-иç мана...—
«Ах, няня, эп пăшăрханатăп,
Ман темшĕн кăмăл пăтранать:
Эп кăшкăрса макăрма хатĕр!»
— Ачам, апла эс сывă мар-тăр;
Тур çырлахсамччĕ, хăтарсам,
Мĕн кирлĕ пек сана?—ыйтсам...
Кӳр-ха светтуй шывпа сапам эп,
Кăвар пек çунтаратăн та...—
«Çук, няня... эпĕ... юратап».

— Ах, турăçăм, мĕн тен, ачам, эс!—
Хĕре ват няня кĕлĕпе
Хĕрес хывать ват аллипе.

## XX

«Эп юратап»,—тет карчăка хĕр,
Çунса пăшăлтатать татах.
— Мăнтарăнăм, эс сывмарах-тăр.—
«Çук, сывă эп: эп юратап».
Уяр. Çут уйăх ялтăртатрĕ,
Савса йăвашшăн вăл çутатрĕ
Татьянăн шурхăн илемне,
Ун сӳтĕлнĕ çивтисене,
Куççуль тумламмине; çап-çамрăк
Хĕр умĕнче сĕнксе ларать
Йĕленпеле, тутăрпала
Шап-шурă çӳçлĕ ватă карчăк;
Асамлă уйăх çутинче
Тӳлеккĕн тĕлĕрет тĕнче.

## XXI

Хĕр уйăха сăнаса ларчĕ,
Таçтах çитсе чĕрипелен...
Сасартăк шухăш ун çуралчĕ...
«Каях, хăвар мана пĕччен.
Пар, няня, хут мана, пера та,
Сĕтел шутар; эп час выртатăп;
Ыр каç сана». Хĕр пĕччен ех.
Шав уйăх çутатать. Тӳлек.
Чавсаланса çырать Татьяна,
Шавах Евгений ун асра,
Пат тӳрĕ, уçă çырура
Хĕр савăшĕ сывлать тасанăн.
Çыру хутланчĕ çурмаран...
Татьяна! Кам валли вăл сан?

## XXII

Эп курнă акăш-макăш хӳхĕм,
Хĕл пек таса та сив хĕрсем,
Ним тилмĕрӳ-тархас, ним ӳкĕт

Витми, ăс тавçăрмискерсем;
Вĕсем мăнаç хăтланнинчен те
Ыр чунлинчен эп тĕлĕнеттĕм,
Калам — тараттăм вĕсенчен,
Вĕсен куçхаршисем çинче
Эп тамăк çыруне вулаттăм:
*Шанма пăрах ĕмĕрлĕхех.*
Саватăн — вĕсене инкек,
Хăран — вара савăнтаратăн.
Нева хĕрринелле çитсен,
Ун пек хĕр курнă эсĕр, тен.

## XXIII

Эп тепĕр тĕрлĕ хĕр пĕлеттĕм:
Ăна саваççĕ темиçен,
Ырлаççĕ — ах та ах — нимпе те
Ун чунĕ çаврăнмасть иккен.
Мĕнпе вара ăнран эп кайрăм?
Çав хĕр, хыт чунлăн та хаяррăн
Юратăва хăй пистерсен,
Кайран пĕлетчĕ хĕрхенсе
Ăна калла хăть тавăрмашкăн,
Хăш чух сасси хăть çав пикен
Янратчĕ ăшшăн та çемçен.
Шанма пăрахайман мăнтарăн
Юратакан арçын каллах
Вара ун хыççăн çăрхалать.

## XXIV

Мĕнрен айăплăрах Татьяна?
Е хăйĕн уçă чунĕпе
Хальччен ултав тутанмантан-и,
Е ĕмĕтне ĕненнипе?
Чеелĕхсĕр, чĕр сисĕм-туйăм
Хĕтĕртнĕ май, юратнипе-им?
Е вăл çынна пит шаннăран,
Е çутçанталăк ачаран
Ăна çунатлă чун тунишĕн,
Е чĕрĕ ирĕк, ăс кӳртсе,
Хăйне манерлĕ пуç пӳрсе,

Ачаш, вĕри чĕре панишĕн?
Ķаçармăрах-шим унăнне
Уйлавсăр, çăмăл шухăшне?

## XXV

Ķокетка шухăшлать сивлеккĕн.
Татьяна шӳтлĕн мар савать,
Ачаш ача пек пур хевтеллĕн
Вăл парăнать юратăва.
Вăл каламасть: тăхтар пăртакçĕ,
Апла тата-ытла саваççĕ,
Шепрех те танаталăпăр;
Малтан çынна шантарăпăр,
Вара, иккĕленсе, хаяррăн
Ун чĕрине асаплăпăр;
Ķӳлештерсе çунтарăпăр;
А унсăр, кăмăл тăрансассăн,
Чее çав тыткăнçă ялан
Тармашкăн хатĕр сăнчăртан.

## XXVI

Тата пĕр йывăрлăх пур маншăн:
Татьяна çыруне, паллах,
Тăван çĕршыв чысне çăлмашкăн,
Ķунта халь ман куçармаллах.
Вăл вырăсла начар чухланă,
Журналăмăрсене пăхман вăл,
Хăй халăхĕн чĕлхипеле
Ķалаçкаланă хĕнпеле;
Çапла, хĕр çырнă французла ман...
Мĕн тăвăн! — тетĕп эп каллах:
Хальччен-ха пирĕн вырăсла
Çăвар уçман саван хĕр-дама,
Мăнаç чĕлхемĕр иленмен
Çав пуштă прозине хальччен.

## XXVII

Пĕлетĕп эп: вулаттарасшăн
Халь вырăслах дамăсене.
Благонамеренный тытсассăн

Курасчĕ манăн вĕсене!
Поэтăмсем, хута кĕрсемĕр,
Чăн мар-и: вăрттăн çĕрте эсĕр
Çылăхăрсемшĕн сăвăсем
Çырса паран чиперккесем,
Чĕре çунтармăш хĕрупраçĕ—
Пуртех-çке, вырăс чĕлхипе
Аран перкелешсе хĕнпе,
Ăна ачашшăн пăскалаççĕ;
Вĕсен тути çинче чăнах
Тăванланман-и ют сăмах?

## XXVIII

Курмашкăн тур ан хуштăр, тетĕп,
Балра-мĕнте, кирек ăçта
Калпаклă академике те
Сар шаллĕ семинариста!
Йăм хĕрлĕ хĕр тути вăл култăр,
А вырăсла пуплевĕн пултăр
Грамматикăллă йăнăш та.
Тен, ман инкек тĕлне, тата
Ўсес чиперккесем вĕрентĕç,
Журнал пит тилмĕрсен, пĕрре
Грамматика тытма пире,
Тен, сăвă вулама пикенĕç:
Анчах та эп... Мана мĕне?
Пăрахмăп эп авалхине.

## XXIX

Тирпейсĕр, йăнăш шĕкĕлтетĕм,
Кăшт селĕпрех тухан сăмах—
Çавна илтсессĕн, ман чĕремçĕм
Чĕтренĕ кăмăллăн каллах;
Вăй çитмĕ ўкĕнмешкĕн манăн,
Шеп пулĕ галлицизм маншăн,
Яш чух хам тунă çылăх пек
Е Богданович сăвви пек.
Анчах та вăхăт куçармашкăн
Пикемĕн çыруне часрах,
Сăмах парсаттăм паçăрах,

Халь акă хатĕр пăрахмашкăн.
Пĕлетĕп эп: чечен Парнин
Пери йăлара мар халь тин.

## XXX

Ĕçке-çике те, хурлăха та
Сăвăлакан! Эс пур пулсан,
Сана паян чăрмантараттăм
Эп, тусăм, пĕр çăмăлпалан:
Кĕвĕлесе хитрен, ĕнерлĕн
Эс куçарсанччĕ çамрăк хĕрĕн
Ют халăх сăмаххисене.
Ăçта эс? кил: тивĕçĕме
Тайма пуçпах сана паратăп...
Анчах салху чул хушшинче,
Финлянди пĕлĕт айĕнче,
Писсе чапран та, мухтавран та,
Пĕччен çӳрет вăл, чунĕ ун
Илтмест ман хурлăха çак кун.

## XXXI

Татьяна çыруне усратăп,
Умра выртать вăл тап-таса.
Вулап та вăрттăн кулянатăп,
Тăранаймастăп вуласа.
Ҫамран вăл çепĕçе вĕреннĕ?
Ăçтан сăмах тупса çитернĕ?
Ҫам унăн чĕрине вĕри,
Ачаш та чăрсăр, çав тери
Асăрханусăр пуплеттерчĕ?
Пĕлместĕп. Анчах ак çыру—
Ҫĕскетнĕ, тĕссĕр куçару,
Чĕр картинран шупка ӳкерчĕк,
Вĕренекен хĕрачасем
Ҫаланă Фрейщиц кĕввисем.

### *ТАТЬЯНА ÇЫРĂВĔ*

«Сире çыру çырап — мĕн урăх?
Мĕнех калайăп эп тата?
Пĕлеп, тем вырăнне те хурăр

Мана халь эсĕр ăшăрта.
Анчах, кăшт та пулин ман хурлă
Шăпам хутне кĕрсе, мана
Хĕрхенĕр, теп, пăртак кăна.
Малтан эп ним шарласшăн марччĕ.
Ёненĕр: ман вăтанăçа
Пĕлейmĕттĕрччĕ нихăçан,
Ăшра пулсассăн манăн шанчăк
Пĕрре пулин те эрнере
Ялăмăрта курма сире,
Калаçнине кăна илтмешкĕн,
Сире сăмах чĕнме, унтан—
Яра куна та каç — ялан
Пĕр ĕмĕт-шухăшăмпалан
Тепре курассине кĕтмешкĕн,
Анчах эсир — чун писнĕ çын, тет,
Ялта шавах сире кичем.
Эпир, сире хавас пулин те,
Ним чапсăр... паллă мар çынсем.

«Ма куртăр-ши килсе пире?
Çын маннă çак ялта нихçан та
Пĕлмен пулаттăм эп сире,
Курмастăм çак хĕн-асапа та.
Айван чуна лăплантарсассăн,
(Ăçтан пĕлес?) тен, малашне
Тус тупăттăмччĕ эп хам майлăн,
Ыр арăм пулăттăмччĕ уншăн,
Ача-пăчашăн — ыр анне.

«Тепри!.. Çук, тĕнчере пĕрне те
Эп памăп чĕрене нихçан.
Ку хамăртан килмест, пĕлетĕп...
Ку — пĕлĕт ирĕкĕ: эп — сан.
Ман пĕтĕм пурнăçăм упраннă
Пĕр саншăн, санпала пулма;
Сана ман патăма тур янă,
Виличченех эс сыхăм ман...
Мана эс тĕлĕкре курнаттăн,
Пахаччĕ курăниччен ех,

Куçу тиветчĕ чĕрене,
Чунра сассу янратчĕ санăн...
Çук, çук, ку пулчĕ тĕлĕк мар!
Кĕрсессĕнех сана палларăм,
Иментĕм, хыпăнтăм кăварран:
Ку çавă! — терĕм ăшăмра.
Чăн мар-и? Эп сана тăнларăм:
Манпа калаçрăн шăп чухне,
Чухăнсене эп пулăшуçăн
Е кĕлĕпе лăплантаруçăн
Хыпса çунан чун тунсăхне.
Ак çак самант, эп çырнăçемĕн,
Эс мар-и, савнă ĕмĕлкемĕм,
Вĕлтлетрĕн тăрă тĕттĕмре,
Пуçелĕкĕм патне çывхартăн?
Эс мар-и, юратса, ачашшăн
Пăшăлтатса ĕнентерен?
Кам эс: ман пирĕшти пулатăн
Е илĕртен усал эс маншăн?
Чăнне пĕлесшĕн эп санран.
Тен, ку ахаль асап кăна-тăр,
Ултав-тăр, чунăм çамрăкран!
Тен, ман шăпам йăлт урăхла-тăр...
Анчах — антив! Эп паянтан
Хам шăпана сана паратăп,
Куççуль тăкап сан умăнта,
Хута кĕмешкĕн йăлăнатăп...
Асна илсем: пĕччен халь эп,
Кунта мана ăнланаймаççĕ,
Шухăшăмсем ăсран яраççĕ,
Сăмах чĕнмесĕрех пĕтеп.
Кĕтетĕп: пĕрехçех пăхса,
Чĕремĕн ĕмĕтне чĕртсемччĕ,
Е, тивĕçпе айăпласа,
Çак йывăр тĕлĕке сирсемччĕ!

«Вĕçлеп! хăрушă вулама...
Вилес пекех эп вăтанатăп...
Ыр ятăр кĕрĕ хутăма,
Хăюллăнах ăна шанатăп...»

XXXII

Сывлать Татьяна ах та ах çеç;
Çыру чĕтрет ун аллинче;
Типет кĕрен хут çыпăçтаркĕç
Пикен вĕри чĕлхи çинче.
Пуçне хул çинелле вăл тайнă.
Çӳхе кĕпи сирĕлсе аннă
Ун хӳхĕм хулпуççи çинчен...
Анчах ак уйăх та хуллен
Сӳнсе пырать. Тĕтре шĕвелчĕ:
Тӳрем çĕр палăрать. Лере
Шыв кĕмĕлленчĕ; кĕç сирет
Ял ыйхине кĕтӳç шăхличĕ.
Ак ир, çын тăнă тахçанах;
Татьянăшăн пулсан — çавах.

XXXIII

Вăл шуçăма асăрхамасть халь,
Пуçне лăш уснă та — ларать,
Эрешлĕ пичетне пусмасть-ха
Çыру çине, темскер тăхтать.
Анчах, хуллен уçать те алăк,
Филипьевна — шуралнă карчăк—
Ăна ак чей илсе кĕрет.
«Тăрах, пикеçĕм, вăхăт,—тет:
И! Эс иккен, чиперĕм, хатĕр!
Эй, ир вăраннă кайăкçăм!
Эп çĕрккĕ пит хăранăччĕ.
Эс сып-сывах-мĕн, тур упратăр!
Ќаçхи кичем йĕрри те çук,
Мăкăнь çеçки пек пит-куçу».

XXXIV

— Ах! няня, итлесемччĕ пĕр ĕç...—
«Сан ирĕк, чунăмçăм, хушсам».
— Ан шухăшла... чăнах... темскер эс...
Анчах куратни... Ах! тусам.—
«Ак тамаша, мĕн тумăп саншăн...»

— Эппин ярах мăнукна вăрттăн
Çак çырупа хай О... хай леш...
Улпут патне... кала—нимле
Сăмах та вăл ăна ан хуштăр,
Ята та ан пĕлтертĕрччĕ...—
«Кама-ши ку, чиперĕмçĕм?
Эп кучухне пит ăнкарусăр.
Йĕри-тавра улпут нумай,
Çăмăлах мар-çке чухлама».

XXXV

— Епле эс тĕшмĕртместĕн, няня!—
«Пикемçĕм, ватă эп ĕнтĕ,
Чакса пырать ăс-халăм, Таня;
Эп ĕлĕк пит хивреччĕ те,
Улпут çăвар уçса калайĕ...»
— Ах, няня, няня! Унпала-и?
Мĕн тăвăп сан ăсупалан?
Çыру ак леçмелле, куран:
Онегина.—«Ну, юрĕ, юрĕ.
Ан çиленсемччĕ, чунăмçăм,
Хăвах пĕлен — ман тăнăм çук...
Ма-ха каллех сăну шап-шурă?»
— Çук, няня, ку ахаль, чăнах.
Ярсамччĕ мăнукна часрах.—

XXXVI

Анчах кун иртрĕ, çук хыпарĕ.
Çĕр те каçаççĕ: çук ответ.
Кĕте-кĕте хĕр аптăрарĕ,
Ирех тумланчĕ: час-ши?— тет.
Ак Ольгăн чун савниййĕ çитрĕ.
«Вара ăçта-ха тусăр сирĕн?»
Ыйтать унтан майра-хуçа:
«Пире вăл манчĕ-çке вуçах».
Татьяна хĕрелсе çӳçенчĕ.
— Паян килме вăл пулчĕ-ха,—
Тет хирĕç Ленский карчăка:

Ҫăшт пуштă, ахăр, чăрмантарчĕ.—
Ӳпкев итленĕ евĕрлĕ
Татьяна пăхрĕ ҫĕрелле.

XXXVII

Энтрĕкленет; каҫ сăмаварĕ,
Ҫитай чейниккине хĕртсе,
Сĕтел ҫинче чашла пуҫларĕ;
Ҫăп-ҫăмăл пăс тăрать вĕҫсе.
Ольги чейник тытать, ак юхрĕ
Ăсла пек хăмăр чей, ун ырă
Шăрши йĕри-тавра сарлать.
Ача хăйма пырса лартать.
Татьяна кантăкран пăхать-ха,
Сив кантăк умĕн сывласа,
Мăнтарăн, шухăша кайса,
Илемлĕ пӳрнипе ҫырать хăй
Пасарнă кĕленче ҫине
Юратнă вензель *О* та *Е*.

XXXVIII

Ҫав хушăрах вăркать ун чунĕ,
Ҫуҫҫуль кӳленнĕ ик куҫне.
Кĕҫ тăпăртăк!.. Ҫăн хытрĕ юнĕ.
Ак ҫывăх! ҫитрĕҫ... карташне
Евгений! «Ах!»—мĕлке йăлтлатнăн—
Ялт тепĕр пăлтăра Татьяна;
Алкумĕнчен карташнелле,
Унтан тӳрех сада, калле
Пăхма хăймасть; вĕлтĕртетеҫҫĕ:
Чечек ҫаври, ҫерем, кĕпер,
Аллея, кӳл,ката пекскер;
Сиреньсене хуҫса пĕтерчĕ,
Чупа-чупа шыв хĕррине
Хашкаса ҫитрĕ, сак ҫине

XXXIX

Йăванчĕ...
«Вăл кунта! Евгений!
Мĕн шухăшлĕ вăл! Тур ҫырлах!»—

Чĕри ун асаппа ĕшеннĕ,
Усрать-ха шанчăкне çапах;
Сиксе чĕтрет, çунать кăваррăн,
Кĕтет: килмест-и? Туйăнмарĕ.
Хĕр-тарçăсем йăран çинче
Çырла суйлаççĕ тĕмсенчен,
Вĕсем юрлаççĕ хушнă тăрăх.
(Хушу сăлтавĕ çакăнтан:
Улпутăн çырлине вăрттăн
Ан хыптăр чеесен çăварĕ,
Вăл тултăр юрăпа вĕсен;
Ял тамаши-мешехисем!).

## *ХĔРСЕН ЮРРИ*

Эй, хĕрсем, чиперскерсем,
Пĕрле ӳснĕ тантăшсем,
Вылясамăр, сар хĕрсем,
Сарăлса, ирĕкленсе!
Тăсса ярăр леш юрра—
Чунăмăр юратнине,
Илĕртсемĕр йĕкĕте
Çаврака уяв патне.
Илĕртсессĕн маттура,
Сăнасассăн аякран,
Тарăр-пĕтĕр, тантăшсем,
Перĕр ăна чиепе,
Перĕр хăмла çырлипе,
Хĕрлĕ хурлăханпалан.
Ан çӳрех эс итлеме
Вăрттăн юррăмăрсене,
Ан çӳре эс куç хывма
Пирĕн вăййăмăрсене.

## XL

Вĕсем юрлаççĕ; тинкермесĕр
Илтсе янравлă çав сасса,
Татьяна кĕтрĕ тӳсеймесĕр
Чĕри пăртак лăпланасса,
Пит-куç çунма пăрахтăр, терĕ,

Анчах кӑкри çаплах чĕтрерĕ.
Сӑн-пит кӑварĕ те сўнмест,
Шав йӑмӑх, йӑмӑх хĕмленет.
Çапла яп-ялтӑркка çуначĕ
Çатӑлтатать-çке лĕпĕшĕн,
Алхас ача алне лексен;
Çапла чĕтрет калча мулкачĕ,
Сасартӑк инçетрен курса
Тĕм çуммĕн шунӑ сунарçа.

## XLI

Анчах, сывларĕ те ак ассӑн,
Хĕр тӑчĕ хӑй сакки çинчен:
Аллеелле кӑшт пӑрӑнсассӑн,
Вӑл курчĕ: унӑн умĕнче,
Куçĕсемпе çиçсе, Евгений
Тӑра парать хаяр мĕлкенĕн.
Вутпа пĕçертнĕ пек — унтах
Татьяна чарӑнчĕ тӑпах.
Анчах кĕтмен çĕртен курсассӑн
Мĕн пулнине, туссем, паян
Пулаймĕ каласси манран;
Нумай пуплерĕм,—кӑшт канасшӑн,
Çўресшĕн эпĕ халь: кайран
Каласа парӑп, сыв пулсан.

## ТАВАТТАМĔШ ПАЙĔ

Ырă кăмăл çутçанталăкран килет.
*Некер.*

I. II. III. IV. V. VI

VII

Хĕрарăмран мĕнчуль писетĕн—
Унчуль савать вăл ытларах,
Унчуль шепрех серепелетĕн
Ăна эс ху çумна вара.
Авал юратура сив чунлă
Чарусăр аскăнлăх пуç пулнă;
Хăйпе хăй каппайса шавах,
Ыр курнă вăл савмасăрах.
Анчах йăларан тухрĕ çавă—
Асаттесен саманинчи
Ватсупнă упăте вăййи:
Кивелчĕ Ловлассен мухтавĕ,
Кивелчĕç хĕрлĕ кĕлесем,
Парка та чаплă парiксем.

VIII

Кам йăлăхмĕ курнăçланмашкăн,
Пĕрнех çĕр тĕрлĕ паврама;
Мĕнпурĕ шаннинех мăнаçлăн
Халь шантарасшăн тăрăшма;
Çав хирĕçлевсенех илтмешкĕн,
Çав тĕшмĕш шухăшах сирмешкĕн?

Ун евĕр шухăш ĕмĕрте
Пулман вунвиç çулхи хĕрте!
Кама ывăнтарса çитермĕ
Тупа тăву е хăтăру,
Куççуль, ултшар листа çыру,
Çĕрри, ултавĕ, çын элекĕ,
Мăнаккăш-амăш сыхлăхĕ,
Упăшкисен хĕн туслăхĕ?!

IX

Евгений шăп çапла шутланă.
Пуçламăш çамрăк ĕмĕрне
Вăл çиллĕн-тăвăллăн тустарнă,
Чарман иленчĕк чĕрине.
Вăл пурăннă, пĕрне пĕр тапхăр—
Вăхăтлăха — ытараймасăр,
Тепĕринчен чун тавăрса,
Çитмен ĕмĕтпелен ырса,
Çитнипелен те вăл ĕшеннĕ;
Пĕччен е çын шăв-шавĕнче
Шав ӳкĕннĕ хăй ăшĕнче,
Анаслуне кулса çĕнтернĕ:
Çапла, çеçке пек яш чухне,
Вăл хăртнă сакăр çул хăйне.

X

Чипер хĕрсемшĕн тек çунман вăл,
Çӳреннĕ ытахаль кăна;
Пăхмарĕç — самантрах лăпланнă,
Улталĕç — пит хавас канма.
Савни шыранă савăнмасăр,
Пăрахнă вăл ним кулянмасăр,
Кайран астунă кăшт кăна.
Çапла пĕр-пĕр каçхи хăна
Пырать картла кăшт вылямашкăн,
Ларать, пĕтернĕ выляса—
Килне вăл кустарать часах,
Çыврать пĕр шухăшсăр та лăпкăн,
Хăй те пĕлмест вăл ирхине
Каçпа ăçта каяссине.

## XI

А Таңяран çыру илсессĕн
Онегина çĕн хĕм кĕчĕ.
Ун шухăшне, темскер пиллессĕн,
Хускатрĕ хĕрĕн ĕмĕчĕ.
Ăна Татьянăн хурлă пичĕ,
Шупка сăнарĕ аса килчĕ;
Илемлĕ тĕлĕк курнă пек
Киленчĕ халь вăл чунĕпе.
Тен, иртнĕ сисĕмĕн кăварĕ
Самантлăх хыпрĕ чĕрере,
Анчах шанса çыраң хĕре
Улталама вăл шутламарĕ.
Халь эпĕр вĕçĕпĕр — ăна
Татьяна курнă пахчана.

## XII

Пĕр-ик минут никам чĕнмерĕ,
Вара Онегин çывхарса
Каларĕ: «Эсĕр çырнă,—терĕ,—
Ан тунăр. Айăпсăр, таса
Юратупа çунатăр эсĕр,
Çынна ача пек ĕненетĕр,
Тӳр кăмăллă пулни аван,
Вăл ман ăшри тахçан-тахçан
Лăпланнă туйăма чун кӳртрĕ;
Анчах ырлас теместĕп эп;
Сире эп халĕ, хăвăр пек,
Çаплах каласа парăп тӳрĕ;
Ман чунăм уçă, итлĕрсем,
Эсир—пĕртен-пĕр ман тӳрем.

## XIII

«Хам пурнăçа кил-йыш таврашшĕн
Тăвăрлама шухăшласан;
Тирпейлĕ мăшăр, ача ашшĕ
Пулма шăпам мана хушсан;
Çемьеллĕ, канлĕ пурăнасшăн
Самант пулин те эп çунсассăн:

Ун чух, чăнах та, сирĕнсĕр
Шырамăттăмччĕ урăх хĕр.
Ку—мадригал, тесе ан калăр:
Хам ĕлĕкхи идеала
Сирте тупса, эп кун-çула
Пĕрле ирттерĕттĕмччĕ, ахăр,
Телейлĕ пулăттăм-и, тен...
Пулма пултарнă таранччен!

XIV

«Анчах телей мана иленмĕ,
Кураймĕ чунăм пархатар.
Эсир ытарайми илемлĕ,
Сире эп тивĕçлĕ çын мар.
Ĕненĕрсем (калатăп тÿрĕ)
Мăшăрлану асап çеç кÿрĕ.
Сире епле савсан та эп,
Час хăнăхăп та—сивĕнĕп;
Йĕрсе пĕтĕр: таса куççулĕр
Çемçетмĕ хытă чĕреме,
Тулаштарайĕ çиллĕме.
Халь хăвăр шухăшлăр: мĕн чухлĕ
Инкек вăл кăтартатчĕ пуль—
Çав арлă-арăмлă кун-çул!

XV

«Кунтан хĕнни мĕн пур çемьешĕн?—
Венчетлĕ арăм пĕр-пĕччен
Ирпе те, каç выртсан та мĕскĕн
Сунать мăшри тивĕççĕртен;
Арçын ăна хака та хурĕ,
Анчах ялан кичем вăл, сÿрĕк,
Чĕнмест, кÿлешÿпе хăртать,
Хăй шăпине хăй ылханать.
Ак эпĕ! Е çавна шырарăр
Эсир кăвар пек чунăрпа?
Е çавăншăн пур кăмăлпа,
Аспа çыру çырса чăрмантăр?
Е сирĕн шăпиех вара
Çапла пулать-ши пурнăçра?

## XVI

«Ĕмĕтсене те, кун-çула та
Тавраймăн каялла, паллах...
Сире эп пиччĕр пек саватăп,
Тен, пиччĕртен те ытларах.
Қаланăшăн ан кӳренсемĕр:
Пĕрре çеç мар çитĕнекен хĕр
Çĕнетĕ ĕмĕчĕсене;
Чĕр йывăç та çулçисене
Улăштарать çурсеренех пĕр.
Пиртен килмест ку, ахăрах.
Татах юратăр-ха: анчах...
Хăвра алла илме вĕренĕр;
Пуртех ăнланас çук ман пек;
Пĕлменлĕхрен килет инкек».—

## XVII

Çапла Евгений ӳкĕтлерĕ.
Куççуль тулан куçĕсене
Йăтмасăр, шăп кăна итлерĕ
Татьяна унăн сăмахне.
Ăна Онегин алă пачĕ.
Татьяна хурлăхлăн таянчĕ,
Чĕнмесĕр, лăш пуçне усса,
Вăл кайрĕ юнашар утса;
Пахча тавра килне çывхарчĕç;
Пĕрлех пырса кĕчĕç, никам
Пулмарĕ уншăн ятлакан:
Сăпайлă ялăҥ та пурах-ĕç,
Мăнаç Мускавăнни пекех,
Хăйне кура çав ирĕклĕх.

## XVIII

Қуратăр пулĕ, вулаканăм:
Хурланнă Таняпа чăн та
Пит çепĕç пулчĕ тантăш манăн;
Пĕрремĕш хут çеç мар кунта
Вăл чун тӳрĕлĕхне кăтартрĕ;
Хăйне çынсен усал-хаярĕ

Питех тăманччĕ хĕрхенсе.
Шав сĕтĕретчĕç, май килсен;
Тăшманĕ, тусĕ те шар турĕ
(Кусем, тен, иккĕш те—пĕрех).
Тăшман кашнин пур тĕнчере,
Анчах тусран хăтартăр турă!
Ах, çав тус-йыш мана вара!
Ахалĕн мар вĕсем асра.

XIX

Мĕн пулчĕ? Çук. Лăплантаратăп
Синкерлĕ, пушă ĕмĕте;
Эп *скобкăра* кăна калатăп:
Нимле пули-пулмилĕх те,
Чартак çинчи суеç кăларнă,
Çӳлти хура чунсем ырланă
Нимле элек те, мăшкăл та,
Киревсĕр эпиграмма та
Тус пĕлменни хальччен пулман-тăр:
Çавна йĕркеллĕ çын çинчех,
Кулса, ним çиленмесĕрех,
Çĕр хут палкать вăл астумасăр;
Хăй пур—вăл сан хутнах кĕрет,
Савать... тăванупа пĕрех!

XX

Ман ырă ятлă вулаканăм!
Тăванăрсем сывах пуль те?
Кăна эп ăнсăртран тапратрăм,
Анчах манран эсир халь, тен,
*Тăван* мĕн иккенне пĕлесшĕн?
Тăван тени вăл ак мĕнле çын:
Эпир ăна юратмалла,
Сума суса йăпатмалла,
Пырса та курмалла кăшт—халăх
Йăлипеле—Раштавалла,
Е çырупа ыр сунмалла;
Ытти чухне вăл шăп çулталăк
Аса илмест вара сана...
Тур сывлăх патăрах ăна!

## XXI

Илемлĕ пикене савсассăн—
Тăван-тусран шанчăклăрах;
Темле сĕм тăвăл чух та санăн
Унра ху тивĕçӳ пурах.
Çапла! Анчах тĕнчемĕр тĕрлĕ:
Е çĕнĕ мода çавраçилĕ,
Е çын саран элек-челек...
Хĕрарăм çăмăл, мамăк пек.
Çитменнине, тирпейлĕ мăшăр
Хăй упăшкин сăмахĕнчен
Ан тухтăр, тенĕ ĕлĕкрен.
Çапла кĕç тӳрĕ савнă тусăр
Уттарĕ кукăр çулпалан:
Юратупа вылять шуйттан.

## XXII

Ққама савас? Ққама ĕненĕн?
Ққам улталамĕ-ши пире?
Ққам пирĕн шитпелен шитлесшĕн
Пур ĕçсене те тĕнчере?
Ққам пирĕн çинчен элек сармасть-ши?
Ққам хӳтĕлет пире ачашшăн?
Ққам писмĕ эпĕр пăсăлсан?
Ққам йăлăхтармĕ нихăçан?
Хисеплĕ çыннăм, вулаканăм!
Суя мĕлке шыра-шыра,
Сая ан ярăр вăйăра,—
Юратăр хăвăра, тăванăм!
Ққу шанчăклă вара: унтан
Пахи тек ним те çук, куран.

## XXIII

Мĕн пулнă-ши курнаçнă хыççăн?
Ққăна пĕлмешкĕн йывăр мар!
Чечен чуна пушшех те хыттăн
Çав юрату чĕртнĕ кăвар
Пуçларĕ пăшăрхантармашкăн;

Тата, тата питрех мăнтарăн
Татьяна çунăхса типет;
Выртсассăн та ыйхи вĕçет;
Ун сывлăхĕ, илемĕ, сăнĕ,
Кулли, хĕр канлĕхĕ—веçех
Çухалчĕ пушă сас пекех,
Тĕксĕмленет çап-çамрăк Таня:
Çапла ирхи кунах вара
Сĕм тăвăл ĕмĕлки карать.

## XXIV

Шансах, шансах пырать Татьяна;
Сăнран ӳкет, сӳнет, чĕнмест!
Ăна тек ним те йăпатаймĕ,
Чунне тек ним те çĕклемест.
Пускилĕсем пуçне суллаççĕ,
Пĕр-пĕринпе пăшăлтатаççĕ:
Качча парасчĕ-çке ăна!..
Е, çитĕ. Шухăша-тăна
Хавасланатса, часрах сăрлам-тăр
Телейлĕ юрату сăнне.
Ирĕксĕрех ман чĕрене
Хĕстерчĕ хĕрхенӳ; каçарăр:
Эп çав тери савап ăна—
Ытарайми Татьянăна!

## XXV

Владимир савнăçемĕн савнă
Илемлĕ, çамрăк Ольгăна.
Пур чунĕпе вăл халь çакланнă
Çав илĕртӳллĕ тыткăна.
Ялан унпа: пĕрле каç-каçăн
Хĕр пӳлĕмне кĕрсе лараççĕ;
Ирпе çӳреççĕ уçăлса
Садра, ал-аллăн тытăнса;
Çапах та—юратса киленнĕ
Поэт тӳсме çук вăтанать;
Вăл, Ольга йăл кулсан кăна,

Ун кăтрипе хăш чух, именнĕн,
Пăртакçă выляма хăять
Е кĕпине кăшт чуптăвать.

## XXVI

Е вуласа парать ăна вăл
Ырра вĕрентекен роман;
Ун авторĕ иккен чухлавлă
Шатобриан пек мар аван;
Кĕнекине вуланăçемĕн,
Сасартăк хĕрелсе, хĕрсемшĕн
Хăрушăрах страницине
Вăл сиктерет пĕр-иккĕшне.
Хăш чух уллах çĕрте ларассĕ,
Сĕтел çине чавсаланса,
Пит тарăн шухăша кайса,
Вĕсем-мĕн шахмăтла выляççĕ;
А Ленский, аташса, илет
Хай ладьине пешкипеле.

## XXVII

Килне каять—унта та хăйĕн
Ольгипелех вăл сĕмленет.
Альбом листисене тирпейлĕн
Савни валли хитрелетет:
Е ӳкерет вăл ял илемĕ,
Чул лартнă вилтăпри, çерем-и,
Е кăвакарчăн пĕр пĕччен
Ларать ун лира тăрринче;
Е сăвăлла вăл асăнмалăх
Ыттисенчен хыçаларах
Савса çыра-çыра парать:
Юлать вара çав чĕмсĕр палăк
Самантлăх шухăш йĕрĕ пек,
Кун-çул иртет—йĕр çаплипех.

## XXVIII

Паллах, эсир сахал курман-тăр
Уес пикийĕн альбомне,
Ăна варланă пур хĕр-тантăш—

Умне, хыҫне, мӗнпур енне.
Тем чухлӗ сӑвӑ—ним йӗркесӗр,
Епле илтсе—ҫапла, виҫесӗр
Тултарнӑ туслӑхӑн ятне,
Кӗскетнӗ, тӑснӑ вӗҫене.
Пӗрремӗш листине пӑхатӑн:
«*Мӗн ҫырӑр—пурте маншӑн*» тет;
Алпуснӑ французла *Аннет;*
А юлашки ҫинче вулатӑн:
«*Кам юратать манран ытла,*
*Антив, ҫав ҫыртӑр малалла*».

## XXIX

Унта, ним тупмасан та, тупӑр
Ҫут факел, ик чӗре, чечек;
Савма тупа тунине вулӑр—
*Ҫӗре кӗрсе выртичченех;*
Унта ҫарти поэт-ӑнманӑ
Тӳсме ҫук сӑвӑ чарлаттарнӑ.
Ун евӗр ирӗк альбома
Эп хам та пит хавас ҫырма,
Мӗншӗн тесен чунтан шанатӑн:
Ҫынна пур ӑпӑр-тапӑр ман
Пӑхтарӗ ӑшӑ куҫпалан,
Кайран та тишкӗрмӗҫ мӑнаҫлӑн,
Пит кулмӗҫ эп сӑвӑмсенче
Суйма пӗлни-пӗлменнинчен.

## XXX

Анчах эсир, шуйттан салатнӑ
Библиотекӑн томӗсем,
Пур рифмӑҫа асап кӑтартнӑ
Ҫап-ҫутӑ, капӑр альбомсем,
Эсир, Толстой савса сӑрланӑ
Е Баратынский сӑвӑланӑ
Хут листисем, сире часрах
Аҫа ҫапса ҫунтартӑрах!
Мана пӗр-пӗр мухтавлӑ дама
Хӑй альбомне ҫырма сӗнсен—
Эп йӑлт чӗтретӗп ҫиленсе,

Чун тĕпĕнче ман эпиграмма
Йăшăлтатма пуçлать вара,
Эс пур—çыр мадригал мура!

XXXI

Çук, мадригал çырмасть ман Ленский
Çап-çамрăк Ольгăн альбомне;
Сив вичкĕнлĕхпе мар çиçет-çке,
Савса çырать вăл савнине.
Мĕн те пулин илтет, сăнать-и
Савни пирки—çавна çырать те.
Юхать вара, çырма пулса,
Элеги, чăнлăхпа тулса.
Эс çавнашкал, вĕри Языков,
Чĕрӳ хавхаланса çитсен,
Такам çинчен те кĕвĕлен:
Паха элегийӳсем сыхă
Упранĕç те—пур шăпуна
Пĕлтерĕç малашне хăвна.

XXXII

Анчах шăп пул! Илтетни? Критик
Элегин чухăн пуçтумне
Хывма хушать, хаяр вăл пит те,
Пур пирĕн рифмăçăсене
Çухрать: «пăрахăр макăрмашкăн,
*Пулни-иртнишĕн* хурланмашкăн,
Йăлăхтарать пĕр япала,
Тăрантрĕ, юрлăр урăхла!»
— Чăнне калатăн; эс трагеди,
Комеди е сатира, тен,
Çырмашкăн халь пире сĕнен,
Пур вилĕ шухăша чĕртетĕн:
Çапла-и, тусăм?—«Çук. Ăçта!
Çырмасăр ода, господа,

XXXIII

«Хăватлă çулсенчи пек çырăр,
Авал тапратнă йĕркепе...»

— Мухтавлă ода çеç! Е, пырĕ,
Мĕскер эс, тусăм?—пурте пĕр.
Асту, мĕн тенĕччĕ сатирик!
Вăл тăрăхланă чее лирик
Салхуллă рифмăçăсенчен
Чăнах та лайăхрах-и мĕн?—
«Анчах элеги тансăр, катăк,
Ун пуш тĕллевĕ мĕскĕнле;
А одăн пит паха тĕллев,
Таса...»—Кунта кăшт тавлашма та
Пулатчĕ пуль те, лăпланар:
Ик ĕмĕре вăрçтарас мар.

## XXXIV

Владимир, ирĕклĕх кун-çулĕ
Пирки шутланă хушăран,
Тен, ода çырĕччĕ те пулĕ,
Анчах та Ольга вуламан.
Хăш сăвăç, савнипе ларуçăн,
Хăй сăввине вуланă уççăн?
Çут тĕнчере унтан хакли
Çук, теççĕ, çыракан валли.
Чăн та телейлĕ çын: хĕр-тусшăн
Çунатланса çырнисене
Çав хӳхĕм пикене хăйнех
Вулать-çке-ха вăл куçма-куçăн!
Телейлĕ те... пикин ун чух,
Тен, сăвă шухăшĕ те çук.

## XXXV

Мана илсен — ялта пурнатăп,
Хам ватă няньăна анчах
Сăвва эп вуласа паратăп,
Ман тусăм вăл ачаранпах.
Тата, апат çикелесессĕн,
Пускилĕм аташса кĕрсессĕн—
Лартап та—тинкине илеп
Пĕр-пĕр трагедийĕмпеле.

Е эп (кунта вара кулмастăп)
Хам кӳлĕн хĕррипе утса
Çӳреп те, рифмăпа супса,
Қăвакалсем шуйхаштаратăп:
Вĕсем, сăвва кăшт тăнласан,
Вĕçсе каяççĕ çырантан.

## XXXVI. XXXVII

Епле Онегин? Қу—тĕлнех-ха!
Чăтсамăрччĕ, тăванăмсем:
Қуллен-кунхи ун ĕçхĕлне халь
Сире эп тĕплĕн пĕлтерем.
Онегин питĕ лăпкăланнă;
Улт сехетрех çулла вăраннă;
Вара çӳхе тум вĕççĕнех
Уттарнă сулхăн шыв хĕрне;
Геллеспонт урлă ишсе каçнă
Поэт пек — çав çырмапала
Вăл ишнĕ те калла-малла,
Хăй кофине ĕçмешкĕн ларнă,
Начар журнал пăхкаласа,
Вара тумланнă...

## XXXVIII. XXXIX

Тăраниччен çыврать вăл тутлă,
Вулать е уçăлса çӳрет;
Хутран çап-çамрăк, хура куçлă
Хĕре вăл чуптуса илет;
Юланутпа вăрманăн-уйăн
Қустаркалать; апачĕ унăн
Сĕткенлĕ, умĕнче—эрех;
Никам та çук, вăл пĕчченех:
Ак халь Онегинăн тивлечĕ;
Çав пурнăçпа кунсеренех,
Çу иртнине сисмесĕрех,
Пĕр шухăшсăр вăл рехетленчĕ,
Хула шавне, тусне-йышне—
Йăлтах вăл манчĕ ун чухне.

XL

Анчах пĕлетпĕр-çке мĕнпурĕ:
Çак пирĕн çурçĕрти çулла—
Кăнтăр хĕлне карикатура:
Ăна кăшт çеç курса юлан.
Çанталăк кĕрхилле сывларĕ,
Хĕвел сайра пăха пуçларĕ,
Кунсем кĕскелчĕç, вăрмансен
Сархайнă сулхăн каррисем
Салхуллăн кашласа çаралчĕç;
Хирте çăра тĕтре куран,
Хуркайăксем картан-картан
Кикаклатса ăшша ăсанчĕç:
Çĕршыв кичемленсе килет,
Ноябрь уйăхĕ çитет.

XLI

Сип-сивĕ шурăмпуç; хир сассăр:
Унта пĕтернĕ ĕçсене.
Хăй выçă амине выç кашкăр
Ертсе тухать çулсем çине;
Ăна сиссе лаша хартлатрĕ,
Хуçи кустарчĕ, хăваларĕ
Мĕнпур вăйпа ак тăвалла;
Кĕтӳç ирхи шуçăмпала
Хуса тухмасть ĕнесене те,
Кăнтăрлара шăхличпеле
Пухмасть вăл вĕсене пĕрле,
Пӳртре юрла-юрла хĕр ĕнтĕ
Кĕнчелепе çĕр кĕскетет,
Хăйăйи шăрт-шарт туса илет.

XLII

Ак шартлама хĕллен кĕрнекĕ
Хирте пуçлать кĕмĕлленме...
(Кĕтетĕн рифма эс: *чечекĕ;*
Тытсамччĕ, вулаканăм, ме!).
Çырма шăнса пăрланчĕ, капăр
Паркет урайĕнчен яка пăр.

Ачи-пăчи, тем çитнĕ пек,
Пăра чĕреççĕ кунькkипе;
Хĕрлĕ ураллă хур сулмаклăн,
Шывра ишме шухăшласа,
Типтерлĕн пăр çине пусать,
Шăвать те йăванать, хаваслăн
Пĕрремĕш юр вĕлтĕртетет,
Çăлтăрланса çĕре ӳкет.

## XLIII

Мĕскер тăвас ялта çак тапхăр?
Çӳрес? Анчах йĕри-тавра
Çĕршыв Сатурн кукши пек такăр,
Улпут хресченĕ пек çара.
Юланутпа тухма хăтланăн,
Анчах лашу мука таканлă—
Çаклатаймасть яка пăра,
Часах ӳкме те пултарать.
Ларах пăрахăç хӳшĕ айĕн,
Вула: ак Прадт, ак Вальтер Скотт:
Кичем-им?—Тĕрĕсле расход,
Çилен, эрех ĕç, иртсе кайĕ
Çĕр майĕпен; ыран—каллах,
Çапла хĕл каçăн аванах.

## XLIV

Онегина ӳркев пусасшăн:
Чăн Чайльд Гарольд пек—ваннăран
Пăрпа шыва кĕрсе тухсассăн,
Вăл кунĕпе килте кайран;
Шутпа хисеп ăшне путать те,
Пуклак кийне ярса тытать те
Иртенпелех вăл бильярдла
Вылять пĕччен ик шарпала.
Ял каçĕ таврана сĕмлет кĕç:
Пăрахнă бильярдне, кийне,
Сĕтел лартать камин умне,
Кĕтет Евгений: акă Ленский
Çывхарчĕ виçĕ лашапа:
Часрах çиер эппин апат!

XLV

Клико французӑн е Моэтӑн
Ытарайми эреххине
Сип-сивӗ савӑтпа поэтшӑн
Лартаҫҫӗ ак сӗтел ҫине.
Вӑл Ипокрена ҫӑлӗ евӗр;
Вӑл, кӑпӑк кӑларса, тем те пӗр
Манерлӗ чашкӑрнӑ чухне
Эп юлашки укҫамсене
Параттӑмччӗ, ҫынран юлмасӑр.
Аса илетри, тусӑмсем?
Вӑл ялтӑрса куҫ пӑвнӑҫем
Алхаснисем те пулман мар-тӑр,
Мӗн чухлӗ вӑл кӑларнӑ шӳт,
Хаваслӑх, сӑвӑ, тавлашу!

XLVI

Анчах ун кӑпӑкӗ халь манӑн
Вар-хырӑма пит юрамасть;
Эп ӗнтӗ, хам лӑпланнӑ майӑн,
*Бордо* пуҫларӑм юратма.
*Аи* эп урӑх ӗҫейместӗп,
*Аи* вӑл еркӗн хӗр пек, тетӗп:
Хитре те, ҫепӗҫ те, анчах
Йӑр-япӑшрах, ҫӑмӑлттайрах...
А эс, *Бордо*, чӑн-чӑн туспа пӗр:
Инкек е терт, е хурлӑх сан —
Кирек ӑҫта, кирек хӑҫан
Тус-ҫын вӑл пулӑшмашкӑн хатӗр
Туспа вара эс пуҫ ан ус.
Сывпултӑрах *Бордо* — чӑн тус!

XLVII

Вут сӳннӗ; кӑшт кӑна, ҫӳхенӗн
Кӗлленнӗ ылттӑн шӗл кӑвар;
Аран палӑракан сӗвемӗн
Пӑс явӑнать; вӗриех мар
Камин сывлать кӑшт. Икӗ чӗлӗм

Мăръенелле яраççĕ тĕтĕм.
Сĕтел çинче курка чашлать.
Хуллен тĕттĕмлене пуçлать...
(Çав вăхăта ни йыт ни кашкăр,
Тесе каланă; мĕншĕнне
Пĕлместĕп эп халичченех.)
Эп питĕ юратап çав тапхăр
Туссемпелен курка йăтма,
Ана-кăна пакăлтатма.

## XLVIII

«Ну, кÿршĕсем мĕнле? Татьяна?
Мĕнле сан Ольга, йăрăскер?»
— Тултар-ха çур стакан, тăванăм...
Çитет... Кил-йышĕпех шĕкĕр;
Сана салам каласа ячĕç.
Ах, тусăм, халь епле хăпарчĕç
Ольгин хулпуççисем, кăкри!
А чунĕ ун!.. Пĕрре юри
Кайса курар-ха, савăнтарăн;
Хăвах шутла-ха эс ара:
Пĕр-иккĕ пытăн та, кайран
Тек сăмсуна та кăтартмастăн,
Чим-ха... Тăмсай-мĕн эп! Сана
Чĕнеççĕ-çке шăматкуна!—

## XLIX

«Мана?»—Вара, ун чух Татьянăн
Ят кунĕ. Оленькапалан
Ват амăш хушрĕç йыхăрмашкăн,
Сăлтав çуках юлмашкăн сан.—
«Анчах унта çын йышлă пулĕ,
Таçти пур ăпăр-тапăр тулĕ...»
— Никам та çук, пĕлетĕп эп!
Кам пултăр? Хăй кил-йышĕпе...
Каятпăр, мĕн тилмĕрттеретĕн!
Ну?—«Юрĕ».—Ку аван вара!—
Çак сăмахпа вăл янк ярать
Хăй стаканне пускил пикешĕн,

Унтан Ольги çинчен пуçлать
Каллах, мĕн тăвăн: юратать!

L

Вăл савăннă. Мăшăрланмашкăн
Шут тытнă; юлнă ик эрне.
Савнипелен вăл пуç хурасшăн
Телей пуçелĕкĕ çине.
Çемьеллĕ пурнăçăн чăрмавĕ,
Асапĕ, вак-тĕвек шăв-шавĕ,
Кичемлĕхĕ...—çаксем çинчен
Шухăшламан та вăл иккен.
Эпир çав пурнăçа тиркетпĕр:
Мăшăрлану чăрмантарать,
Йăлăхтарать, ывăнтарать,
Вăл Лафонтен романĕ евĕр...
Мăнтарăн Ленский—чĕрипех
Çав пурнăçшăн çуралнă пек.

LI

Савни ăна юратнă... хăй вăл
Çапла шутланă иçмасса.
Кам ĕненет, кам, сив ăс-хакăл
Хирĕçнине лăплантарса,
Чун савнипе канать пĕр те пĕр
Çӳревçĕ ӳсĕр выртнă евĕр,
Е çепĕçрех: çурхи чечек
Сĕткенĕ ĕмнĕ лĕпĕш пек,—
Çав çын çĕр хут та пархатарлă.
Анчах кам витĕрех курать,
Кама халь тин юратура
Çук нимĕн те пуç çавăрмалăх,
Кам сивĕннĕ çак пурнăçра—
Çав питĕ мĕскĕн çын вара!

## ПИЛЛӖКМӖШ ПАЙӖ

Ан курах эс ҫак тискер
Тӗлӗке Светланӑм!
*Жуковский*

I

Ҫав ҫулхине кӗр вӑрӑм килчӗ;
Пур ҫутҫанталӑк хӗллене
Кӗте-кӗте аптрарӗ, ырчӗ,
Январӗн виҫҫӗмӗш ҫӗрне
Тин ӳкрӗ юр. Ирех тӑрайрӗ
Татьяна, кантӑкран пӑхайрӗ:
Шуралнӑ-мӗн лупас, карташ,
Чечек тӑпри, хӳме-тавраш;
Ҫӳхен шӑнса тӗрленнӗ кантӑк,
Кӗмӗлленеҫҫӗ йывӑҫсем,
Йалт-ялт сикеҫҫӗ чакаксем;
Сӑртсем хӗл ҫиттипе хупланнӑ —
Тирпейлӗ, кӑпӑш, ҫеп-ҫемҫе;
Шап-шурӑ та ҫап-ҫутӑ ҫеҫ.

II

Хӗлле!.. Хресчен ҫынни хаваслӑн
Ҫӗн ҫул хывать ҫунипелен;
Лаши, юра сиссе, вӑрахӑн
Лӑстӑртатать юрттипелен:
Ларман юра ҫурса сатуррӑн,
Пуҫтах кӳме вӗҫет маттуррӑн,

Тăлăппалан ун ямшăкки,
Вăл çыхнă хĕрлĕ пиçиххи.
Ав чупкалать ача хастаррăн —
Хăй пĕчĕк çунашки çине
Лартса çӳрет вăл йыттине;
Тăм илнĕ пӳрнине, мăнтарăн,
Пӳрни сурать, хăй шав кулать,
Ун амăш кантăкран юнать...

### III

Тен, сирĕн кăмăла пит туртмĕç
Кун евĕрлĕ картинăсем:
Ку — ял тавраш, хисепсĕр пурнăç
Нумаях мар унта илем.
Вĕри хавхалануллă тепĕр
Поэт ӳкернĕччĕ, пĕлетĕр,
Пĕрремĕш юрпала хĕллен
Мĕнпур пахалăхне хитрен:
Шанатăп эп — сире вăл çаврĕ,
Уллах çуна юрттарнине
Кӳртсе хĕрӳллĕ сăввине;
Анчах халь кĕрешесшĕн мар эп
Ни унпалан, ни санпалан,
Финн пикине кăмăллакан!

### IV

Татьяна — вырăс чунхаваллă,
Хăй те пĕлмесĕр мĕншĕнне —
Юратнă сивĕ, шартламаллă,
Илемлĕ вырăс çĕр хĕлне;
Юратнă çунана; шăн пасăн
Йăлтăрккине, хĕвел ансассăн
Кĕрен курăнакан юра;
Юратнă кĕшерннин хура
Каçĕсене. Вĕсем уянă
Авалхилле çав эрнене:
Хăрхăмĕсем, пикисене
Телей сунса, тек юмăç янă,
Шав курăннă çар çыннисем.
Вĕсен валли, инçе çулсем.

## V

Татьяна шаннă хура халăх
Шанан халлап-тĕлĕксене,
Ҫартпа пăхса е уйăх тăрăх
Малашлăха пĕлессине.
Вăл тĕрлĕ сăнава ĕненнĕ;
Пур япала та, тем пĕлтернĕн,
Хускатнă унăн шухăшне,
Пăшăрхантарнă чĕрине.
Ҫушак мăрăлтатса çусассăн
Хăй кăмаки çинче питне,
Вара паллах: хăна кĕтме
Пуçлать пике. Е вăл курсассăн
Сасартăк пĕлĕт тӳпинче
Ҫĕн уйăх сулахай енче —

## VI

Вара чĕтренĕ те шуралнă.
Сĕм пĕлĕт тăрăх ярăнса
Ҫут çăлтăр аннă чух, Татьяна
Именчĕклĕн пăшăлтатса,
Ăна хăй шухăшне пĕлтернĕ:
Ĕмĕтленни чăн пултăр! — тенĕ
Часрах вăл çăлтăр сӳниччен.
Утса пыруçăн, çул çинче
Хура манах вăл тĕлпулсассăн
Е, ун çулне пӳлсе, таçтан
Мулкач сиккелесе каçсан —
Вара пĕлмен хĕр ним тумашкăн,
Тем пуласса вăл сиснĕ пек
Ҫĕтсех тăнă пĕр-пĕр инкек.

## VII

Тискер хăрушлăха та курнă
Илемлĕн вăл хăй ăшĕнче:
Ҫапла кăшт хирĕçлевлĕ тунă
Хăех пире çак çут тĕнче.
Ҫветки çывхарчĕ. Акă савнăç!
Хĕрсем яраççĕ ĕнтĕ юмăç,

Шел мар-ха ним те çамрăка,
Ун кунĕ-çулĕ сарлака,
Çап-çутă та вĕçĕ-хĕррисĕр;
Ватсупнă та, йăлт çухатса,
Пăхать халь куçлăх тăхăнса —
Курасшăн шăпине ун витĕр:
Пурне те шанчăкĕ иккен
Суять ача чĕлхипелен.

VIII

Татьяна халь пăхса тинкернĕ
Шăратнă пыл-карас çине:
Карасĕ хӳхĕм эрешленнĕ,
Темскер вăл пĕлтерессĕнех;
Шыв янă тиркĕрен йĕркеллĕн
Тухаççĕ çĕрĕсем пĕрерĕн;
Ак тухрĕ çĕрĕ пикене
Авалхилле такмак тĕлне:
*«Мужикĕсем унта мĕнпурĕ*
*Пуян-мĕн, ылтăн-кĕмĕлне*
*Кĕреçепе тиемелле;*
*Кама юрлатпăр—çав ыр курĕ»*.
Анчах ку кĕвĕ — хурлăха;
Хĕре *Кушак юрри* паха.

IX

Уяр та сивĕ каç; тем чухлĕ
Илемлĕ çăлтăр тĕнчене
Мухтаççĕ шăппăн, килĕшӳллĕ...
Татьяна тухрĕ карташне
Кĕпе вĕççĕн кăна; ак тĕкĕр
Тытать çут уйăх çинелле хĕр:
Хурланчăк уйăх пĕр-пĕччен
Чĕтрет ун тĕкĕрĕ çинче.
Чим... юр чăрккать... Иртен-çӳрен-тĕр.
Чĕвен тăрса хĕр ыткăнать,
Ун патнелле чупса пырать,
Сасси шăхличĕ сассипе пĕр:
«Мĕн ятлă эсĕр?» Леш пăхать:
Эп — Агафон, тесе утать.

## X

Ват няня сĕннипе Татьяна
Сĕм тĕттĕм мунчана çĕрле
Ик çын валли апат ларттарнă
Тем ăрăмлас ĕмĕтпеле;
Анчах сасартăк вăл хăранă...
Шиклентĕм хам та эп: Светлана
Аса килет; юрать эппин...
Ăрăмлаймастпăр пуль халь тин.
Татьяна салтрĕ акă пурçăн
Пиçиххине, хывать тумне,
Выртать хăй тӳшекки çине;
Çемçе минтер айĕнче унăн
Чечен хĕр тĕкĕрĕ выртать.
Тӳлек. Татьяна çывăрать.

## XI

Тĕлĕнмелле тĕлĕк курать вăл:
Шап-шурă юрлă ĕшнере
Пĕччен çиех утса пырать вăл,
Йĕри-тавра салху тĕтре;
Ķĕртсем хушшипелен сĕм хумлă
Çырма юхса выртать ун умĕн,
Шавлать, кăпăкланать хиврен,
Хĕлле те вăл шăнман иккен;
Шыв урлă çип-çинçе, тĕрексĕр
Пăрланнă икĕ вĕрлĕк çех,
Пуссан хуçăлмалла кĕçех;
Татьяна, ним тума пĕлмесĕр,
Тăп чарăнчĕ çыран çинче,
Сиксе юхан шыв хĕрринче.

## XII

Хĕр хытă кӳренет: çул картлă,
Уйрăлмаллах пек такамран.
Ķам та пулин паринччĕ алă
Ăна халь тепĕр çырантан.
Анчах сасартăк кĕрт хускалчĕ,
Ķам-ха ун айĕнчен хăпарчĕ?

Упа; хӑй пысӑк, ҫӑмламас.
Татьяна — *ах!* леш — улама,
Унтан упи ак тӑсрӗ вичкӗн
Чӗрнеллӗ аллине; хӗр ман,
Чӗтрен пӳрнисемпе аран
Тыткаласа, шыв урлӑ шиклӗн
Каҫайрӗ, утрӗ, пӑхӑсӑн —
Упа ута парать хыҫран.

XIII

Хӗр, ҫаврӑнса пӑхма хӑймасӑр,
Васкать мӗнпур вӑйӗпелен;
Анчах нимпе те тараймасть хӗр
Ҫав тӑмаланчӑк лакейрен;
Мекеҫленет упа, масасӑр;
Умра вӑрман; хырсем пӗр сассӑр,
Салхуллӑ тураттисене
Хускатаймаҫҫӗ — вӗсене
Юр йывӑрлатнӑ; ҫара хурӑн,
Ҫӑка, йӗлме хушшипеле
Ҫут уйӑх-ҫӑлтӑр ҫиҫкелет.
Ҫул ҫук: вак йывӑҫ тӗм — мӗнпурӗ
Курнать пӗр тикӗс те шап-шур,
Пурне те витнӗ тарӑн юр.

XIV

Хӗр вӑрмана; упа ун хыҫҫӑн;
Юр кӑпӑш, чӗркуҫҫи таран;
Турат майне тӑрнать е ылтӑн
Алкисене вӑл ӑнсӑртран
Хӑлхисенчен ҫӑлать ҫиленнӗн,
Е хӑлтӑ юр ӑшне йӗпеннӗ
Пушмакӗ хывӑнса юлать;
Е тутӑрне вӑл ҫухатать;
Шырасчӗ — вӑхӑт ҫук, хӑрать вӑл:
Упи ҫитсех пырать унта;
Кӗпе арки йӑтмашкӑн та
Пултараймасть хӗр, вӑтанать вӑл;
Тарать, упа шав хӑвалать:
Йӑлтах хӗр чупайми пулать.

## XV

Вăл ӳкрĕ юр ăшне; кĕç харсăр
Упа ăна тытса йăтать,
Хĕр ăнсăр пулчĕ, сывламасăр
Упа ытамĕнче пырать.
Сукмакпалан ластатрĕ лешĕ;
Ак йывăç хушшинче пĕр хӳшĕ;
Йĕри-тавра тӳлек; мĕнпур
Енчен хӳшше хуплană юр,
Ялтрать пĕр çутă кантăк куçĕ;
А хӳшĕре шăв-шав, мĕн ку?
Упа калать: *кунти ман кум,*
*Кĕрсе ăшăнса тух пăртакçĕ!*
Пăлтăрнелле йăтса кĕрет,
Алăк умне хурать хĕре.

## XVI

Тăна кĕрет, пăхать Татьяна:
Упа тек çук; хăй — пăлтăрта;
Кăшкăрашу, чăнк-чанк стаканĕ,
Пумилккери пекех шалта.
Ним уйрăм уççине пĕлмесĕр,
Пĕр хушăкран пăхса илет хĕр,
Мĕскер курать!..— Сĕтел тавра
Темчуль элес-мелес ларать;
Пĕри йыт пуçлă, мăйракаллă,
Тепри пуçĕпелен — автан,
Теприн сухалĕ — качакан;
Ав çын шăмми, хăй пит мăнаçлă,
Кĕске хӳреллĕ карлик, ак —
Çурма-тăрна, çурма-кушак.

## XVII

Тата тискер, тата тем майлă:
Ак эрешмен утланнă рак,
Ак хур мăйлă, хĕрлĕ калпаклă
Шăм пуç хăйне хăй çавăрать,
Ак çăтăл-çатăл çил арманĕ,
Çунат çапса вăл ташша янă:

Эшкер çухрать, шăхрать, кулать,
Тăпăртатать, юрлать, улать!
Анчах мĕн шухăшлать Татьяна?
Çав йыш çинче вăл хăй саван,
Хăйне хăратакан — çак ман
Романăн геройне паллană!
Унта Онегин, ав, ларать,
Хăй вăрттăн алăкран пăхать.

### XVIII

Вăл хушрĕ: пурте тăрăшаççĕ;
Вăл ĕçрĕ: пĕтĕм йыш ĕçет.
Вăл кулчĕ: йăлт ахăлтатаççĕ;
Куç айĕн пăхрĕ: йыш чĕнмест.
Паллах, хуçи кунта — Евгений,
Халь Таня ĕнтĕ пит шикленмĕ,
Авантарах курмашкăн ак
Вăл уçрĕ алăкне пăртак...
Сасартăк çил вĕрчĕ, тапратрĕ
Каçхи çутта вăл сÿнтерме;
Лешсем пуçларĕç шикленме;
Онегин куçĕ ялтăртатрĕ;
Вăл тăчĕ; пĕтĕм йыш тăрать:
Пăлтăралла вăл уттарать.

### XIX

Сехри хăпать хĕрĕн; тарасшăн
Татьяна, хăтланать чупма;
Анчах май çук, вăл кăшкăрасшăн —
Нимпе те ун сасси тухмасть;
Ак тĕртрĕ алăка Евгений:
Леш тамăкри ăçтиçуксенĕн
Куçне хĕр курăнчĕ; лах-лах
Кулса ярать эшкер; йăлтах:
Куç-пуç, чĕрне, лапсак хÿре те,
Тăсмак сăмса, асав шăлсем,
Сухал, юнланнă чĕлхесем,
Мăйракасем те, шăм пÿрне те —
Йăлтах хĕр çинелле тĕллет,
Йăлт кăшкăрать: ку манăн! — тет.

## XX

Евгений *мин!* терĕ хаярран,
Лешсем çухалчĕç йăлт куçран;
Тăрса юлайрĕ хĕр мăнтарăн
Сив тĕттĕмре арçынпалан.
Хуллен Татьянăна Онегин
Пĕр кĕтессе кӳртет, тирпейлĕн
Хурать тĕрексĕр сак çине,
Хăй пĕшкĕнет вăл ун çумне.
Сасартăк Ольга килсе кĕчĕ,
Ун хыççăн — Ленский; йăл та ял
Çуталчĕ тем; Онегин ал
Çĕклерĕ, куçĕ çиççе илчĕ,
Чĕнмен хăнасене ятлать:
Татьяна вилнĕ пек выртать.

## XXI

Тав-шав ӳсет: кĕç вăрăм çĕçĕ
Тытать Евгений, çавăнтах
Йăванчĕ Ленский; сĕм сĕмленчĕ;
Пĕри ак кăшкăрать шарах...
Сасартăк хӳшĕ сулкаланчĕ...
Татьяна шарт сиксе вăранчĕ...
Пăхать: çап-çутă пӳлĕмре,
Шăн кантăк витĕр кĕп-кĕрен
Ӳкет çĕн шуçăм илĕм-тилĕм;
Ак уçрĕç алăк. Чĕкеçрен
Çăмăлтараххăн, çурçĕр ен
Авроринчен те хĕрлĕ питлĕн
Ольги вĕçсе килсе кĕрет:
«Қама эс куртăн тĕлĕкре?»

## XXII

Татьяна, йăмăкне пăхмасăр,
Пĕр кĕнеке тытса выртать;
Вăрахăн, нимĕн шарламасăр,
Листисене уçса хупать.
Кĕнекинче пулман ни сăвăç
Ытарайми тĕрленĕ сăвă,

Ни ăслă чăнлăх, ни картин;
Анчах мухтавлă Скотт, Расин,
Виргилий, Байрон е Сенека,
Е Модăсен Журналĕ те
Çынна апла туртман-и, тен:
Ку пулнă-мĕн Мартын Задека —
Халдейĕн аслă ăрăмçи,
Çĕн юмăç, тĕлĕк чухлавçи.

XXIII

Çав чаплă кĕнеке çакланнă
Иртен-çӳрен пĕр купсаран:
Виç тенкĕ çурăлла, саланнă
*Мальвинăпа* пĕрле, вара
Купса ăна сутса хăварнă;
Çине Татьяна амăш панă
Ăна-мĕн Мармонтелĕнне
Кивелнĕ виççĕмĕш томне,
Грамматика, ик Петриада,
Пĕр путсĕр юптару пуххи.
Мартын Задека чи пахи
Халь Таняшăн: пур хурлăха та
Сирсе яма вăл пултарать,
Ялан унпа пĕрлех çыврать.

XXIV

Хĕре пăшăрхантарчĕ тĕлĕк.
Ăна вăл чухлаймасть нимле:
Кун пеккине курманччĕ ĕлĕк,
Чăн тупсăмне пĕлес килет.
Тупмаллине пăхать Татьяна,
Алфавит йĕркипе кăтартнă:
Каçма, ката, çырма, çăхан,
Упа, уçланкă, утаман
Тата ытти те. Çук, Задека
Лăплантармасть ăна; анчах
Хăрушă тĕлĕкĕн, паллах,
Нумай пулас инкек-синкекĕ.
Кайран хĕр темиçе кунччен
Шав шухăшларĕ ун çинчен.

## XXV

Анчах та ак праçник çывхарчĕ:
Хĕрелнĕ шуçăм тĕнчене
Хĕвелпеле пĕрлех кăларчĕ
Хаваслă менелник кунне.
Ирех пур Ларина кил-çурчĕ
Кӳрши-аршипелен чăп тулчĕ;
Çемьи-çемьипелен çынсем,
Кӳми, çуни, кибиткисем.
Прихожăйра тĕрткелешеççĕ;
Гостинăйра чăп-чап хĕрсем,
Шăлт-шалт кĕле, лăй-лай йытсем
Шăв-шав; кулаççĕ, хĕстереççĕ;
Çухраççĕ кăкăр амăшсем,
Йĕреççĕ пĕчĕк ачисем.

## XXVI

Мăнттай арăмĕпе ав çитнĕ
Мăн хырăм Пустяков; унтан
Гвоздин — çаралнă, выçлăх витнĕ
Мужиксемпе пуянакан.
Скотининсем — шуралнă мăшăр —
Тем чухлĕ ачипе: пĕр вăтăр
Çултан ик çулхине çити;
Ав Петушков — уес каччи,
Мана тăван тивен Буянов —
Сăмсаллă картуспа, тĕк çех!
(Эсир ялан паллан пек),
Отставкăри советник Флянов —
Элекçĕ, взяточник, пыран:
Тăраннине пĕлмест нихçан.

## XXVII

Ак çитрĕ Харликов Панфилĕн
Кил-йышĕпе мĕсье Трике;
Тин çеç вăл Тамбовран, пит вичкĕн,
Хăй куçлăхпа, сар парикпе.
Трике француз йăлине тытнă,
Хĕре куплет вăл чиксе пынă,

Ăна юрлатчĕç ачасем:
«*Вăранччĕ ыйхунтан, пикем!*»
Ķив юрă хушшинче усраннă
Альманахра-мĕн çав куплет;
Трике, тĕшмĕртекен поэт,
Ăна чĕртсе тĕнче кăтартнă:
Хăйсах **вăл,** *Нина* выранне,
*Татьяна* лартнă сăввине.

## XXVIII

Ак çитĕннĕ хĕрсен кумирĕ,
Амăшĕсен чун ырлăхĕ —
Посадăн ротнăй командирĕ
Ķилсе çитет — сатур йĕкĕт;
Ķĕрейрĕ... Ах, мĕнле хыпарĕ!
Çар музыки, тесе каларĕ!
Полковник хăй ярса парать.
Мĕнле хаваслăх: бал пулать!
Хĕрсем халех сиккелешеççĕ;
Анчах лартаççĕ ак апат.
Пур йыш сĕтел патне тапать.
Татьянăна сырса илеççĕ
Тем чухлĕ тантăш; хирĕçе —
Арçын ларса тухать кĕçех.

## XXIX

Шăп пулчĕç, шарламасть пĕри те;
Çăвар кавлет; мĕнпур енчен
Шăлтăр та шалтăр чашкă-тиркĕ,
Тата черкке янрать çинçен.
Анчах часах пуçлать кăшт-каштăн
Хăна-вĕрле шуйхашăнмашкăн.
Никам та итлемест; çухрать,
Ķулать, йăслать йыш, тавлашать.
Яр уçрĕç алăк. Ленский кĕчĕ,
Унтан — Онегин. «Пӳлĕхçĕ!»
Тет карчăк: «çитрĕç, килчĕçĕ!»
Хĕснеççĕ хăнасем; тĕртеççĕ
Тенкеллине, чашкисене,
Чĕнсе лартаççĕ туссене.

## XXX

Шăп Таняпа тĕлме-тĕл лартрĕç;
Хĕр шурчĕ ирхи уйăх пек,
Йĕрлен пăлан пек сăрăлтатрĕ,
Хуралчĕ куçĕ пĕтĕмпех.
Ăшне кăвар ăшалантарчĕ;
Çӳçенчĕ; кăмăлĕ пăтранчĕ;
Вăл икĕ тусăн саламне
Илтмест, куççулĕн тумламне
Аран тытса чарать; вăл хатĕр
Тăнран каймашкăн çавăнтах;
Анчах ăсĕпелен çапах
Хăйне çĕнтерчĕ: шăлĕ витĕр
Каларĕ те пĕр-ик сăмах —
Ларса ирттерчĕ аванах.

## XXXI

Хĕрсем макăрнине, сасартăк
Тăнран кайса ӳкнисене
Евгений халь ĕнтĕ картман та:
Пайтах вăл курнă вĕсене.
Чудак-çын: ĕçкĕ пуçланайнă —
Çиленчĕ те. Анчах, Татьяна
Çунса чĕтренине курсан,
Онегин хытă тарăхса
Кӳренчĕ; сиввĕн тупа турĕ
Вăл Ленские халь уртарма,
Чĕнсе килнишĕн таварма.
Унччен пит шеп карикатура
Вăл ӳкерет хăй ăшĕнче,
Мăшкăлласа хăнасенчен.

## XXXII

Паллах, Евгений çеç курманччĕ
Хĕр именсе шуралнине;
Анчах ун чух хуплу пăхтарчĕ,
Сăмахлаттарчĕ çынсене:
Тăвар ытлашширех каланă;
Цимлянскине те сăмалаллă
Бутылкăпа, шаркку çисен,

Кӳреҫҫӗ ак бламанжеччен;
Унпа пӗрлех килеҫҫӗ вӑрӑм,
Ҫинҫе те хӳхӗм черккесем —
Сан пилӗкӳ евӗрлисем,
Зизи — ман чунӑм, ҫамрӑк юррӑм,
Ман юрату курки пек хӗр,
Ялан мана ӳсӗртнӗскер!

## XXXIII

Шаплатрӗ пӑкӑ; ҫут эрехӗ
Кӑпӑкланать те чашкӑрать.
Трике тӑрать чипертереххӗн,
Тахҫантанпах вӑл тӑрӑшать
Часрах хӑй куплетне юрласшӑн.
Ҫынсем шӑп пулчӗҫ тӑнламашкӑн.
Татьяна вилнӗ пек; Трике,
Ун ячӗпе хут тытнӑскер,
Юрласа ячӗ пӑсӑк саслӑн.
Пӗтерчӗ — пурте ал ҫупать;
Халь хӗрӗн ҫӑкӑнас пулать.
Анчах поэчӗ, хӑть пит аслӑ,
Ҫапах хӑй чи малтан ӗҫет,
Ӗҫет те тыттарать куплет.

## XXXIV

Салам калаҫҫӗ пӗчченшерӗн;
Татьяна тав тӑвать унтах.
Евгение черет ҫитсессӗн—
Хӗре хӗрхенчӗ вӑл чунтан:
Именнӗ, ывӑннӑ мӑнтарӑн,
Хутне кӗмесӗр пултараймӑн.
Онегин шӑппӑн тайӑлчӗ,
Анчах ун куҫӗ курӑнчӗ
Тӗлӗнмелле ачаш та уҫӑ.
Те чӑн ҫемҫелчӗ ун чӗри,
Те кӑшт вылярӗ вӑл юри,
Епле пулсан та — унӑн куҫӗ
Пит ӑшшӑн пӑхрӗ хӗр ҫине,
Вӑл чӗртрӗ Танян чӗрине.

## XXXV

Кĕмсĕртетет пукан-тенкелĕ:
Эшкер гостиная куçать.
Çапла пылхурчĕсен эртелĕ
Вĕллесенчен вĕçсе тухать.
Аран сывлать пускил улпучĕ:
Праçник апачĕ тутлă пулчĕ.
Пăшăлтатаççĕ хĕрĕсем,
Камин тавра — амăшĕсем;
Ак симĕс сĕтелсем уçаççĕ:
Картла çапма хавассене
Бостонĕ, ломбĕрĕ чĕнет
Е вист (ăна çаплах мухтаççĕ),
Анчах мĕнпурĕ пĕр иккен;
Пурне те тунă кичемрен.

## XXXVI

Ак сакăр вăйă вист вылярĕç,
Çав майăн сакăр хут тата
Вырăнсене те улăштарчĕç.
Кӳреççĕ чей. Эп юратап,
Мĕн вăхăтне чухлас тесессĕн,
Чейрен е апатран пĕлмешкĕн.
Мĕне пире ялта сехет?
Вар-хырăм — тĕрĕсрех Брегет.
Кунта эп скобкăра каласшăн:
Пăкăпалан эрех çинчен,
Апат çинчен сăввăмсенче
Эп сан пекех пуплеп час-чассăн,
Хăватлă, вилĕмсĕр Омир,
Эс — вăтăр ĕмĕршĕн кумир!

## XXXVII. XXXVIII. XXXIX

Ĕçме пуçларĕç ĕнтĕ чей те:
Хĕрсем курка тытайнăччĕ—
Тăсмак залран фагот та флейта
Янăрани ак илтĕнчĕ.
Ак Петушков — илемлĕ каччă—
Савăннипе лартсах хăварчĕ

Ром янӑ туп-тулли чейне,
Вӑл Ольгӑна пырса чӗнет;
Татьяна — Ленскийпе; Тамбовӑн
Поэчӗ Харликов хӗрне
Тытать — кӑшт ватӑрахскерне;
Буяновпа хай Пустякова:
Вӗҫсе тухаҫҫӗ те калкал—
Ҫиҫсе кӑна тӑрать ак бал.

XL

Роман пуҫламӑшӗнче манӑн
(Пӑхсам пӗрремӗш тетрадьне)
Альбани евӗр кӑтартмашкӑн
Шут пурччӗ Питӗрӗн балне;
Анчах, пуш ӗмӗт вӗҫнӗҫемӗн,
Унта хам пӗлнӗ дамӑсенӗн
Урисемпе тӗллентӗм эп.
Эй, урисем! Ҫитет пуль теп
Тек сирӗн хыҫҫӑн аташмашкӑн!
Кун-ҫул иртӳҫӗн — ӑслӑрах
Пулмашкӑн вӑхӑт: сӑвӑра,
Ӗҫре те кирлӗ юсанмашкӑн:
Ҫак пиллӗкмӗш тетрадӗм ман
Ӑн пӑрӑнтӑр эппин ҫултан.

XLI

Яш пурнӑҫ ҫавраҫилӗ майлӑн —
Пӗр шухӑшсӑр, ансат кӑна
Ҫавӑрӑнать вальс ҫилӗ шавлӑн;
Вӗлт те вӗлт мӑшӑр ыткӑнать.
Ҫывхарчӗ тавӑру саманчӗ:
Онегин Ольга патне пычӗ;
Хӑй ӑшӗнче кулса кӑна,
Вӑр-вар вӑл ҫавӑрать ӑна;
Унтан тенкел ҫине лартать кӑшт,
Вӑл-ку ҫинчен калаҫкалать,
Пӗр-икӗ минутран каллах
Унпа ҫавӑрӑнать ман тантӑш.
Ӑнтан каяҫҫӗ. Ленский ман
Хӑйне хӑй ӗненмест, курсан.

XLII

Мазурка ячĕç. Ĕлĕкрехчĕ—
Мазурка кĕмсĕртетнипе
Тем анлăш зал сиксе чĕтретчĕ,
Паркет ванатчĕ кĕлепе;
Чӳречесем тăрăлтататчĕç;
Халь апла мар: хĕрарăмла çеç
Шăватпăр сăрлă хăмапа.
Ку — хулара; ялта çапах
Сыхланă-ха мазурка хăйĕн
Пуçламĕш шухă илемне,
Унта куратăн хальччен нех
Сиккелĕшсем, кĕле те мăйăх:
Пăхмасть ял модăна куçран,
Вăл пирĕншĕн кăна — тиран.

XLIII. XLIV

Буянов, ман сатур пиччеçĕм,
Герой патне илсе пырать
Ик пикене пĕрлех: кĕç-вĕççĕн
Онегин Ольгăпа каять;
Шуса ташлать унпа алхаслăн,
Пуçне пĕксе, ăна ачашшăн
Вăл пуш сăмах пăшăлтатать
Е аллине кăшт чăмăртать;
Хĕр пичĕ кăмăллăн хĕрелнĕ;
Йăлт курчĕ Ленский: тӳсеймест,
Ниçта кайса кĕре пĕлмест;
Кӳлешӳпе вăл вĕриленнĕ,
Мазурка пĕтессе кĕтет,
Хĕре котильона чĕнет.

XLV

Анчах пымасть хĕр. Ма? Мĕн пулнă?
Ольги Онегинах кĕтет:
Ăна сăмах парса вăл хунă.
Мĕскер илтет вăл? Мĕн илтет!..
Чăнах-ши? Ҫипкерен тухайнă!

Ача кокетка пулса кайнă!
Чееленме пĕлет иккен,
Улталама вĕреннĕ, тен!
Хал çук çакна тӳсме поэтăн;
Вăрçса хĕрарăм-тавраша,
Тухать вăл, кӳлтерет лаша—
Кустарчĕ. Мăшăр пистолет та
Ик пуля çеç ун шăпине
Татма пултарĕ малашне.

## УЛТТАМĔШ ПАЙĔ

Тĕтреллĕ те кĕске кунсемлĕ çĕршывра
Вилмешкĕн хăраман патвар йăх çуралать.
*Пе·прарка.*

### I

Владимир çуккине курсассăн,
Юрать-ха, тавăртăм яша,
Тесе каллех, ташланă майăн,
Онегин кайрĕ шухăша.
Кичем вăл. Оля та аптрарĕ,
Куçпа хăй Ленскине шырарĕ,
Пĕте пĕлмен котильона
Курать вăл тĕлĕк пек кăна.
Анчах ак пĕтрĕ. Апатланчĕç.
Сараççĕ вырăн; пăлтăртан
Шăпах хĕр пӳлĕмĕ таран
Выртать хăна. Пурне те канăç,
Ăш ыйăх кирлĕ. Хăй килне
Онегин кайрĕ пĕчченех.

### II

Тӳлек. Гостинăйра хăватлăн
Харлаттарать мăн Пустяков,
Мăнттай майри те юнашар ун.
Гвоздин, Буянов, Петушков,
Кăшт чирлĕ Флянов — вырăнаçрĕç,
Пукан лартса, столовăя кĕç;

Урайёнче мёçье Трике —
Ќив калпакпа, фуфайкипе.
Хĕрсем — Ольгăпалан Татьянăн
Пÿлĕмĕсем тулли. Пĕччен
Хурланчăк уйăх çуттинче
Пĕр кантăк патĕнче мăнтарăн
Татьяна ыйхăсăр ларать,
Сĕм тĕттĕм хирелле пăхать.

## III

Евгений ăнсăртран килни те,
Савса пăхни, Ольгăпалан
Тĕлĕнмелле вăл хăтланни те—
Шутлаттарать хĕре чунтан.
Пăшăрханать, хыпса çунать хĕр,
Ăна нимпе ăнланаймасть-ха;
Кÿлештерет вăл мĕскĕне,
Сив алă унăн чĕрине
Халь чăмăртать пек, тĕпсĕр-йĕрсĕр
Çырма вырттать пек умĕнче...
«Пĕтетĕп», тет хĕр ăшĕнче:
«Анчах, антив, вăлах пĕтертĕр.
Ÿпкевĕм çук: ма ÿпкелем?
Телей кÿреймĕ вăл этем».

## IV

Чуптар-ха малалла, истори!
Пире халь çĕнĕ сăн йыхрать.
Ман Ленский ялĕ — Ќрасногорье,
Унтан пĕр пилĕк çухрăмра
Пурнать, хальччен тĕрĕс-тĕкеллĕн,
Чăн-чăн философ пек тÿлеккĕн,
Зарецкий — ĕлĕкхи куштан,
Карт шайкисемшĕн — утаман,
Пуçтахшăн — пуç, трахтир трибунĕ;
Халь — ырă, вашават хуçа,
Ќил-йышлăскер, а хăй хусах,
Аван кăна юлташ, пит кунĕ
Улпут, тÿр çын вăл шутланать:
Ха, саманамăр юсанать!

V

Яш чух çынсем ăна ырланă,
Пит йăпăлтатнă харсăртан:
Чăнах, пистолетпа шăтарнă
Туза вăл пилĕк хăлаçран;
Ҫалас пулать, чап илнĕ пулнă
Вăл вăрçăра та-мĕн: хăюллăн
Ҫалмăк лаши çинчен пĕрре
Йăваннă пылчăклă çĕре,
Вил-ӳсĕрскер, вара çакланнă
Француз патне: йӳн мар парни!
Ҫĕн Регул, тӳрĕлĕх турри,
Тепре лекме те хатĕр халь вăл—
Виçшер бутылка ирсерен
Кивçен ĕçесшĕн Верирен.

VI

Яш чух йĕкĕлтесе алхаснă,
Пуç çавăрнă вăл ухмаха,
Ăсла та ухмаха хăварнă—
Е пат тӳрех, е сăмах-ай;
Чăн, хăйшĕн те ун хăш-пĕр ĕçĕ
Сиенсĕрех иртместчĕ, теççĕ;
Хăй те вăл, çăмăлçах енне,
Ҫакланкаланă хăш чухне.
Вăл пĕлнĕ тавлашма хаваслăн,
Мукан е çивчĕн калаçма,
Хăш чух юри чĕлхе çыртма,
Хăш чух юри шăрчăкланмашкăн,
Туспа туса хирĕçтерме,
Барьер патне те çитерме,

VII

Е вĕсене çураçтармашкăн,
Пĕрле çиме ирхи апат,
Ҫайран тĕртсе намăслатмашкăн
Хавас шӳтпе е суяпа.
Анчах йăлт улшăнать! Маттурлăх
(Вăл юрату пек, тепĕр шухлăх)

Иртет яш ӗмӗр иртнӗ май.
Каларӑм эп: Зарецкий ман
Пур тӑвӑлран та хупӑрланнӑ
Акаци-ҫӗмӗртпе, пурнать
Чӑн ӑслӑ ҫын пекех — лартать
Халь купӑста, Гораций майлӑ;
Хур-кӑвакал вӑл ӗрчетет,
Ачасене хут вӗрентет.

## VIII

Вӑл ӑссӑр мар; Евгений манӑн
Сума суман ун чӗрине,
Анчах калаҫнине юратнӑ,
Ӑна-кӑна тишкернине.
Тӗлпулнӑ вӑл унпа хаваслӑн,
Ҫавӑнпалан — ирех курсассӑн
Зарецкий кӗнине — унтан
Тӗлӗнмелли пӗртте пулман.
Малтан леш ырлӑх-сывлӑх сунчӗ,
Унтан, сӑмаххине сирсе,
Онегина, шӑлне йӗрсе,
Сӑвӑҫӑран ҫыру тыттарчӗ.
Онегин чӳрече умне
Пырса вуларӗ ҫырͮне.

## IX

Ку пулнӑ кӑмӑллӑ, тирпейлӗ
*Картель* текен чӗнӳ: поэт
Сип-сиввӗн, уҫҫӑн та йӗркеллӗн
Тусне халь дуэле чӗнет.
Онегин, ытлашши пуплевсӗр,
Валт ҫаврӑнчӗ те — ҫакӑн евӗр
Хыпар кӳрекене кӗҫех:
«Ялан эп хатӗр», терӗ ҫех.
Зарецкий тӑчӗ, ӗҫ тӗвленӗн,
Килте чӑрмав нумайпала
Ларма тумарӗ малалла,
Час кайрӗ вӑл; анчах Евгений,
Хӑйпе хӑй ҫеҫ юлсан килне,
Кӑмӑлламарӗ пит хӑйне.

## X

Тĕсех те çавă: пур енчен те
Хăйне хăй вăрттăн тишкерсен,
Пайтах курать вăл айăп ĕнтĕ:
Чи малтанах — йăваш, чечен
Юратуран çапла хаяррăн
Вăл тивĕç марччĕ каç кулмашкăн.
Унтан: антив поэт тата
Айкаштăрччĕ; вунсаккăрта
Қаçармалла ăна. Евгенин,
Тусне пур чĕререн савса,
Хăйне кăтартмаллаччĕ çав
Йăла çăмхи пек мар, хĕмленнĕ
Ача пек чăркăшса та мар:
Пуласчĕ тӳрĕ, ăслă ар.

## XI

Хĕрхенмеллеччĕ ун, тискеррĕн
Шăртланас çукчĕ кашкăрла;
Вăл чармаллаччĕ яш чĕренĕн
Чăрсăрлăхне. «Анчах халь ак
Қайран пулать; самант вĕçтерчĕ...
Çитменнине — ĕçе халь ерчĕ
Ăста дуэльçĕ; вăл хаяр,
Тăхçа вăл, калаçма япшар...
Паллах: картма та кирлĕ марччĕ
Ăна, анчах пули-пулми
Пăшăлтату, ухмах кулли...»
Ак çын сăмахĕ пулса тăчĕ!
Ыр ят пружинĕ — çав туртать!
Ак мĕн çинче çĕр çаврăнать!

## XII

Сиксе вĕрен тӳсме çук çиллĕ
Поэт килте ответ кĕтет;
Ак талпаса ăста пускилĕ
Хаваслăн ответпа кĕрет.
Уяв та халь кӳлешекеншĕн!
Хăратчĕ вăл — шӳтпе çеç лешĕ

Irttересрен; пистолетран,
Пĕр те пĕр пуш сăлтавпалан,
Хăй кăкăрне ан пăртăр, тетчĕ.
Халь ĕнтĕ татăклă: ыран
Тул çутличчен вĕсен арман
Хыçне çитес пулать: çитет те
Тĕллет ик тус пĕрне-пĕри
Пĕçрен е тăнлавран юри.

XIII

Кокеткăна питрех çиленнĕн,
Кăвар пек Ленский Ольгине
Курас темерĕ дуэль умĕн;
Хĕвел çине, сехет çине
Шав пăхрĕ вăл; кайран ал сулчĕ —
Çав кӳршисем патнех кустарчĕ,
Вăл шухăшларĕ Олине
Тĕлĕнтерме, пырса килне.
Анчах пулмарĕ: леш — мăнтарăн
Поэт патне ĕлĕкхиллех
Алкум çинчен сикет тӳрех,
Çунатлă çăмăл шанчăк майлăн,
Алхаслă, шухă, хĕпĕрчĕк,
Йăлтах, йăлтах ĕлĕкхи пек.

XIV

«Мĕскершĕн каç пит час ăсантăр?»
Тет Оленьки малтан ăна.
Пăтранчĕ кайрĕ Ленский, сассăр
Усса тăрать вăл сăмсана.
Кӳлешĕвĕ çухалчĕ унăн
Çак уççăн ялтăран куç умĕн,
Çак çепĕç те таса, чечен,
Алхасакан чун умĕнче!..
Вăл киленсе пăхать: сават хĕр!
Туять вăл савнине, курать;
Вăл ĕнтĕ ӳкĕнсе çунать,
Вăл каçару ыйтмашкăн хатĕр,
Чĕтрет, чĕнме тупмасть сăмах:
Телейлĕ вăл, тен, вăл сывах...

## XV. XVI. XVII

Каллех вăл шухăшлăн, кулянăн
Ларать хăй Оли умĕнче,
Пултараймасть асăнтармашкăн
Ăна ĕнерхи кун çинчен;
Вăл шухăшлать: «хĕре хăтарăп.
Тўсеймĕп эп, çав аскăнтармăш,
Йăпăлтатса та ырласа,
Хĕр чĕрине сăхлантарсан;
Ăнманă çав хурта эп памăп
Хăртмашкăн çамрăк лилине,
Иккех ир ларнă çеçкене —
Тин çуралнăскере шантармăп».
Туссем, çаксен пĕлтерĕшĕ:
Юлташăмпа эп перĕшеп.

## XVIII

Пĕлсенччĕ вăл — мĕнле ыратнă
Татьянăн чĕринчи суран!
Е хăй пĕлнĕ пулсан Татьяна,
Пĕлмешкĕн халь вăл пултарсан:
Ыран Евгенипелен Ленский
Вилме тăрса вăрçас çынсем-çке!—
Ах, тен, хĕр юратни каллех
Пĕрлештеретчĕ ĕмĕрлĕх!
Анчах хĕр çуннине никам та,
Ăнсăртран та пулин, курман.
Онегин ним те шарламан;
Татьяна вăрттăн асапланнă;
Пĕлсессĕн няня пĕлмелле,—
Тĕшмĕртеймен-çке темĕнле.

## XIX

Каç тăршшĕпех ман Ленский тусăк;
Пĕр чĕмсĕр, пĕр хавас каллах;
Анчах кама иленнĕ Муза—
Çав тек çапла: салхуллăн ак
Ларать вăл клавикорд калассăн,
Хăй ĕнерет аккорд кас-кассăн;

Ольги çине пăхса илет:
«Телейлĕ мар-им эпĕ?»—тет.
Анчах кайма вăхăт; хĕстерчĕ
Чунне чĕр хурлăх хĕскĕчпе:
Сывпуллашусăн савнипе,
Чĕри ун çурăлас пекехчĕ.
Хĕр унăн куçĕнчен пăхать:
«Мĕн пулчĕ?»—Ним те çук.—Тухать.

XX

Килне çитсен вăл тĕрĕслерĕ
Пистолетсем, унтан калле
Пытарчĕ ешчĕке; тум хыврĕ,
Вара çурта çутипеле,
Вăл уçрĕ Шиллера, салхуллă
Чĕри ун тĕлĕрмест; пуç тулнă
Пĕр шухăшпа: çавтер умра
Хитрен вăл Ольгине курать!
Кĕнекине хупать Владимир,
Пера тытать, ун сăввисем,
Юратупа тулнăскерсем,
Юхса янраççĕ. Хыттăн, вирлĕн
Саспах вулать вăл—ӳсĕрпе
Хĕрсе вуланă Дельвиг пек.

XXI

Ун сăввисем усраннă халь те;
Манра та пурччĕ; ак вĕсем:
«Ăçта, ăçта эсир çухалтăр,
Çурхи çут ылтăн кунăмсем?
Мĕн хатĕрлет çитес кун маншăн?
Куçпа пăхса ăна кураймăн,
Сĕм тĕттĕмре ыранăм ман.
Пулин: иртеймĕн шăпаран.
Е тӳнĕп, ухă тирĕнсессĕн,
Е вăл тивмесĕрех ирти,
Пурте паха: каçхи, ирхи
Сехет çитет хăйне мехеллĕн;
Ĕç тунă кунăм та—тивлет,
Сĕм каç та тивлетпех килет!

## XXII

«Ирпе кăвакарайĕ шуçăм,
Кун ялтăртатĕ выляса.
А эп — хура çĕре, тен, куçăп
Нихçан та тек таврăнмасса;
Вăрахăнах пĕр яш поэтăн
Ятне путарĕ тарăн Летă,
Манайĕ çут тĕнче мана;
Анчах эс, сар хĕр, пырăн-а
Тăпрам çине куççуль тăкмашкăн:
Мана кăна чунтан-вартан
Вăл юрататчĕ çамрăкран,
Тесе пĕччен шухăшламашкăн?
Савнийĕм, тусăм, чунăмçăм,
Пырсам, эп — упăшку, пырсам!..»

## XXIII

Çапла вăл çырчĕ юншăх, тĕксĕм
(Хай романтизм тенĕскер,
Кунта хам эпĕ романтизм
Курмастăп та, пире мĕскер?).
Тул çутласпа вăл, ывăнсассăн,
Пуçне лăш ячĕ те йăвашшăн,
Сĕнк пулчĕ, модăри чечен
Çав *идеал* сăмах çинче:
Анчах ăна пусайрĕ ыйхă,
Тĕлĕрчĕ çеç,—кӳрши унтах
Кĕрет тӳлек кабинета,
Вăратрĕ Ленские вăл: «вăхăт
Тăмашкăн: çиччĕмĕш сехет.
Онегин, ахăрнех, кĕтет».

## XXIV

Вăл йăнăшнă: вилсе çывратчĕ
Евгенийĕ çав вăхăтра.
Тул çутăлать; автан сас пачĕ
Ирхи Венера-çăлтăра;
Онегин, çук-ха, вăранмарĕ,
Хĕвел ĕнтĕ çӳле хăпарчĕ,

Вĕлтĕртетсе йăлтăртатать
Çуран тăман; анчах выртать,
Выртать Евгений тӳп-тӳлеккĕн,
Тĕлĕк курсах çыврать иккен.
Вăранчĕ ак, юлашкинчен,
Чаршав сирсе пăхать Онегин,
Курать вăл — паçăрах иккен
Тухмашкăн вăхăт килĕнчен.

## XXV

Часрах вăл шăнкравлать. Лакейĕ—
Француз Гильо чупса кĕрет;
Халат, пушмак парать, кĕпе-йĕм
Улпут валли вăл хатĕрлет.
Васкать Онегин тумланмашкăн,
Унтах хушать пуçтаранмашкăн —
Пĕрле пыма хăй лакейне,
Пăшал-таврашĕ те илме.
Хура çуна кӳлеççĕ; ларчĕ,
Арман патне вăл кустарать.
Çитеççĕ. Лакейне часрах
*Лепаж* пистолетне йăттарчĕ,
Хăйпе чĕнет, а утсене—
Тăраттарать юман кутне.

## XXVI

Пĕве çумне таяннă Ленский
Тахçантанпах хĕрсе кĕтет;
Ялти механик хăй Зарецкий
Арман чулне тиркекелет.
Онегин каçару ыйтайрĕ
Кĕттернĕшĕн,—Зарецкий хушрĕ:
«Ăçта-ха сирĕн секундант?»
Дуэлĕн классикĕ, педант—
Вăл тĕплĕ йĕркене юратнă:
Пит шалттăм-калттăмах çынна
Вĕлерттермен вăл, чăн-чăнах
Ăсталăх мелĕпе тутарнă,
Пур авалхи йăлапала
(Кăна эпир мухтамалла).

## XXVII

«Ман секундант-и?» тет Евгений:
«Ак вăл — мĕсье Гильо, тус ман.
Пулмасть пуль, теп, хирĕçлекенĕ
Кунта ман хамăн çыннăма:
Хăй чаплă этемех пулмин те,
Паллах, ăна эп тӳрĕ çын, теп».
Зарецкий тутине çыртать.
Онегин Ленскийрен ыйтать:
«Пуçлатпăр-и?» — Пуçлар пуль, — терĕ
Владимир. Кайрĕç ак вара
Арман хыçне. Аяккарах
Зарецкипе хайхи леш *тӳрĕ*
Француз кавар туса тăрать,
А ик тăшман çĕре пăхать.

## XXVIII

Тăшман! Нумай пулать-и юншăн
Пĕр-пĕринчен уйăрăлни?
Тин мар-и ĕçĕ-хĕлĕ, пушă
Сехечĕсем, ĕçми-çими
Вĕсен пĕрлеччĕ? Халь хаяррăн,
Ик авалтан тăшман йăх майлăн,
Темле тискер тĕлĕкри пек
Вĕсем пĕрне-пĕри сивлек
Чунпа ак хатĕрлеççĕ вилĕм...
Кулса ярасчĕ-мĕн вĕсен
Аллисене юнлатиччен,
Каясчĕ туслăн, ыр пускиллĕн...
Анчах ун евĕрлĕ тăшман
Хăрать тӳсме çук намăсран.

## XXIX

Пистолетсем ак ялтăртатрĕç.
Тӳнклетрĕ шомпăл-мăлатук.
Кĕпçе ăшне пульсем вырнаçрĕç,
Шалтлатрĕ пуçласа курук.
Ак тĕксĕмреххĕн пĕрчĕ-пĕрчĕ

Тар хуранать. Шаллатна, çивчĕ
Тĕреклĕ лартнă вутчульне
Çĕкленĕ. Тункаta хыçне
Ҫайса тăрать Гильо именнĕн.
Плащне пăрахрĕ ик тăшман.
Зарецкий виçсе пачĕ ман
Шăп вăтăр икĕ утăм тĕплĕн,
Чикке тăратрĕ туссене;
Ҫашни тытать пистолетне.

## XXX

«Халь çывăхарăр».
Сиввĕн, лăпкăн—
Тĕллесе мар-ха — ик тăшман
Тăваттă ярса пусрĕ хыттăн,
Тĕреклĕн, нăк утăмпалан.
Тăватă вилĕм карчĕ! Хăйĕн
Пистолетне вара Онегин,
Шав чарăнмасăр çывхарма,
Хуллен пуçларĕ хăпартма.
Ак тепĕр пиллĕк утăмлаççĕ;
Ҫĕç, сулахай куçне хĕссе,
Тĕлле пуçларĕ Ленский те,
Анчах — Евгений персе ячĕ...
Сехечĕ çапрĕ: ӳкерет
Поэт пĕр сассăр пистолет;

## XXXI

Ҫăкри çине вăл ал хурать те
Хуллен тӳнет. Ун куçĕнче,
Хĕн мар, сив вилĕм халь куратăн.
Çапла вăрахăн ту çинчен
Хĕвелпелен çиçсе хĕлхемлĕн,
Шуса анать юр кӳммĕрккенĕн.
Онегин шанк хытса каять,
Часрах поэт патневаскать,
Пăхать, чĕнет ăна вăл... тек чĕн:
Вăл çук ĕнтĕ. Яш юрăçă
Вăхăтсăрах пуç хучĕ çав!

Тин çурӑлнӑ ирхи чечекӗн
Вӑл шанчӗ тӑвӑлпа, çут чун,
Сӑваплӑ вучӗ сӳнчӗ ун!..

## XXXII

Пӗр хускалми выртать вӑл, каннӑн,
Çамки тем шухӑша ярать.
Вӑл кӑкӑр витӗрех аманнӑ;
Сураненчен юн пӑсланать.
Самант кӑна калла чаксанччӗ—
Çак чӗрере талант тапатчӗ,
Чӗр çилӗ, шанчӑк, юрату,
Вылятчӗ пурнӑç, юмарт юн
Вӗретчӗ: халь — пушаннӑ çурт вӑл,
Шалта сӗм тӗттӗм те тӳлек;
Шӑпланнӑ вӑл ӗмӗрлӗхех.
Чӳречисем мӗнпурӗ хупӑ,
Пур сӗрнӗ. Хуçи çук. Ӑçта?—
Пӗлмеççӗ. Йӗрӗ те таçта.

## XXXIII

Пит лайӑх тӑшмана çапмашкӑн
Эпигрампа пӗр уртарса;
Кӑмӑллӑ-çке — вӑл, намӑсланнӑн,
Сӗкен мӑйракине усса,
Куçкӗскире хӑйне курсассӑн,
Палламӗш пулнине пӑхмашкӑн;
Кӑмӑллӑрах — ухмахланса:
«Ку эп!»—тесе вӑл çухӑрсан.
Тата кӑмӑллӑрах — чӗнмесӗр,
Тӳрех ун шурӑ çамкинчен
Эс тӗллесессӗн инçетрен;
Анчах чӑннипелех пӗр те пӗр
Ӑна ямашкӑн леш çӗре—
Кӑмӑллах мар пуль, теп, сире.

## XXXIV

Тӳрмен сӑмахлӑн, сивӗ куçлӑн
Е урӑх вак-тӗвекпелен,
Бутылка умӗнче ларуçӑн,

Яш тус сире кӳрентерсен,
Е — мăнкăмăллăн, çиленсессĕн,
Хăех сире вăрçа чĕнсессĕн,
Эсир персен ăна вара,
Ну, калăр: сирĕн чунăра
Мĕн евĕр сисĕм-туйăм тулĕ—
Вăл сирĕн умăрта пĕччен
Вилсе выртсассăн çĕр çинче?
Мĕн тăвăр — унăн хытнă ӳчĕ,
Эсир чунтан йыхăрнине
Илтмесĕр, ним чĕнмен чухне?

XXXV

Поэт çине пăхать Онегин,
Алли пистолетне хĕсет;
Хăй ӳкĕнет ӳкĕннĕçемĕн:
«Мĕскер тăвас? вĕлертĕм», тет.
Вĕлертĕм!.. Çав сăмах ак çапрĕ
Евгение, тĕпрен хускатрĕ.
Вăл пăрăнать, çын йыхăрать.
Зарецкий тирпейлет, хурать
Шăн ӳт-пĕве çуна çине ак;
Хăрушă мул леçет килне.
Утсем хартлатрĕç, вилене
Сиссе, тăпăртатаççĕ; кăпăк
Нӳрлет çăварлăха, кĕçех
Вĕçтерчĕç çĕмренпе пĕрех.

XXXVI

Туссем, сире çак сăвăç шел-тĕр:
Хаваслă шанчăк ешерсен,
Тĕнчешĕн çитĕнсе çитмесĕр,
Типсе хăрайĕ вăл тĕпрен!
Ăçта хĕрӳллĕ чунăн хĕмĕ,
Ăçта тасан çĕкленнĕ ĕмĕт,
Çап-çамрăк, çепĕç сисĕмсем,
Маттур, хăюллă шухăшсем?
Ăçта вăл — юрату, ăс-хакăл,
Пĕлӳ е ĕçшĕн хыпăнни,
Чыса та намăса пĕлни?

Ăçта эсир, нимрен те хаклă
Ытарайми ĕмĕлкĕсем,
Поэзин ыр тĕлĕкĕсем!

XXXVII

Çак çутă тĕнчене вăл ырă
Кӳме çуралнăччĕ пуль, тен;
Тен, чапшăн хăть. Вăл тытнă лира
Пĕр вĕççĕр, ĕмĕр-ĕмĕрччен
Хăватлăн янрама пултарнă.
Тен, пурнăç пусмипе хăпарнă
Вăл пулĕччĕ çӳле. Тен, ун
Асаплă ĕмĕлки çак кун
Пытарчĕ хăйпелен халь эпĕр
Пĕлмен таса тивлет, пиртен
Чи чунлă сас çухалчĕ, тен;
Илтеймĕ халь вăл тăпра витĕр
Хăйне килес йăх малашне
Мухтанине, тав тунине.

XXXVIII

Е, ним те ыррине кӳмесĕр,
Пăсса кăна хăй пурнăçне,
Нихçан сӳнми чаппа вăл, тен, пĕр
Тултарĕччĕ хаçатсене.
Çынна ăс вĕрентсе, тем тĕрлĕ
Анăратса, хăшне пит вирлĕ
Алçуптарса, хăшне-пĕрне
Ылхантарса, хăй ĕмĕрне
Ирттернĕ пулĕччĕ хаяррăн:
Нельсон пек е Кутузов пек
Киленнĕччĕ трофейĕпе,
Е ярĕччĕç ăна — мăнтарăн
Наполеон пек — пуçĕпех,
Е çакĕччĕç — Рылеев пек.

XXXIX

А, тен, çапла та пуль: кĕтетчĕ
Çын шăпиех çав поэта.
Ун çамрăк ĕмĕрĕ иртетчĕ,

Чĕри шăнатчĕ. Хăй пайтах
Улăшăнатчĕ, пăрахатчĕ
Çырмашкăн та вăл, авланатчĕ;
Телейлĕскер, вара ялта
Саватчĕ мамăк халата,
Майри кукăртнине сисместчĕ;
Ĕçет, çиет, мăнтăрланать,
Подаграпа асапланать
Вăл хĕрĕхрех, унтан вилетчĕ
Килте, çемçе тӳшек çинче,
Йĕрен кил-йышĕ хушшинче.

## XL

Темле пулсан та, вулаканçăм,
Çап-çамрăк чун савни, чечен
Поэт, ялан шухăшлакан çын—
Вăл пĕтрĕ тусĕн аллинчен!
Çав сăвăç пуранна та çырнă
Ялтан сулахайра пур вырăн:
Ик хыр пĕрлешнĕ тымартан;
Хырсен айпе тӳрем лапран
Çырма юхса иртет йăвашшăн;
Унта сухаçă канкалать,
Выран хĕрарăм анкалать
Кăкшăмпалан шывне ăсмашкăн
Шыв хĕрринче, сулхăнарах,
Çырулла шурă чул ларать.

## XLI

Çурхи ăш çумăр ярăнуçăн
Унта кĕтӳç пытанкалать;
Çăпатине хуçса, хăюллăн
Вăл Атăл юррине юрлать;
Тата хулан çап-çамрăк хĕрĕ,
Çулла ялта irттеренскерĕ,
Пĕр пĕччене хирсем тăрăх
Юланутпа кустарнă чух,
Çав чул патне пырать; курсассан,

Чĕн чĕлпĕрне карăнтарса,
Шлепкин флĕрне вăл таварса,
Йалт-ялт пăхса вулать васкавлăн
Мĕн çырнине: ачаш куçне
Куççуль тĕтрелетет унне.

## XLII

Вара уттарса çеç уй тăрăх
Вăл, шухăша кайса, пырать;
Ун чунĕ Ленскишĕн пĕр авăк
Ирĕксĕрех пăшăрханать.
Вăл шухăшлать: «Ольги епле-ши?
Чĕри вăрах ун тертленсе-ши
Е иртнĕ час куççулĕ кун?
Ăçта-ши аппăшĕ халь ун?
Ăçта çынран йалт писекенĕ,
Чипер хĕрарăмсен чипер
Тăшманĕ, тĕксĕм чунлăскер,
Çав поэта вĕлерекенĕ?..»
Мехел çитсессĕн пĕтĕмпех
Сире пĕлтерĕп тĕплĕн эп.

## XLIII

Анчах халь мар. Хăть пур чунтан эп
Саватăп хамăн героя;
Хăть ун патне таврăнăпах, теп,
Анчах хăварăп кăшт кая.
Çулсем прозăналла туртаççĕ,
Çулсем рифма хуса яраççĕ,
Хам та — тӳрех калатăп эп—
Ана ӳркенерех йĕрлеп.
Перам варласшăн мар ансатăн
Хут листине ĕлĕкхи пек;
Йалт урăх — сивĕ ĕмĕтпе,
Кун-çул шухăшĕпе кун-каçăн
Вăркать вăраннă чунăм ман
Пĕччен е çын çинче — ялан...

## XLV

Эп урăх тунсăхпа пурнатăп,
Астиврĕм çĕнĕ хурлăх эп;
Кĕтни сыпăнасса шанмастăп.
Иртейнĕ хурлăха — шеллеп.
Ĕмĕтĕмсем! Ăçта пылакăр?
Ăçта ман çамрăклăхăм, калăр?
Е ĕнтĕ чăнласах та халь
Шанчех, шанчех-шим вăй ахаль?
Е тӳррипех, ытарсăр ĕнтĕ,
Элегисĕр те мĕнсĕрех,
Хальччен шӳтпе эп вĕçтерен
Ман çуркуннем вĕçсе ăсанчĕ?
Чăн таврăнаймĕ-ши? Чăн та
Эп час пулап-ши вăтăрта?

## XLV

Çапла, ман кăнтăрлам çывхарнă,
Куратăп эп, йышăнмаллах.
Анчах сывпуллашар юлташлăн,
Çунатлă, çăмăл çамрăклăх!
Тавах сана киленӳсемшĕн,
Ытарайми асапусемшĕн,
Ĕçкӳшĕн, тăвăлушăн та —
Мĕнпур, мĕнпур чысушăн тав;
Тавтапуçах сана. Санпа эп
Шавра та тӳлекре — пĕрех —
Ыр куртăм... тăраниччен́ех;
Çитет мана! Уяр чунпа эп
Каяп халь çĕнĕ çулпалан,
Канмашкăн иртнĕ пурнăçран.

## XLVI

Пăхам-ха çаврăнса. Сыв пулăр,
Ман ырă, канлĕ хӳтлĕхсем.
Вĕри чуна эсир пил турăр
Чи çутă, тутлă тĕлĕксем.
А эс, хавхалану çуначĕ,
Хускат ман шухăша, хумхатчĕ,

Вăрат сĕнк пулнă чĕреме,
Кĕрех тăр ман кĕтессĕме,
Ан парччĕ эсĕ сивĕнмешкĕн
Поэт чунне, ан пар хытма,
Хаярланма та чулланма,
Сип-сивĕ кăмăллă çынсенĕн
Аварĕнче пăтрашнăçем,
Сирĕнпелен эп, тусăмсем!

## ÇИЧЧĔМĔШ ПАЙĔ

Мускав, Российăн савнă хĕрĕ,
Ăçтан тупас сан танлине?

*Дмитриев.*

Епле юратмăн хамăр Мускава?

*Баратынский.*

Мускав та юраймасть!
Ак çын тĕнче курсан!
Ăçта-ха лайăхрах?
Ăçта эпир пулман.

*Грибоедов.*

### I

Çурхи хĕвел хĕртсе пăхсассăн,
Сăртсем çинчен пур таврана
Юр, ирĕлсе, пăтранчăк санлăн
Анать шыв илнĕ çарана.
Вăраннă çут тĕнче йăл кулчĕ,
Çулталăкăн ирне тĕл пулчĕ.
Тӳпе кăваккăн ялтăрать,
Вăрман тин çулçă кăларать —
Сип-симĕс мамăк сăрнă майлă.
Пыл хурчĕ вĕллерен ирех
Тухса вĕçет ĕнтĕ хире.
Типет, чăпарланать лап-айлăм;
Кĕтӳ кĕрлет; каç шăплăхра
Шăпчăк шăрантарать юрра.

II

Епле санпа эп кулянатăп,
Мĕнпурĕ савнă çуркунне!
Мĕнле хыпса пăшăрханатăп
Чунпа, юнпа эп ун чухне!
Мĕнле салху чĕремпелен эп
Тӳлек ялта халь киленетĕп
Ман питĕме çемçен вĕрен
Çурхи ачаш çилсемпелен!
Е писрĕм пур киленӳрен те,
Е савăнтаракан, чĕртен,
Хĕпĕртекен те çиçекен
Тĕнче ман чуншăн мар-и ĕнтĕ?
Е чунăмçăм, хăй сӳннипе,
Курать пурне те тĕттĕм пек?

III

Е çулçă ешерсессĕн эпĕр,
Вăрманăн çĕн шавне илтсе,
Хура кĕрех аса илетпĕр,
Темскер çухатнăн çӳçенсе;
Е, йывăç-курăк сарăлсассăн,
Унпа танлаштаратпăр хамрăн
Нихçан та чĕрĕлес çукла
Шанса пыран куна-çула?
Тен, пирĕн шухăша кĕрет-тĕр
Поэзи тĕлĕкĕпеле
Йăлт урăх, çамрăк çуркунне,
Çав чĕрене çитсе тивет-тĕр,
Йнçе çĕре, хитре каçа,
Çут уйăха кӳрсе аса...

IV

Ак вăхăт: ӳркев пуснă халăх,
Чухлавлă эпикурçăсем,
Эсир, пĕр тикĕс ăрăскаллă,
Çав Левшин шкулĕн чĕпписем,
Эсир те, ял-тавраш Приамĕ,
Эсир те, сисĕмлĕ хĕр-дама,

Аш çур яла чĕнет сире:
Унта уç сывлăш, ĕç вĕрет,
Унта чечек, çĕкленĕ чунăр,
Унта ытарайми каçсем.
Часрах, часрах уя, туссем!
Кӳме тулли тиенсе тухăр,
Вăрахăн е пуштăпалан
Асанăр пăчă хуларан.

V

Эсир те, хапăл вулаканăм,
Кӳме çине ларса паян,
Тухсамăр хĕл-каçа ташланă
Пĕр вĕççĕр шавлă хуларан;
Ман хăй манерлĕ Муза хыççăн
Каяр-ха: ак хай ятсăр шывăн
Хĕррипелен шавлан вăрман.
Ак ял; унта Евгений ман,
Салхуллăн, пур çынран та писнĕн,
Пурнатчĕ-ха тин çеç хĕлле
Мал ĕмĕтлĕ пикепеле —
Çап-çамрăк Таняпа пускиллĕн;
Анчах вăл çук унта халь тек...
Хăварчĕ хурлăхлă йĕр çех.

VI

Утар-ха çавракă сăрт-туллă
Хирпе çăл шыв кĕрлен çĕре;
Çăкалăх витĕр, улăх урлă
Вăл çырмана юхса кĕрет.
Унта, çут çуркунненĕн пĕчĕк
Савни пулса, юрлать халь шăпчăк;
Шăлан çурать кĕрен чечек;
Ик ватăлнă хыр айĕнче
Курнать хайхи чул палăк шуррăн.
Ун çырăвĕ çапла: «Выртать
Владимир Ленский çакăнта,
Вăл вилнĕ çамрăкла, хăюллăн,
Çав-çав çула çитсе, çав çул,
Çыврах, яш сăвăç, канлĕ пул!»

## VII

Кăшт ĕлĕк усăк хыр турачĕ
Çак лăпкă палăк çинелле
Пĕр вăрттăн пуçкăшăль суллатчĕ
Иркӳлĕм вĕрнĕ çилпеле;
Ун чух, каçа юлса, пĕр тăтăш
Кунта çӳретчĕç ик хĕр тантăш,
Ыталашса, чул çумĕнче
Йĕретчĕç уйăх çуттинче.
Халь ĕнтĕ... палăкне çын маннă.
Пытаннă ансăр утма-çул.
Турат çинче пуçкăшăль çук;
Ун айĕнче çаплах — шуралнă,
Ырхан кĕтӳç пĕччен ларать,
Çăпатине хуçса, юрлать.

## VIII. IX. X

Ман мĕскĕн Ленский! Час лăпланчĕ
Сан татăлса йĕрен савни.
Вăрах та кулянмарĕ — манчĕ
Эс арăм тăвасса шанни.
Тепри ăна час сăхлантарчĕ,
Тепри ун хурлăхне пултарчĕ
Йăпăлтатса сирсе яма.
Улан мел тупрĕ çавăрма,
Халь улана савать ун чунĕ...
Ак чиркӳре юнашарах
Венчет калпакĕпе тăрать
Бăл вăтанса; пуçне кăшт чикнĕ,
Çут куçĕ çĕрелле пăхать,
Тути ун ерипен кулать.

## XI

Ман мĕскĕн Ленский! Чунупа эс,
Ĕмĕрлĕхри çĕре çитсен,
Кӳрентĕн-и, салхуллă сăвăç,
Савни пăрахнине илтсен?
Е Летă çийĕн тĕлĕрейнĕ
Поэт сисменлĕхпе телейлĕ?

Е нимшӗн те вӑл кӳренмест,
Нимӗскере курмасть, илтмест?..
Ҫапла! Сип-сивӗ чунлӑ манӑҫ
Кӗтет пире, ҫӗре кӗрсен.
Тӑшманӑн, тусӑн, савнисен
Сасси шӑпах пулать. Мула ҫеҫ
Часрах пайлас тесе вара
Кӑшкӑрашать тӑван-тавраш.

XII

Час Ольӑн ян сасси шӑпланчӗ
Сайралнӑ Ларин йышӗнче.
Уланӗ ирӗклӗ ҫын мар-ҫке.
Арӑмӗпех каять полкне.
Вӗри куҫҫуль тӑкса, ват карчӑк
Ӑсатрӗ хӑй хӗрне, аранчӑ
Вӑл сывӑ юлчӗ; Таня ман
Пултараймарӗ макӑрма;
Ун хурлӑ пичӗ, вилӗм ҫапнӑн,
Шурса шупкалчӗ ҫав самант;
Пурте алӑк умне тухсан,
Ҫӗн мӑшӑра ыр суннӑ майӑн
Кӳми тавра ҫын пухӑнсан,
Татьяна ячӗ ӑсатса.

XIII

Тахҫанччӗнех, тӗтре хупланӑн,
Вӑл пӑхрӗ лавӗ еннелле...
Ак ӗнтӗ пӗр пӗччен Татьяна!
Мӗн чухлӗ пурӑннӑ пӗрле!
Ун кӑвакарчӑнӗ, чи шаннӑ
Ҫынни, ун чун панчи тӑванӗ —
Вӑл халь таҫти ют ҫӗрсенче,
Ӗмӗрлӗхех вӑл уйрӑлчӗ.
Ҫӳрет хӗр тӗлсӗр мӗлке евӗр;
Е пушӑ садалла пӑхать...
Ниҫта та, ним те йӑпатмасть;
Куҫҫулӗ те тухмасть, йӗрсе пӗр
Пусарӑнинччӗ—ҫук: чӗри,
Тен, ҫурӑлса тухать-тӗр-и...

XIV

Хаяр пĕчченлĕхре хĕр чунĕ
Çунать тата та ытларах,
Инçе Онегин çинчен унăн
Чĕри калать халь хытăрах.
Ăна вăл курас çук; Евгений
Тăшман тивет халь: вăл вĕлернĕ
Унăн йăмăкне савакана;
Поэт çĕрте... анчах ăна
Никам та асăнмасть те ĕнтĕ,
Ун хĕрĕ урăха савать.
Поэтăн ячĕ — çак кăвак
Тӳпе тăрăх саланнă тĕтĕм;
Тен, уншăн ик чĕре кас-кас
Çунать-тĕр халь те... Ма çунас?..

XV

Каç пулнă. Пĕлĕт хăмăрланнă.
Шыв юхнă шăп. Нăрланă нăр.
Хĕрсен уявĕсем саланнă:
Леш çыранта пĕр сасăсăр
Тек йăсăрланнă пулăç вучĕ.
Çутатнă кĕмĕл уйăх. Уçă
Хирте, хăй ĕмĕчĕпелен,
Татьяна утнă пĕр пĕччен.
Пырать, пырать... Сăртран сасартăк
Улпут кил-çурчĕ курăнать;
Сăрт çумĕн ял,ката ларать,
Шыв хĕрринче ем-ешĕл сад ак;
Пăхать те хĕр — чĕри раснах
Тапа пуçларĕ хăвăртрах;

XVI

Шухăшĕсем иккĕленеççĕ:
«Утăм-ши, е калла каям?..
Вăл çук кунта. Мана пĕлмеççĕ...
Пăхам çуртне, садне курам».
Ак сăрт çинчен анать Татьяна,
Аран сывлать хăй; аптăранă
Куçпа пăхать йĕри-тавра...

Кĕрет пуш карташне. Харах
Ун патнелле йытсем сикеççĕ.
Хĕр çухăрчĕ; çавна илтсен,
Мужик-таврашĕн ачисем
Чупса пуçтаранчĕç. Хĕнпе çеç
Салатрĕç йытсене хĕртсе,
Пĕччен пике хутне кĕрсе.

## XVII

«Улпут çуртне курма юрать-и?»
Тесе хĕр ыйтрĕ. Ачасем
Анисья патнелле юрттарчĕ —
Илмешкĕн пăлтăр уççисем;
Анисья хĕр патне хăй килчĕ,
Ак алăк уçăлчĕ те, кĕчĕ
Татьяна пуш çурта, тинрех
Геройăм пуранна çĕре.
Пăхать пике: залра çын манна
Бильярд çинче пĕр кий канать;
Путкам диван çинче выртать
Манеж хулли. Иртет-ха Таня;
«Ак ку камин», тет карчăк хай:
«Кунта улпут ларатчĕ хăй.

## XVIII

«Хĕлле унпа ĕçсе-çиетчĕ
Пуç хунă Ленский, çакăнта.
Ак ку улпутăн кабинечĕ;
Кĕрсе курсамăр; вăл кунта
Çывратчĕ, кофе ĕçкелетчĕ,
Приказчик докладне итлетчĕ,
Вулатчĕ кĕнеке... Кунтах
Пурнатчĕ ват улпутăм та;
Манпа вырсарникун çак кантăк
Панче вăл, куçлăх тăхăнса,
Картла вылятчĕ — ухмахла.
Чунне тур çăлтăрах, ыр канлĕх
Пиллетĕрех ун шăммине,
Хура çĕрте выртанскерне!»

## XIX

Куç илейми пăхать Татьяна
Пурин çине те хăй тавра;
Йăлт хаклă пек, йăлт тăвăрланнă
Чунне чĕртет... ыраттарать...
Кĕнекисем, сӳнтернĕ лампа,
Сĕтелĕ, кавирпе хупланнă
Кравачĕ кантăк тĕлĕнче,
Тĕтреллĕ уйăх çутинче
Чӳречерен курнан çанталăк,
Çак тĕксĕмрех шур çутă та,
Лорд Байрон сăнĕ те, тата—
Шлепкеллĕ те салху çамкаллă,
Аллисене кăкри çине
Хутланă пăхăр пукане.

## XX

Куç пăвнă пек вăрах Татьяна
Тăрать çав капăр пӳлĕмре.
Анчах çитет. Çил сулхăнланнă.
Тӳрем сĕмленчĕ. Тĕлĕрет
Ката тĕтреленен шыв тăрăх;
Пытанчĕ ту хыçне шур уйăх;
Хĕре-мĕн паçăрах калле
Каймашкăн вăхăт килнелле.
Вара хăйне çĕнтерчĕ пирĕн
Татьяна: хаш сывла-сывла
Тухса уттарчĕ каялла.
Анчах малтан вăл ыйтрĕ ирĕк
Çак пуш çурта килех тăма,
Кĕнекесем пăхкалама.

## XXI

Анисья хапхаран кăларчĕ;
Хĕр сывлăх сунчĕ, виçмине
Ирпе ирех çитсе уçтарчĕ
Кинемее улпут çуртне.
Уллах кабинетра пĕр авăк
Мĕнпур çут тĕнчене манса вăл

Ак юлчĕ пĕчченех, вăрах
Унта вăл макăрчĕ вара.
Унтан кĕнекесем хускатрĕ.
Вăл шухăш марччĕ те малтан,
Анчах хĕр тĕлĕнчĕ кайран
Мĕн пурринчен. Вула пуçларĕ
Татьяна çăткăн чунĕпе,
Паллашрĕ урăх тĕнчепе.

## XXII

Эпир пĕлеттĕмĕр: Онегин
Пăрахнă вулама тахçан,
Çапах та хăш-пĕр кĕнеке-мĕн
Ăна та сиввĕн пăхтарман:
Ку — Гяурпа Жуан юрçиччĕ,
Унпа пĕрле тата ик-виçĕ
Роман; вĕсем эпир пурнан
Саманана, хальхи çынна
Тĕп-тĕрĕсех кăтартнă: унăн
Киревсĕр, пăсăк, пĕр хăйне
Юратакан хыткан чунне,
Виçесĕр ĕмĕтне; пуш-пушшăн,
Пĕр ĕçсĕрех вĕчĕрхенен
Ун усалланнă ăс-тăнне.

## XXIII

Чылай листи сыхланă паллăн
Чĕрнепелен шăйăрнине,
Çавсем çине хĕр асăрхавлăн
Тинкертерех парать куçне.
Чĕтре-чĕтре сăнать Татьяна:
Мĕн евĕр шухăш ăнтан янă
Тĕлĕнтерсе Онегина,
Мĕнпе вăл килĕшнĕ кăна.
Таса хĕррисенче курать хĕр
Карандашпа çырнисене.
Кирек ăçта та хут çине
Евгений чунĕ хăварать йĕр:
Кĕске сăмах, хĕрес лартать,
Ыйту çекли авса хурать.

## XXIV

Мухтав турра, пăртак-пăртаккăн
Авантарах халь ăнланса
Иле пуçлать Татьяна манăн —
Хăй кам пирки асапланса
Пурăннине: çав тертлентермĕш,
Хăрушă, хурлă тĕлĕнтермĕш,
Райран е тамăкран тăван,
Çав пирĕшти, мăнаç шуйттан,
Мĕн-ха вăл? Е ÿкерчĕк, пушă
Мĕлке вăл, е Мускав çынни
Гарольд плащне çакса яни?
Е модăри сăмахпа тулнă,
Е ют ăспа пурнать çак çын...
Пароди мар-и вăл эппин?

## XXV

Чăнах пĕлет-ши юмаха хĕр?
Чăнах тупать-ши тупсăмне?
Сехетваскать; вăл маннă: ахăр,
Килте кĕтеççĕ пикене;
Унта ик кÿршĕ халь лараççĕ,
Ун çинченех сăмах ваклаççĕ.
«Мĕскер тăвас?»—тет карчăкĕ:
«Татьяна ача мар та-çке.
Ман Оля çамрăкрах. Чăнах та
Пырать хĕре майлаштарсан;
Анчах мĕскер тăвас-ха ман?
Пурне те пĕр сăмах: каймастăп.
Шав кулянать хăй, пĕр пĕччен
Вăрман тăрăх çÿрет темччен».

## XXVI

— Савмасть-ши вăл апла? — «Кама-тăр?
Буянов ячĕ хăтана:
Каймасть. Çаплах Петушкова та.
Гусар Пыхтин пулса хăна;
Епле вăл Таняна сăхланчĕ,

Епле ун тавралла ҫалланчӗ!
Тен, кайӗ, теттӗм эп,—ӑҫта!
Ҫаллех ӗҫ пӑсӑлчӗ тата».
— Ан хуйхӑр, амӑш. Ак ман шухӑш:
Мускавалла, хӗр пасарне!
Унта пайтах тет вырӑнӗ.—
«Ах, ырӑ ҫын! Сахал-ҫке тупӑш».
— Пӗр хӗллӗх ҫитӗ, ҫитмесен
Хам парӑп кӑшт эппин кивҫен. —

## XXVII

Питех те кӑмӑлларӗ карчӑк
Ҫак канаша, аван сӑмах,
Вара шухӑшласа хӑварчӗ
Хӗлле вӑл Мускава каймах.
Ҫав хыпара илтет халь Таня.
Тиркешлӗ те, ӗлккем те танлӑ
Ҫынсен умне таҫти сӑпай
Провинцири йӑваш сӑнпа,
Ҫивелнӗ модӑпа тухмашкӑн,
Ҫивелнӗ пуплешӳпелен;
Мускавӑн вӗҫкӗн пикисен,
Йӗкӗчӗсен кулли пулмашкӑн!..
Хӑрушӑ! Ҫук, сӗм вӑрмантах
Ӑна юлмашкӑн лайӑхрах.

## XXVIII

Шурӑмпуҫпа пӗрлех тӑрса вӑл
Халь ӗнтӗ хирелле васкать;
Пурне те ӑшшӑн, юратса вӑл,
Йӗри-тавра пӑхса калать:
«Тӳлек тӳремлӗхсем, сыв пулӑр,
Эсир те, ту-сӑрт, чипер юлӑр,
Эсир те, пӗлӗш вӑрмансем!
Сыв пул, тӳпе — сенкер илем,
Сыв пул, хавaслӑ ҫутҫанталӑк!
Улӑштаратӑп шӑплӑха
Шӑв-шавпалан эп кӑлӑхах...

Сыв пул эс те, ман ырă ирĕк!
Ăçта каям, мĕскер шырам?
Мĕскер сунать мана шăпам?..»

## XXIX

Вăл ытларах çӳрет халь хаççăн:
Çăл шывĕ, пĕр-пĕр тĕмеске
Ирĕксĕрех ăна чараççĕ,
Астăварах иртет пике.
Вăл тахçанхи тус-йышĕ пек хăй
Çаранĕ-улăхĕсемпе-ха
Сăмахласа юлма васкать.
Анчах çу кунĕ час тарать.
Ак ылтăн кĕркунне те çитрĕ.
Тĕнче капмар тум витĕнет,
Учук тыни пек çӳçенет...
Ак, пĕлĕт çĕклесе, сив çилĕ
Уларĕ, вĕрчĕ, ак килет
Асамăç асанне — Хĕлле.

## XXX

Çитейрĕ, салтăнчĕ; чăмаккăн
Юман çине вăл çакăнчĕ;
Выртать кăтра кĕççе-паласăн
Тĕмсем тавра, уй-хирсенче;
Пăрланнă шыв çыранĕ, варĕ —
Йăлт кăпăш кипкепе чăркарĕ.
Ак шатăртатрĕ шартлама.
Хавас эпир хĕле курма.
Пĕр Танян çеç чĕри хавассăр.
Тухмасть хĕлпе курăнăçма,
Шăн сывлăшпа вăл сывлама;
Мунча çинчи юрпа мăй-кăкăр,
Пит-куç çумасть: хĕл çул-йĕрех
Татьянăна шиклентерет.

## XXXI

Қаяс кунне тахçан иртгерчĕç,
Ирттерчĕç юлашки срукне.
Юсарĕç, çапрĕç, тĕреклетрĕç

Пăрахнă кивĕ кӳмене.
Обозĕ мĕскерли паллах-тăр,
Виç лав тиеççĕ ăпăр-тапăр:
Чашки-тирки, тӳшек-минтер,
Арчи, тенкел-пуканĕ-тĕр,
Читлĕхпелен чăххи-автанĕ,
Варенье банкисем, тазсем,
Чӳлмек-тавраш, тата тем-тем...
Тарçи-тĕрçин пӳртре тапранчĕ
Шăв-шав, куççуль, ак карташне
Кӳртеç вунсакăр лашине.

## XXXII

Бояр кӳми туртса кӳлеççĕ,
Поварĕсем ирхи апат
Янтлаççĕ; сăрт пек лав тиеççĕ;
Лавçи, хĕрарăмĕ ятлать.
Ырхан лаша çине сухаллă
Форейтор — çул тытан — утланнă.
Пур йыш хапха патне чупать,
Улпут йăхне вăл ăсатать.
Ак ларчĕç те хапхаран тухрĕ
Хисеплĕ хай кӳме шуса.
«Тӳлек çĕрсем, сыв пулăрсам!
Сыв пул, уллах кĕтесĕм! Урăх
Курайăп-ши?»—Ик куç тулли
Юхать халь Таньăн куççулли.

## XXXIII

Çутта тухас ĕç тимлĕ-пиллĕ,
Сарлакараххăн сарăлсан,
Пурна-киле (философиллĕ
Таблица тăрăх шутласан—
Пĕр пилĕкçĕр çултан) пур çул-йĕр
Юсанĕ пирĕн паллайми-тĕр:
Йĕри-таврах вĕçрен вĕçе
Каркалĕ Раççее шоссе;
Чугун кĕпер шыв урлă каçĕ

Армак-чармаккӑн, тусене
Хускатӑпӑр, шывсен айне
Чакалӑпӑр хӑюллӑн; ҫӗ
Чӑн тӗнлӗ йӑх ҫав вӑхӑтра
Станцӑсерен трахтир вара.

## XXXIV

Халь пирӗн ҫул-йӗр питӗ япӑх,
Кӗпер ҫӗрет — кӗҫ ванмалла;
Станцӑсенче минут та ыйӑх
Памасть пӑрҫа та хӑнтӑла;
Трахтир те ҫук. Йӑлашӑн ҫакнӑ
Хутман пӳртри эрешлӗ, чаплӑ,
Анчах та выҫӑ прейскурант
Ҫиес килтерсе ҫеҫ тӑрать.
Унччен тимӗрҫисем шаккаҫҫӗ:
Хуллен ҫунан вут умӗнче
Раҫҫей млатукӗпе чечен
Европӑн кӳмине юсаҫҫӗ,
Тӑван ҫӗрти вар-васана
Калаҫҫӗ тавтапуҫ кӑна.

## XXXV

Ун вырӑнне хӗлле пит ыррӑн,
Пит ҫӑмӑллӑн ҫӳрен текех.
Ҫул яп-яка: тин хывнӑ юррӑн
Ним шухӑшсӑр сӑвви пекех.
Ямшӑкӗсем вӑр-вар та вичкӗн,
А тройкисем ҫунатлӑ пирӗн:
Тӗкме пек йыввӑн, вӗҫнӗҫем,
Курнаҫҫӗ ҫухрӑм юписем.
Мӑнтарӑн Ларина — вӑл тухрӗ,
Ҫул пит хакла ӳкес шикпе,
Пуштӑпа мар, хӑй лашипех,
Ҫампа пусмаллипех те пусрӗ
Пикемӗре ҫулти кичем:
Ҫич тавлӑк кайрӗҫӗ вӗсем.

XXXVI

Анчах ак çывăх. Шурă чуллă
Мускавăн ылтăн тăррисем
Кăвар пек курăнчĕç, тем чухлĕ
Çут ылтăн хĕреспе çиçсе.
Ах, тăвансем! Епле тулсаччĕ
Ман кăмăлăм — чиркў те сачĕ,
Керменĕ, çурчĕ — çур çавран
Умра сасартăк курăнсан!
Епле санран уйăрăлсассăн
Хам куçкăн пурнăçра сана,
Мускавăм, эпĕ асăннă!
Мускав... мĕн чухлĕ çак сăмахăн
Пахи чăн вырăс чĕрине!
Мĕне вăл пĕлтермест, мĕне?!

XXXVII

Ак Петĕр ячĕпе тутарнă
Юманлăх ăшĕнчи кермен.
Вăл çĕнĕ мухтавпа чапланнă.
Наполеон, телейпелен
Юлашки хут киленнĕçемĕн,
Ахаль кĕтрĕ — Мускав ват Кремлĕн
Уççисемпе кукленессе:
Çук, ман Мускав, ăна кĕтсе,
Тайма пуçпа тухса илмерĕ,
Ăмсанчăк паттăршăн чыс мар,
Хăна парни те мар — пушар
Чĕртсе ярса вăл хатĕрлерĕ.
Леш, шухăшлăн, хаяр вута
Пăхса сăнанă çакăнтан.

XXXVIII

Сыв пул эс, пĕтнĕ чапа курнă
Хуралтă! Ну! çитет тăрса,
Атя! Курнать ак ĕнтĕ шуррăн
Хула хапхи те, ак часах
Кўме Тверскойпалан ланклатрĕ.
Будки, хĕрарăмĕ вĕлтлетрĕ,

Лавкки, хунарĕ, ачи-пăчи,
Мăнастирсем, çуни, пахчи,
Садсем, пÿртсем, мăнаç керменĕ,
Купси, мужикĕ, бухарсем,
Башни, бульварĕ, казаксем,
Аптекĕ, мода магазинĕ,
Хапха çинчи арăслансем,
Чăв-чав чавкаллă хĕрессем.

## XXXIX. XL

Çапла ырса çÿрекелÿçĕн
Пĕр-ик сехет иртет; вара,
Хритун тăкăрлăкне кĕрсессĕн,
Кÿме пĕр çурт умне тăрать.
Вĕсем тăваттăмĕш çул акă
Кăкăрсăрланнă ват мăнаккăш
Патне халь килчĕçĕ куçса.
Вĕсемшĕн алăк яр уçать
Чăлха çыхан шуралнă калмăк:
Сăкманĕ çĕтĕк, куçлăхпа.
Диван çинче выртан княжна
«Ах!» тет гостинăйра чунхаллăн.
Ыталашаççĕ те йĕрсе,
Сасла пуçлаççĕ карчăксем.

## XLI

«Княжна, пирштим!» — Пашшет! — «Алина!»
— Кам шухăшлас!—«Хăçантанпа!»
— Вăрахлăха-и?—«Ах! Кузина!»
— Ларсам, халлап ку, тупата!
Ак тупă, туйăнать романăн...—
«Ку манăн хĕрĕм ак — Татьяна».
— Ах, Таня! Кил-ха ман патма,
Йалт тĕлĕк пек... Грандисона
Манман-и-ха, кузина, эсĕ?—
«Мĕн? Грандисон?.. а, Грандисон!
Аçта вара вăл?»—Симеон

Урамĕнче пурнать; килсеччĕ
Мана курма Раштав каçне:
Вăл авлантарчĕ ывăлне.

XLII

А леш... анчах кайран пĕлетĕр,
Ак ыранах пур тăванне
Кăтартăпăр Таньăна эпĕр.
Шел, хам тухаймăп çын патне;
Аран ура сĕтĕркелетĕп.
Çулта пит ывăнтăр пуль, тетĕп;
Каярччĕ-ха пĕрле, канар...
Хал çук-çке... кăкăр уçă мар...
Халь маншăн савăнăç та йывăр...
Эп ĕнтĕ, чунăм, ку çулсем
Ниме те юрăхсăр этем...
Ват пурнăç çав тери-мĕн ирсĕр...—
Кунта вара, ĕшеннипе,
Вăл ÿсĕрчĕ куççуллипех.

XLIII

Татьянăна чирлĕ мăнаккăш
Ачашлани, савни паха.
Çапах та çĕн çуртра выртмасть ăш:
Хăй пÿлĕмех асра ун халь.
Вăл çывраймасть пурçăн чаршавлă
Тÿшек çинче; тата шăв-шавлă
Ирхи ĕç умĕнхи чансен
Сĕмлех янранă сассисем
Ăна часах вăратрĕç. Таня
Тăрса ларать кантăк умне.
Тул çутăлать; анчах уйне
Курмасть вăл, хирĕ ун пытаннă:
Хĕр умĕнче халь ют карташ,
Вите, чул лаç, хÿме тавраш.

XLIV

Ак Таняна илсе çÿреççĕ
Куллен хурăнташсем патне,
Маçак-мамакăш сĕтĕреççĕ

Йăлăхтарсах халь пикене.
Тăваншăн, аякри хăнашăн
Пур килĕре те кăмăл ăшă,
Çăкăр-тăвар та чыс ăна.
«Мĕн çӳллĕш Таня! Эп сана
Тин мар-и-ха тĕне кӳртсеттĕм?
А эп алла тытаттăмччĕ!
А эп туртаттăм хăлхинчен!
А эп пĕремĕк çитереттĕм!»
«Ах!»—теççĕ ват асаннесем:
«Вĕçеççĕ те мĕн кун-çулсем!»

## XLV

Анчах хăйсем улăшăнман-ха,
Йăлтах вĕсен авалхи пек:
Княжна Елена — ват мăнаккăш—
Халь те çав тюль калпакĕпех;
Шав пит сăрлать Лукерья Львовна,
Çавнах суять Любовь Петровна,
Иван Петрович шав ухмах,
Семен Петрович шав хытах,
А Пелагея Николавнăн
Мĕсье Финмуш-ха тусĕ шав,
Йытти те çав, мăшри те çав,
Мăшри клубра чипер членах-мĕн,
Çаплах йăваш, илтмест çаплах,
Ĕçет-çиет ик çыншăнах.

## XLVI

Таньăпалан ыталашаççĕ
Вĕсенĕн хĕрĕсем. Малтан
Мускав чиперккисем сăнаççĕ
Ăна пуçран ура таран:
Хыткан, шурхан, темле хăй майлă,
Провинциаллă та жеманлă,
Çапах та хĕр — пăхтармаллах,
Тесе татаççĕ пĕр сăмах.
Унтан вĕсем ак туслашаççĕ,

Чĕнсе кӳртеççĕ; чуптуса,
Хĕр аллине чăмăртаса,
Çӳçне çĕнле кăтралатаççĕ;
Вара ăшра мĕн пуррине
Йăлтах калаççĕ пикене:

## XLVII

Хăйсен çĕнтерĕвĕ, çынсенĕн,
Алхасĕ, шанчăк-ĕмĕтсем.
Шыв пек юхать сăмах хĕрсенĕн,
Элекпелен кăшт тĕрленсе.
Унтан, хăйсем каланисемшĕн,
Йăпăлтатса — ун чĕринче мĕн
Пурне ыйтаççĕ пĕтĕмпех.
Анчах, тĕлĕкрипе пĕрех,
Вĕсен сăмахĕсене Таня
Итлет хăй хутшăнмасăрах,
Ăнланаймасть те, шăппăнах
Усрать вăл чĕрине пытарнă
Ҫуççульпелен телей мулне —
Ямасть пĕрне те ун патне.

## XLVIII

Итлет Татьяна, ăнланмашкăн
Çын сăмахне вăл тăрăшать:
Анчах гостинăйра пур ушкăн
Ним тĕлсĕр-йĕрсĕр павращать;
Çынсем çавтер шупка, пĕртемлĕ;
Вĕсен элекĕ те кичемлĕ;
Ниме тăман хыпарсенче,
Калаçнинче, ыйтнисенче
Тавлăкĕпех чĕр шухăш çиçмĕ—
Хăть йăнăшпа, хăть ăнсăртран;
Йăл кулмĕç ырнă ăспалан,
Шӳтпе пулин те чĕре сикмĕ.
Кулăшларах вĕт-шакăр та
Çук пушă çынсенче унта!

XLIX

Архив йĕкĕчĕсем пăхаççĕ
Тиркесерех ман Таньăна;
Пĕр-пĕринпе калаçкалаççĕ,
Ҫăмăлламаççĕ пек ăна.
Темле салхуллă тĕлĕнтерĕш
Хĕре — йăлт идеаллă, терĕ:
Хай алăк çумĕнче тăрать,
Ăна элеги вăл çырать.
Мăнаккăш патĕнче Татьяна
Ҫумне ак Вяземский ларать,
Вăл ун чуннех вырăнаçать.
Хĕре унпа курсан, çулланнă
Старик камне ыйтса пĕлет,
Хăй парикне тӳрлеткелет.

L

Хĕр пулчĕ вирлĕ Мельпомена
Сив чунлă халăх умĕнче
Эрешлĕ мантине силленĕ,
Макрашнă, çухăрнă çĕрте;
Туссем ал çупнине илтмесĕр,
Шăп Тали тĕлĕрен çĕрте хĕр,
Пĕр Терпсихорăран кăна
Ҫын тĕлĕннĕ театрта,
(Эпир яш чух та пуççапатчĕç
Ҫавна кăна, асилĕрсем):
Унта ни кĕвĕç дамăсем
Пике енне лорнет тытмарĕç,
Ни куç хывмарĕ чухлакан
Ар йышĕ ложа-креслăран.

LI

Ăна Дворян Ҫуртне кӳртеççĕ:
Вĕри, хĕсеççĕ хĕснĕçем.
Ҫурта çунать. Кĕрлет оркестр,
Ҫил пек вĕçеççĕ мăшăрсем.
Чиперккесен вĕл-вĕл çи-пуçĕ,
Балкон çинчи пур тарçă-тĕрçĕ,
Картан-картан тăран хĕрсем—

Ķуҫа шартаҫҫĕ тинкерсен.
Ķунта кӑтартĕ вĕҫкĕн шукӑль
Пуҫтахлӑхне те жилетне
Тата вылянчӑк лорнетне.
Ķунта тин отпуск илнĕ шухӑ
Гусарваскать пĕр кĕрлеме,
Ҫиҫме, вӑлтма та вĕҫтерме.

LII

Сĕм каҫӑн йышлӑ хӳхĕм ҫӑлтӑр,
Хитре хĕр йышлӑ Мускавра.
Анчах пĕр уйӑх йӑлтӑр-ялтӑр
Пур ҫӑлтӑртан та ҫутӑрах.
Анчах хам лирӑмпа кутемĕн
Эп хускатма хӑйман пикемĕм,
Ҫав аслӑ уйӑх пек, пĕччен
Ялтрать пур арӑм-хĕр ҫинче.
Епле мӑнкӑмӑлпа вӑл пуснӑн
Ҫак ҫĕр ҫине! Мĕнле чечен
Чĕре тапать кӑкӑрĕнче!
Мĕнле туртать-ҫке куҫĕ унӑн!..
Е, ҫитĕ, ҫитĕ, чарӑнсам:
Ирттертĕн эс ухмахланса.

LIII

Шӑв-шав, ахӑлтату, пуҫтайӑш,
Сикӳ, мазурка, вальс... Унтах—
Ķолонна ҫумĕн, ик мӑнаккӑш
Сывӑхĕнче—Татьяна та;
Ӑна никам та сӑнамасть-ха,
Пӑхать те нимĕн те курмасть хӑй,
Вӑл кураймасть ҫак кĕр-кĕре;
Ун чунĕ тӑвӑнать... лере—
Хире вӑл туртӑнать, мӑнтарӑн
Ял ҫыннисем патне, уллах
Шыв хĕррине, вӑрманалла,
Ҫаран, чечек, роман, сĕм сулхӑн
Ҫӑка аллейĕ патнелле—
Онегин курӑннӑ тĕле.

## LIV

Инçе, инçе ун шухăш халĕ:
Мантарнă вăл бала ăна...
Хăйне пĕр чаплă генералĕ
Куç хывнă та — пăхать кăна.
Ик аппăш пĕр-пĕрне куç хĕсрĕç,
Чавсисемпе хĕре кăлт тĕртрĕç,
Кашни пăшăлтатса илет:
«Часрах сулахая пăх», тет.
— Сулахая? ăçта? мĕн пулнă?—
«Кирек мĕскер пултăр унта...
Куратни ав? леш ушкăнта,
Мундирсемпе, мала кăшт тухнă...
Ав пăрăнчĕ... хăяккăн ав...»
— Кам? Хулăн генерал-и çав?—

## LV

Анчах кунта эп саламлатăп
Çĕнтерӳпе Татьянăма.
Çула-йĕре пăрап, манаймăп
Тĕп юррăм камшăнне... Çав май
Тата пĕр-ик сăмах хушатăп:
*Хам çамрăк тантăша юрлатăп,*
*Ун йышлă тĕлĕнтерĕшне,*
*Пилле вăрах ĕçĕмсене*
*Эй эсĕ, эпос Музи! Тĕрĕс*
*Туя тыттар, ан парсамах*
*Тек кукăр-макăр аташма.*
Çитет. Хулпуççисем лăшт кайрĕç.
Чыс турăм классицизма:
Кайран та — пулчĕ умсăмах.

# САККАРМӖШ ПАЙӖ

Сыв пул! Ӗмӗрлӗхех пулсассӑн,
Ӗмӗрлӗхех эс сывӑ пул!
*Байрон.*

I

Лицей таври садра тӳлеккӗн
Эп ҫитӗнейнӗ кунсенче
Ҫасса каяттӑм Апулейшӗн,
Цицерона пӑхмастӑмччӗ;
Ҫурхи хуракӑш сас парсассӑн,
Уллах тӳремлӗхе ансассӑн,
Шыв хӗрринче ман куҫӑма
Пуҫларӗ Муза курӑнма.
Тавралӑх янк ҫуталса кайрӗ:
Студент пӳлӗмӗнче куллен
Янрарӗ Музӑм; ачасен
Хаваслӑхне савса юрларӗ,
Тӑван аваллӑх мухтавне,
Ҫавар чӗремӗн тунсӑхне.

II

Пӗрремӗш чап ҫунатлантарчӗ
Ҫав Музӑпа иксӗмӗре;
Державин пиллесе хӑварчӗ
Ҫӗре кӗрес чухне пире.

. . . . . . . . . . . . . .

. . . . . . . . . . . . . .

. . . . . . .
. . . . . . .
. . . . . . .
. . . . . . .
. . . . . . .
. . . . . . .
. . . . . . .
. . . . . . .

III

Чěрем хушнине çеç хам чуншăн
Саккун туса, çынпа танах —
Пĕр шухăшпах çунса, хăюллăн
Эп кӳртрĕм хамăн Музăна
Ĕçке-çике, тӳре-шарашăн
Хăрушă тав-шава; пуçтаххăн
Кăшкăрашан этемсене
Паратчĕ вăл хăй парнине,
Вакханка евĕр алхасатчĕ,
Юрлатчĕ тав курки тытан
Хăна умне тăрса ялан;
Ăна яш-кĕрĕм юрататчĕ,
Эп мухтанаттăм унпалан,
Çав шухă çăмăлттайпалан.

IV

Анчах тусăмсенчен эп юлтăм,
Эп тартăм аякри çĕре...
Хыçран пĕр шит юлмарĕ Музăм,
Вăл ман кичем çула-йĕре
Сăвăсемпе хитрелететчĕ.
Кавказ тăрăх вăл вирхĕнетчĕ
Янк уйăх çутинче манпа —
Ленора пек — юланутпа.
Часран часах манпа Крымра та
Вăл тинĕс хĕррине çĕрле
Тухатчĕ; эп унпа пĕрле
Тăнлаттăм шыв шавне, тăнлаттăм
Хумсем тĕнчемĕр ашшĕне
Мухтав юрри юрланине.

V

Пăрахрĕ Музăм чаплă, шĕкĕр
Хулан шавне, ĕçкисене;
Салху Молдавире çурт-йĕрсĕр
Чикан каран чатăрсене
Кĕрсе çӳрерĕ вăл хăюллăн;
Вĕсен сахал сăмахлă, чухăн
Чĕлхипелен калаçнăран,
Çеçен хирте юрланăран,
Вăл турăлла пуплеме манчĕ...
Сасартăк улшăнчĕ йăлтах:
Вара ман пахчана вăл ак,
Уес пики пулса, хурланчăк
Пит-куçпалан пырса тухать,
Француз кĕнекине вулать.

VI

Паян эп Музăна кӳртетĕп
Столицăри çын хушшине;
Шикленерех пăхса илетĕп
Ун хир кӳрнеклĕхĕ çине.
Йĕри-таврах аристокрачĕ,
Хитре çар çынĕ, дипломачĕ,
Мăнаçлă дамăсем... Пырать
Ман Муза; ларчĕ ак, пăхать:
Ăна паха пек çак кĕрлев те,
Çак тăкăслăх, çи-пуç, сăмах,
Кил-çурт пики умне вăрах
Пуçтарăнан хăна-вĕрле те,
Çак дамăсен тавра — картин
Хура хашакĕ пек — арçын.

VII

Ăна паха çынсен типтерлĕ
Сăмах йĕрки, тăп-тăп йăли,
Тӳлек мăнаçлăх, тĕрлĕ-тĕрлĕ
Чинсем, ватсем-яшсем пĕрли.
Анчах ку кам — тĕтре кун евĕр

Тăрать çав ушкăнта, чĕнмесĕр?
Пуриншĕн те вăл ют курнать.
Пур çынсене те хăй курать
Тахçан йăлăхтарса çитернĕн.
Мĕскер ун ăшĕнче халь тин?
Асап, кичемлĕх е хăй сплин?
Мĕнле этем вăл? Шет, Онегин?
Чăнах та çавă-ши?.. Чăн та,
Хăçантанпа вăл çакăнта?

VIII

Çаплах-и вăл е кăшт лăпланнă?
Е хальчченех тĕлĕнтерет?
Мĕнле чунпа таврăнкаланă,
Мĕнлен вăл курăнĕ пире?
Қам пулнă вăл кучух? Мельмот-и,
Қосмополит-и, патриот-и,
Гарольд е квакер, е ханжа,
Е урăх маскă тăхăнса?
Е халь вăл ырă çын кăна-и?
Ман пек те сирĕн пек, пĕтĕм
Тĕнче пек? Хам эп сĕнĕттĕм
Қив модăран юлма çав майăн.
Хăтланчĕ вăл çителĕклĕ...
— Паллатăр-и ăна?—Тепле...

IX

— Ма çав тери кăмăлламасăр
Пуплетĕр эсĕр ун çинчен?
Е мĕнпурне, çăвар хупмасăр,
Сӳтсе-явма вĕреннĕрен?
Е пĕр хăйне юратнă вак çын
Вĕри чунсем асăрханманшăн
Кӳреннипе те кулнипе,
Е ирĕк ăс пит хĕснипе,
Е илтнĕ сăмахах час-часăн
Эпир ĕç пек йышăннăран,
Е çăмăлттайлăх усалран,
Е эпĕр харкашма хавасшăн,

Е нимӗнпе тӗлӗнтермен
Çын çеç пире шӑлçеммирен?

X

Телейлӗ — кам яш чух яш пулнӑ,
Кам çитӗннӗ мехел çитсен,
Кам пурнӑç сиввӗшне çул-çуллӑн
Тўссе irттернӗ пӗчӗкçӗн,
Кам тӗлӗк-халлаппа нихçан та
Муталанман, писмен çынран та,
Кам пулнӑ çирӗмре пуçтах,
А вӑтӑрта пайталлӑрах
Авланнӑ, аллӑра тасалнӑ
Пур парӑмран, кам ерипе —
Тўлеккĕн те хӑй йӗркипе —
Мухтав, укçа, чинсем туяннӑ,
Кама ырланӑ виличчен:
Аван та çын-çке çав Н. Н.!

XI

Анчах пит хурлӑх шутламашкӑн:
Яш ӗмӗр иртрӗ ахалех,
Усси-йышши пулмарӗ маншӑн,
Мана вӑл улталарӗ çех,
Чи лайӑх ӗмӗтсем çитмерӗç,
Чи тутлӑ тунсӑхсем çӗрейрӗç,
Кӗрпе çӗрейнӗ çулçă пек,—
Темешкӗн — хурлӑх питӗрех!
Асап ху умӑнта курмашкӑн
Пӗр вӗçсӗр кӗреке кӑна,
Йӑлашӑн çеç пек пурӑнма,
Хӗн чинлӑ çынсемпе утмашкӑн
Хапӑлламасӑр вӗсенне
Ни шухӑшне, ни ӗмӗтне.

XII

Пурне те хытӑ тишкӗртсессӗн,
Йӗркеллӗ çынсенчен çаплах
Юри-чудак ятне илтмешкӗн

Хал çук (пĕлетĕр хăвăрах).
Хал çук илтмешкĕн темĕн-темĕн:
Шуйттан е ăссăр, е ман Демон
Сăнне те йышăнма çуках.
Онегин (чăрманам унпах)
Тусне персе пăрахнă хыççăн,
Пĕр ĕççĕр-хĕлсĕр пурăнса,
Шăп çирĕм улттă тултарса,
Пĕлмерĕ нимĕскер тумашкăн:
Ни арăмĕ çук, ни службы,
Кун-çулĕ тĕлсĕр, пушă пит.

XIII

Вăл канăççăрлана пуçларĕ,
Шут тытрĕ вырăн улăшма.
(Ку пит асап вара, пултарĕ
Сайра этем ăна чăтма).
Çав майăн вăл — вăрманĕ, сачĕ,
Уллах уй-хирĕ — йăлт хăварчĕ:
Унта юнланнă сăвăç ун
Куçне курнатчĕ кашни кун;
Тĕнче касмашкăн вăл тапратрĕ
Ним тĕлсĕр, пусрăнма кăна;
Унтан, ытти пекех, ăна
Çӳренĕ çулĕ те тăрантрĕ;
Килсен — карап çинчен тӳрех
Бала вăл лекрĕ, Чацкий пек.

XIV

Анчах ак пур эшкер хусканчĕ,
Пăшăлтата пуçларĕ зал...
Пĕр çамрăк дама çывăхарчĕ,
Ун хыççăн — чаплă генерал.
Çав дама пит хыпаланмасть те,
Сивех те мар, пит калаçмасть те,
Куçпа çисе пăхкаламасть,
Сăхлантарасшăн тăрăшмасть,
Питне-куçне пăркаламасть вăл,
Çынтан курса хăтланнине
Тупаймăн эсĕ унăнне...

Тӳлек кăна, пурне те хапăл —
Чăн *ком иль фо*... Шишков, каçар:
Эп куçаратăп пит начар.

XV

Пур дама ун патне пыраççĕ;
Йăл-йăл кулаççĕ карчăксем;
Арсем пуç таярах параççĕ,
Пуласшăн ун тĕлне вĕсем;
Хĕрсем ун умĕн лăпкăраххăн
Иртеççĕ: чаплă генералăн
Сăмси те, хулпуççийĕ те —
Ыттисенчен раснах çӳлте.
Никам çав дамăна илемлĕ
Тес çук; анчах ун пуçĕнчен
Ури тупанĕ таранччен
Никам ăна тĕртсе илеймĕ
Кучух çав Лондон модипе
Кăларнă *вульгăр* тенипе...

XVI

Çав сăмаха пит юрататăп,
Анчах куçараймастăп эп:
Пирте вăл халĕ çĕнĕ-ха та,
Тем, туянайĕ-ши хисеп.
Тен, эпиграммăра вăл юрĕ...
Анчах ман дама çинчен юррăм.
Сĕтел патне ларатъ шăпах
Вăл Нина Воронскаяпа —
Çав Питĕр Клеопатри тенĕ
Чиперккепе; эсир, паллах,
Халь килĕштерĕр манпала:
Сип-сивĕ мрамор пек илемлĕ
Нини, шартсан та куçсене,
Хупăрлайман хăй çумрине.

XVII

«Чăнах-и?»—шухăшлать Евгений:
«Чăн çавă-ши? Çавах пек... Мар...
Епле? Таçти çеçен хиртен-и?..»

Минутсерен лорнет тытма
Пуçларĕ акă вăл — хăй маннă
Сăн-сăпата халь тĕлĕк майлă
Аса илтерекен енне.
«Қала-ха, князь, пĕлместĕне:
Қам çав кĕрен беретлă дама —
Испан посолĕпе пуплет?»
Князь тинкерсе пăхса илет.
— Аха! Эс çын çине тухман-мĕн.
Паллаштарам, апла пулсан.
«Қам-ха вара вăл?» — Арăм ман. —

XVIII

«Илтменччĕ! Эс эппин авланнă!
Хăçан?» — Пĕр икĕ çул хушши.
«Мăшру кам?» — Ларина. — «Татьяна!»
— Паллатним? — «Эп вĕсен кӳрши».
— О, кайрăмăр апла. — Князь утрĕ
Мăшри патне, пырса тăратрĕ
Вăл хăй тусне, хурăнташне.
Пăхать княгиня ун çине...
Чунне мĕскер хĕснĕ пулин те,
Мĕн евĕр хытă именсе
Ӳксессĕн те вăл, тĕлĕнсе,
Сăнран хăй палăртмарĕ ним те:
Тытмашкăн пĕлчĕ çав тонах,
Пуçне вăл тайрĕ лăпкăнах.

XIX

Чăнах! ни чĕтресе каймарĕ,
Ни хĕрелсе, ни шуралса...
Ун куçхарши те хускалмарĕ;
Тути сикмерĕ иçмасса.
Онегин пăхрĕ тем курасшăн.
Анчах вăл ĕлĕкхи Татьянăн
Йĕрне те тупаймарĕ тек.
Сăмах уçасшăн пулчĕ те —

Пултараймарĕ. Лешĕ ыйтрĕ:
Хăçантанпа кунта, ăçтан,
Шет, терĕ, хамăр таврăран?
Унтан мăшри енне вăл пăхрĕ
Ĕшеннĕ пек; кĕç пăрăнчĕ...
Çын юлчĕ хăй вырăнĕнче.

## XX

Чăнах пулчи ку çав Татьяна?
Роман пуçланă вăхăтра
Ăна вăл куçма-куç ăс пană
Уллах та инçетри садра,
Чунтан-вартан ырра вĕрентнĕ,
Сыха вĕрентнĕ, ӳкĕтленĕ...
Ку çав пикех-ши? Вăл усрать
Ун çыруне: ăна çырать
Чĕре, унта йăлт уçă, ирĕк;
Е тĕлĕк ку?.. Çав çамрăк хĕр...
Йăваш та чĕмсĕр, шиклĕскер,
Çав хăй пăхман, тиркенĕ хĕр-и?
Çавах унпа халь çакăн пек
Пулчи хăюллă та сивлек?

## XXI

Килне тухса каять Онегин,
Йăлтах вăл шухăша ӳкет:
Пĕр хурлăраххăн, пĕр илемлĕн
Вĕçен ĕмĕт ыйха сирет.
Вăранчĕ вăл; çыру кӳреççĕ:
Князь Н. ăна чĕнет-мĕн кĕçĕр.
«Эй, тура! ун патне!.. Юрать!»
Часрах тăрса чарлаттарать
Ответ ăна вăл вашаватлăн.
Мĕн пулчĕ? Тĕлĕк курнă пек!
Мĕскер-ши сивĕннĕ, тӳлек
Чун тĕпĕнче тапранчĕ унăн?
Ӳпкев-и, ӳкĕнӳ-и ку?
Е çамрăк шухăш — юрату?

## XXII

Ҫаллех сехет шутлать Евгений,
Ҫаллех сунмасть кун иртессе.
Ак вуннă çапрĕ: ут кӳлтернĕ,
Вĕçтерчĕ, тăчĕ вăл çитсе;
Ҫнягиня çуртнелле кĕрсессĕн—
Чĕтрет; Татьяна пĕчченех-мĕн;
Ҫăшт ларчĕç иккĕшĕ вĕсем.
Анчах хăпмаççĕ сăмахсем
Онегин тутинчен. Салхуллă,
Пит мелсĕр халь вăл курăнать,
Аран-аран калаçкалать.
Пуçне тӳрккес пĕр шухăш тулнă.
Тӳрккессĕн вăл пăхать: пике
Ларать лăпках та ирĕкех.

## XXIII

Ак килчĕ упăшки. Вăл татрĕ
Çак куçма-куç тĕлпулăва;
Онегинпа вăл шӳт тапратрĕ,
Асилчĕ иртнĕ шăв-шава.
Вĕсем кулаççĕ. Хăнасем те
Ҫĕреççĕ. Ҫалаçу халь ĕнтĕ
Шултра тăвар сапайнă пек.
Татьяна умĕн вак-тĕвек
Сăмах çиçет: нимле жеманлăх
Çук çав этемсенче; унтан
Пурне те çивĕч ăспалан
Сӳтсе яваççĕ: çук педантлăх;
Йăлт ирĕк, тӳрĕ, илтекен
Ҫунта хăрани çук иккен.

## XXIV

Çапах унта столицăн чысĕ,
Хăйми, пур мода çыннисем.
Хăшне ялан куратăн эсĕ,
Унтах пур кирлĕ айвансем;
Ҫалпаклă, çилĕллĕ, çулланнă,
Пăхма хаяр пĕр-икĕ дама.

Куранкалаççĕ кăшт хĕрсем,
Çĕрĕпелех кулманскерсем;
Унта посланник, вăл патшалăх
Ĕçĕсене тапраткалать;
Унта шур çӳç-сухалпала
Духиллĕ ватă çын аваллăх
Йĕркипелен шӳт тукалать:
Пит ăслă та... халь кулăшла.

## XXV

Унтах ав эпиграмма ашшĕ,
Çиленнĕскер пур тĕнчене:
Хуçа чейне — ытла пылакшăн,
Хĕрарăмсен кăнттамлăхне,
Арçын тонне, çынсем темле пĕр
Роман пирки пĕлсе-пĕлмесĕр
Палканине, патша çуртне
Ик тăлăха çывхартнине,
Журнал-тфврашĕн суйине те,
Вăрçа, юра, хăй арăмне.

. . . . . . . .

. . . . . . . . . . .

. . . . . . . . . . .

. . . . . . . . . . .

## XXVI

Унта Проласов, хăйĕн ирсĕр
Чунне пула чап тытакан,
Пур альбомра та, Сен При евĕр,
Карикатура тăвакан;
Алкумнерех тăрать пур балăн
Патши — журнал картинĕ майлăн:
Тулли те хĕрлĕ сăн-сăпат;
Чĕнмест, сикмест, тумтирĕ çат.
Ютран çакланнă çулçӳревçĕ
Крахмал хытарнă çухапа,
Сĕмсĕрлĕхпе, мăнаçлăхпа
Хăнасене кулса илтерчĕ:
Шăп çеç пăхса пĕрне-пĕри,
Пĕр шухăш татрĕç ун пирки.

## XXVII

Анчах Онегин куç илмешкĕн
Пултараймасть пĕр çын çинчен.
Юратакан, хăюсăр, мĕскĕн
Ял хĕрĕ мар ун умĕнче:
Сивлек княгиня вăл, мухтавлă
Неван — патне ями хăватлă
Пике-турри вăл çак çĕрте.
Эй, этемсем! Эсир пурте
Тĕп аннĕр — Ева пек: мĕн панă—
Çав илĕртмест сире текех,
Леш вăрттăн йывăç патнеллех
Чĕнет сире çĕлен-ăнманă:
Çиме хушман улма таттар,
А унсăр рай та кирлĕ мар.

## XXVIII

Епле халь улшăннă Татьяна!
Епле вĕреннĕ хăй рольне!
Епле вăл час пĕлме пултарнă
Мăнаçлă çĕн меслетсене!
Кам курĕ халь хĕр пек çак аслăн
Пăхакана, çак пĕтĕм залшăн
Саккун парса тăракана?
Саватчĕ вăл Онегина!
Сĕм каçсенче пĕр тăтăш уншăн
Вăл, уйăх çинелле пăхса,
Ыйхи киличченех — таса
Хĕр халлĕн хурланатчĕ шăппăн,
Тӳлек, сăпайлă ĕмĕрне
Пĕрле шутлатчĕирттерме!

## XXIX

Яшши те юратать, ватти те;
Çапах та çамрăк чĕрепе
Хыпса çунни вăл сиплĕ питĕ—
Çурхи кĕрлен аслати пек;
Ăш çумăрпа уй-хир ешернĕн

Чĕре, савсассăн, çĕнелет-мĕн.
Хăватлă пурнăç ĕлкĕртет
Чечек те, тутлă çимĕç те.
Анчах кăшт çуллараххăн эпĕр
Хыпса ӳксен, вара чуна
Юлать салхуллă йĕр кăна:
Кĕрхи сив тăвăл çавăн евĕр—
Çаранлăхран ушах тăвать,
Вăрмансене вăл çаратать.

## XXX

Иккĕленӳ çуках: Онегин
Татьянăна халь юрататъ
Ачаш ача пек, кунĕн-çĕрĕн
Пĕр ун çинчен вăл шухăшлать.
Ас-пуçĕ чарнине пăхмасăр,
Куллен вăл халь княгиньăн капăр
Пусми умне утпа пырать,
Ăна мĕлке пек хăвалать,
Телейлĕ вăл — хулне витсессĕн
Хура сăсар тирĕпелен,
Е çунăхан тутипелен
Ун аллине кăшт сĕртĕнсессĕн,
Çынна сирсе патне пырсан,
Алтутрине илсе парсан.

## XXXI

Хăйне, епле вăл тăрăшсан та,
Пăхмасть княгиня, вил çаплах.
Килте хăй хапăл, хăнара та
Хушса илет пĕр-ик сăмах;
Хăш чух пуçне кăна таять вăл,
Хăш чух пачах курман пулать вăл;
Курнăçланмасть: ку йăлана
Кунта сивлеççĕ яланах.
Сăнтан ӳке пуçлать Онегин:
Леш е курмасть, е хĕрхенмест.
Типет Евгений; этеме

Туберкулез ҫӗнтернӗ, тейӗн.
Ҫай,—теҫҫӗ пурте,—тухтӑра,
Лешсем ярасшӑн курорта.

XXXII

А вӑл каймасть; ҫырмашкӑн хатӗр,
«Пырап» тесе, леш тӗнчене.
Татьянӑшӑн пулсассӑн пурпӗр
(Пӗлетпӗр хӗрарӑмсене).
А вӑл тӳрккес, хӑпасшӑн мар хӑй,
Шав ӗненет, ӑшаланать-ха;
Княгиньӑна чирлӗ пуҫпах
Сыв этемрен хӑюллӑрах
Хӗрӳ ҫыру ҫырать вӑл акӑ.
Хальччен ҫырассинче-мӗнте
Ҫурман та уссине питех,
Анчах кӑна вӑл ҫырнӑ, ахӑр,
Чӗри ытла ыратнӑ май.
Ак ҫырӑвӗ ун — лӑп та шай.

## *ОНЕГИН ҪЫРӐВӖ*

«Ҫурсах тӑратӑп: кӳрентерӗ
Ман вӑрттӑн шухӑшӑм сире.
Мӗнле хӑртса пӑхса тинкерӗ
Мӑнаҫлӑ куҫӑр халь пӗрре!
Мӗскер шыратӑп? мӗн тупасшӑн
Сире чуна уҫса парам?
Мӗнле хаяррӑн та усаллӑн
Эсир, тен, кулӑр халь манран!

«Сире эп ӑнсӑртран курсассӑн,
Хама кӑшт савнине туйсассӑн,
Шанма хӑймарӑм ун чухне:
Чӗреҫӗме эп итлемерӗм;
Мӑшӑрланса пӳлес темерӗм
Пуш ирӗклӗ кунӑмсене.
Пире тата пӗр сӑлтав чарчӗ...
Пуҫ хучӗ Ленский... Вӑл вилсен—
Чӗрем мӗне савса пурнатчӗ—
Йӑлтах эп писрӗм ҫавсенчен.

Пĕччен, пуриншĕн те эп ютчĕ;
Телейĕм — ирĕк канăçăм,
Тесе шутлаттăм. Турăçăм!
Мĕнле асап çав йăнăш кӳчĕ!

«Çук, çук, минутсерен курма,
Ăçта та хыçăртан пымашкăн;
Йăл кулнă ăшă тутăра,
Е куçăра савса пăхмашкăн,
Сăмахăра çеç тăнламашкăн;
Чунпа халь ăнланма мĕнпур
Ытарайми пахалăх, çынлăх
Сирте пĕрлешнине; хĕн-хур,
Асап тӳсмешкĕн сире çывăх,
Сăнран кайма, сӳнме... ак ырлăх!

«Ман çук вăл: сирĕншĕн çаплах
Тĕлли-паллисĕр сĕтрĕнетĕп.
Қашни кунах, кашни сехетĕм
Мана халь хаклă: кăлăхах
Çунса иртеççĕ кунăмсем,
Ахаль те çăмăл мар вĕсем.
Пĕлеп: кĕскелнĕ ĕмĕр манăн;
Анчах пăртак пурнам тесен,
Кăнтăрлапа сире курмашкăн
Ирех шанас пулать иккен...

«Хăратăп: сив куçпа халь эсĕр
Пăхса йăваш çырăвăма,—
Чеепелен хăтланнă,—тейĕр,
Ӳпкелĕр, пуçлăр ятлама.
Пĕлейĕсĕр — мĕнле вăл йывăр
Юратупа хыпса çунма,
Сехетсерен вĕри те чăрсăр
Юна ăспа лăплантарма;
Çĕре ӳксе, йĕрсе ярса,
Урăрсене халь ыталасшăн
Çунма, сире пур тархаса,
Ӳкĕнĕве — йăлт каламашкăн;
Çав самантрах — юри шăнтмашкăн

Сӑмахӑма та куҫӑма,
Тӳлеккӗн калаҫма, хаваслӑн
Халь сирӗн ҫинелле пӑхма!..

«Анчах антив: ҫук халӑм ман
Текех хама тӑмашкӑн хирӗҫ;
Йалт татӑклӑ: халь сирӗн ирӗк,
Эп парӑнатӑп шӑпама».

## XXXIII

Ответ-мӗн ҫук. Тепре вӑл ҫырчӗ:
Иккӗмӗшне, виҫҫӗмӗшне—
Ответ ҫуках. Кайма тӳр килчӗ
Пӗр пухӑва ун, кӗрсенех—
Татьяна хирӗҫ. Мӗн хаярӗш!
Ӑна курмасть, сӑмах хушмарӗ;
У! Халь епле вӑл хӑй тавра
Раштав шартламине сарать!
Епле тӳрккес тути тӑртаннӑ
Чарасшӑн сивӗ сӑмаха!
Онегин тинкерсе пӑхать:
Аҫта-ши хӗрхенӳ, ӑҫта ун
Куҫҫуль палли? Вӑл ҫук, вӑл ҫук!
Пӗр ҫилӗ ҫех унра кучух...

## XXXIV

Тата, тен, вӑрттӑн шикленӳ-тӗр:
Ҫынсем ан сисчӗр ӑнсӑртран,
Тет пуль, е упӑшка ан пӗлтӗр...
Ҫакна Онегин ман аван
Чухланӑ... Шанчӑк ҫук! Каять вӑл,
Хӑйне вӑрҫать те ылханать вӑл,
Вара, хӑйпе хӑй пӗр пӗччен,
Каллех писет пур ҫынсенчен.
Тӳлек кабинетра ӑна ак
Аса килет хаяр хандра
Тӗнче тӑрӑх пӗр вӑхӑтра
Хӑвалани, унтан сасартӑк
Вӑл ҫухаран ярса тытни,
Сӗм кӗтессе хупса хуни.

## XXXV

Каллех вăл вулама тапратрĕ—
Пĕр тĕлсĕр: Гиббăнĕ, Руссо,
Манзони, Гердĕрĕ, Шамфорĕ,
Мадам де Сталь, Биша, Тиссо,
Вĕсемпелех ак скептик Белĕ,
Е çивчĕ ăслă Фонтенелĕ.
Вуларĕ хамрăнне хăшне,
Тиркев тумарĕ нимĕне —
Альманахне те, журналне те:
Унта параççĕ ăс пире,
Мана ятлаççĕ халь хивре,
А хăш чухне мана питрех те
Мухтатчĕç çавăнтах тата:
Юрать, хăтланччĕр, господа.

## XXXVI

Евгений куçĕсем вулаççĕ,
Шухăшĕсем пит инçетре;
Чунне чĕр ĕмĕтсем тулаççĕ,
Чĕр тунсăх, хурлăх хĕстерет.
Кĕнекере çапса кăларнă
Йĕрке хушшисенче халь акă
Курать вăл урăх йĕркесем.
Çавна пăхать чун тинкерсе.
Ку — уçă кăмăллă, асамлă
Аваллăхăн юмахĕсем,
Яш чух тĕлленнĕ тĕлĕксем,
Юнав, сăнав, тахçан тăнланă
Тем тăршшĕ тĕшмĕш халлапсем,
Е çамрăк хĕр çырăвĕсем.

## XXXVII

Вара пур шухăш-сисĕм унăн
Вăрахăн тĕлĕрме пуçлать.
Куç умĕнче ун çĕрĕн-кунĕн
Тем те пĕр тĕрленсе куçать.
Е вăл курать: юнпа нӳрленнĕ
Лĕп юр çинче, тин тĕлĕрейнĕн,

Çап-çамрăк сăвăçă выртать,—
Вĕлертĕм!—тенĕ сас янрать.
Е куç умне усал хăравçă,
Элекçĕ, маннă тăшмансем,
Ултавлă çамрăк пикесем,
Киревсĕр юлташсем тухаççĕ,
Е — ял, пĕр çурт, чӳречерен
Хĕре курать вăл... çав хĕрех!..

## XXXVIII

Çапла вăл ухмаха аранчĕ
Ермерĕ, е кĕç поэта
Тухса каймашкăн пултаратчĕ,
Камит пулатчĕ, тупата!
Чăнах та: магнетизм хăвачĕ
Кĕçех ун чух уçса паратчĕ
Ман тăнсăр вĕренекене
Раççей сăввин çăраççине.
Пăхсассăн вăл поэт пекехчĕ:
Çунан каминĕ умĕнче
Тутипелен кăна пĕччен
*Пикем, Кумирăм!*—ĕнеретчĕ,
Хăй ӳкеретчĕ вут çине
Пĕр пушмакне, пĕр журналне.

## XXXIX

Кунсем вĕçеççĕ; хĕл епрерĕ;
Хĕвелĕ хĕртнĕçем хĕртет;
Вăл поэта тухса çитмерĕ,
Вилмерĕ, йӳтемерĕ те.
Ăна чĕртет çурхи çанталăк:
Камин хутса, ик хутлă кантăк
Лартса, арлан пек пĕр пĕччен
Хĕл каçнă пӳлĕмĕсенчен
Уяр ирпе вăл тухса кайрĕ;
Нева хĕррипелен пырать
Çунапала. Йăл-ял ялтрать
Чĕрсе пĕтернĕ кăвак пăрĕ.
Юр ирĕлсе çăрăлкалать.
Ăçта Онегин халь васкать?

XL

Эсир тӳрех ёнтĕ чухланă:
Ман тӳрлене пĕлми чудак
Ҫаллех персе ҫитет хăй савнă
Татьяна кил-ҫуртнех вăл ак.
Кĕрет — йăлт вилнĕ ҫын сăнарĕ.
Прихожăйра никам пулмарĕ.
Вăл — залнелле, шала утать:
Ҫын ҫук. Вăл алăкне уҫать.
Мĕскер ăна ăнтан ярать-ха?
Шап-шурă сăнлă, пĕр пĕччен
Княгиня унăн умĕнче,
Тумланнă-тумланман ларать хăй,
Чавсаланса ҫыру вулать,
Пĕр сасăсăр куҫҫуль тăкать.

XLI

Ҫам ҫак самант ун чĕмсĕр, тарăн
Хĕн-асапне ăнланмĕччĕ!
Ҫам ҫав княгиняра мăнтарăн
Хĕр-Таняна палламĕччĕ!
Тӳсме ҫук ӳкĕнсе, Онегин
Ҫукленчĕ ун умне тӳлеккĕн.
Леш шарт сикет те шарламасть,
Евгений ҫинелле пăхать
Ним тĕлĕнмесĕр, ҫиленмесĕр...
Ун чирлĕ, сӳннĕ пек куҫне,
Чĕнмесĕр тилмĕрен сăнне —
Йăлтах вăл ăнланать. Ялти хĕр
Чĕри, ялти хĕр ĕмĕчĕ
Унра каллех халь чĕрĕлчĕ.

XLII

Ăна вăл тăратмасть; пăхать хăй,
Ҫуҫне илмесĕр, ун ҫине;
Вĕри тутасенчен пăрмасть-ха
Сасартăк хытнă аллине...
Мĕскер вăл шухăшлать ҫак тапхăр?..
Пайтах вăхăт иртет сăмахсăр,
Вара хушать вăл ерипе:

«Тăрсамăр; çитĕ. Сирĕнпе
Эп тивĕç тӳррĕн калаçмашкăн.
Онегин, астăватăра
Эпир садра, аллейăра
Тĕлпулнă сехете? Йăвашшăн
Ун чух сире итлерĕм эп.
Паян ак хам сăмах илеп.

XLIII

«Онегин, эпĕ çамрăкрах та,
Тен, кăшт илемлĕрехчĕ те;
Сире саваттăм эп; анчах та
Мĕн тупрăм сирĕн чĕрĕрте?
Мĕнле ответ? Сип-сивĕ кăмăл.
Ан тунăр: пит çĕнех пулман вăл
Йăваш хĕр юратни сире.
Ак халь те — турăçăм!—чĕре
Шăнса каять ман, астусассăн
Çав сив куçа, çав ӳкĕте...
Анчах айăпламастăп эп:
Эсир пит ырă пулнă маншăн,
Хăрушă чух усал туман:
Эп тав тăватăп пур чунтан...

XLIV

«Ун чух, таçти ялта, кĕр-шавлă
Пурăнăçран инçе, сире
Эп килĕшменччĕ-çке... Ма халĕ
Мана йĕрлетĕр çак терех?
Мĕскершĕн-ха мана сăнарăр?
Е манăн халь ĕлккем те капăр
Çын хушшине тухмалларан,
Е эп пуян та чаплăран;
Е, вăрçăра аманса пĕтнĕ
Упăшкана пула, ялан
Пире патша юпкурнăран?
Е манăн намăсăм халь ĕнтĕ,
Пурне те куранса, сире
Ыр ятлă тăвĕ, тетĕре?

## XLV

«Йĕретĕп эп... Хальччен те эсĕр
Манман пулсассăн Таньăра,
Пĕлсемĕр: сирĕн çав чĕресĕр,
Сив кăмăллă сăмахăра —
Хамран килсессĕн — эп тем чухлĕ
Малараха хураттăм пулĕ
Çак халь мана кӳрентерен
Çырусенчен, тилмĕрӳрен...
Ун чух ача тесе хĕрхентĕр,
Кĕрсеттĕр манăн хутăма...
А халь!—мĕскершĕн ман умма
Куклентĕр-ха? Сирĕнни евĕр
Чĕрепелен те ăспала
Мĕнле-ха вакланас капла?

## XLVI

«Мана, Онегин, çак капмарлăх,
Пуш пурнăçăн ярăписем,
Куçран пăхан çынсем, мухтавлă
Кил-çуртăм, капăр балăмсем —
Мĕн вăл? Эп парăттăм хавасăн
Çак йăлăхтарнă маскарадăн
Мĕнпур чапне, кĕрне-шавне
Пĕр çӳлĕк кĕнекешĕнех,
Пăрахăç садшăн, хамрăн килшĕн,
Сире, Онегин, чи малтан
Тĕлпулнă вырăншăн, тата
Тӳлек масарăн кĕтессишĕн:
Унта халь няньăн пĕр пĕччен
Хĕресĕ йывăç айĕнче.

## XLVII

«Телей алла кĕрес пекехчĕ,
Умрахчĕ вăл!.. Анчах халь тин
Тавраймăн. Тен, кăшт кĕтмеллеччĕ,
Шухăшлаймарăм пулĕ, тен:
Мана йĕре-йĕре хам вата
Аннем хистерĕ; пур шăпа та

Пĕр танччĕ мĕскĕн Таньăна...
Эп арăм халь. Эсир мана
Текех ан шырăр, тархаслатăп;
Пĕлетĕп: сирĕн чĕрерте
Мăнаçлăх та пур, тӳрлĕх те.
Ма пытарас? сирех саватăп,
Анчах эп паранна — çынна;
Нихçан пăрахмăп эп ăна».

XLVIII

Вăл кайрĕ. Аçа çапнă евĕр
Евгений минресе тăрать;
Ниçта кайса кĕре пĕлмесĕр,
Чĕрипеле пăшăрханать.
Анчах сасартăк шпор янрарĕ,
Татьянăн упăшки курнайрĕ...
Кунта геройăма эпир
Çак хăйшĕн пит хăрушă ир
Хăварăпăр, ман вулаканăм,
Чылайлăх... ĕмĕрлĕх. Вăрах
Ун хыççăн çут тĕнче тăрăх
Çӳрерĕмĕр. Тинех карапăм
Пырса ларать çыран хĕрне.
Салам, урра! — тер пĕр-пĕрне.

XLIX

Эс кам пулсан та, вулаканçăм,
Тăшман-и, тус-и, эп санран
Паян юлташ пек уйрăласшăн.
Чипер юл. Эп сапалакан
Сăвăсенче мĕн шырасан та —
Шух асилӳ, кану е янтă
Картина, е хивре сăмах,
Е йăнăш тĕл — тур хуштăрах,
Ытахальтен, кăшт йăпанмалăх
Сана çак ман кĕнекере —
Шухăшламалăх та чĕре
Çеммилĕх, журналра вăрçмалăх —
Тупма пĕр пĕрчĕ те пулин.
Халь уйрăлар, сыв пул эппин!

## L

Сыв пул эс те, ман тӗлӗнтермӗш,
Эс те, ман тӗрӗс идеал,
Эс те, пӗчӗк пулин те — тӑтӑш
Ӗҫленнӗ ӗҫӗм — чӗрӗ хал.
Поэтшӑн мӗн паха — пурне те,
Йӑлтах эп сирӗнпе пӗлеттӗм:
Манаттӑм пурнӑҫ инкекне,
Туспа калаҫайманнине...
Пайтах, пайтах кун вӗҫсе иртрӗ
Куҫ умӗнче Татьянӑпа
Онегин палӑрнӑранпа;
Ун чух асам кристалӗ витӗр
Роман мӗнле вӗҫленессе
Кураттӑмччӗ тӗтреллӗн ҫеҫ.

## LI

Анчах туссем, ман чи пуҫламӗш
Ҫаврамсене итленисем...
Хӑшсем тек ҫук, Сади каларӗш,
Хӑш-пӗрисем — кунтан инҫе.
Вӗсемсӗрех пӗтертӗм хамӑн
Онегина. А леш... Татьянӑн
Идеалне юранӑ хӗр...
Пайтах, пайтах хупларӗ ҫӗр!
Телейлӗ — кам, ӗҫсе ямасӑр,
Лартса хӑварнӑ куркине,
Кам пурӑнӑҫ кӗнекине
Хупланӑ, вуласа тухмасӑр,
Сасартӑк: ҫавнашкал паян
Эп уйрӑлап Онегинран.

# САМАХСЕНЕ АНЛАНТАРНИ

## ПĔРРЕМĔШ ПАЙĔ

**Адам Смит** — Англири буржуаллă экономист.

**Амур** — юрату турри. Ăна çунатлă пĕчĕк арçын ача пек кă тартнă, аллине пĕкечепе çĕмренсем тыттарнă.

**Ананас** — Кăнтăр Америкăра ӳсекен тутлă çимĕç.

**Антраша** — балет сикки.

**Бал** — музыкăпа ташламалли каç.

**Бентам** — Англири юрист, буржуаллă писатель.

**Биржа** — лавăçсем (извозчиксем) тăракан вырăн.

**Бифштекс** — çурăм шăмми çумĕнчен касса ăшаланă ĕне аш

**Боливар** — вунтăххăрмĕш ĕмĕр пуçламăшĕнчи Кăнтăр Амери кăри революцие ертсе пыракан Симон Боливар ячĕпе кăларн шĕлепке.

**Брегет сехечĕ** — француз механикĕ Брегет шухăшласа кăлар нă кĕсъене чиксе çӳремелли çапакан сехет.

**Брента** — Адриатик тинĕсне юхса кĕрекен шыв, ун варрин че — Венеци хули.

**Валĕ** — сывă пул.

**Венера** — авалхи рим мифологинчи юрату хĕр-турри.

**Гондола** — Венецири хăйне евĕрлĕ кимĕ.

**Гостинăй** — хăнасене йышăнмалли пӳлĕм.

**Грим** — француз писателĕ.

**Денди** — шукăль.

**Диана** — авалхи Рим мифологинчи уйăхпа сунар хĕр-турр

**Дидло** — чаплă балетмейстер.

**Жилет** — çанăсăр, кĕске кăна тумтир.

**Зевес е Зевс** — авалхи грексен мифологинче — аслатипе çиçĕ турри, ытти турăсемпе çынсен ашшĕ шутланнă.

**Истомина** — чаплă балерина.

**Кавалергард** — гварди кавалерин офицерĕ.

**Каверин** — Пушкин тусĕ.

**Катенин** — поэт, критик, Корнель çырнисене куçарнăскер.

**Княжнин** — темĕн чухлĕ трагедипе комеди авторĕ, нумайăшн вăл французларан илсе хăй майлă çырнă.

**Клеопатра** — кунта вăл темле куçарнă пьесăн героини.

**Лимбург чăкăчĕ** — Бельги провинцинче Лимбургра тунă çемçе чăкăт.

**Лорнет** — авăрлă куçлăх.

**Мазурка** — поляксен ташши.

**Маскарад** — питсене тĕрлĕ маскăпа хупласа, тĕрлĕ фантазиллĕ тумтир тăхăнса, туса ирттернĕ бал.

**Мĕсье аббат** — господин аббат; аббат — католиксен монастырь пуçлăхĕ.

**Мильоннăй** — Питĕрти урам ячĕ, халь вăл — Халтурин урамĕ.

**Моина** — Озеров çырнă «Фингал» ятлă трагеди героини.

**Муза** — грексен мифологинчи тăхăр хĕр-турăран пĕри, поэта хӳтĕлекен.

**Назон Овидий** — Авалхи Рим поэчĕ. Ăна хăй сăввисемшĕн пуç янă пулнă.

**Нимфа** — авалхи грексен мифологинчи пĕчĕкрех турăсем: вĕсем вăрманта, шывра, тусем çинче т. ыт. çĕрте те пурăннă имĕш. Классикла оперăпа балет вĕсемсĕр иртмен.

**Озеров** — сентименталлă трагедисем çыракан. Унăн «Дмитрий Донскойĕ», 1807 çулта Наполеонпа вăрçнă чух лартнăскер, куракансене калама çук килĕшнĕ.

**Панталон** — ун чухне арçын шалаварне çапла каланă.

**Педант** — хăй пĕлнипе вĕçкĕнленекен, ыттисене кирлĕ-кирлĕмар çĕртех вĕрентме пăхакан çын, формалист.

**Петрарка** — XIV ĕмĕрти Итали поэчĕ, юрату çинчен йышлă сăвă çырнă.

**Поэт кăтартнă пек хăйне** — Пушкин кунта Муравьевăн «Нева хĕр-туррине» ятлă сăввине аса илет.

**Ромул** — легенда каланă тăрăх — Рим хулине пуçласа яракан çын.

**Ростбиф** — акăлчанла пĕçернĕ аш.

**Руссо** — француз писателĕ.

**Сей** — Францири буржуаллă экономист.

**Семенова** — трагедисенче вылякан чаплă актриса.

**Сплин, хандра** — тӳсме çук кичемлĕх, ӳркев, ним тума та кăмăл çукки.

**Страсбург кукăлĕ** — хур пĕверĕнчен пĕçернĕскер, ăна Страсбург хулинчен илсе килнĕ.

**Талон** — паллă ресторан хуçи.

**Терпсихора** — авалхи грексен мифологинчи ташă музи.

**Торквато Тассо** — Итали поэчĕ. Унăн «Хăтарнă Иерусалим» ятлă поэмине пĕтĕм Итали пĕлнĕ, уйрăм сыпăкĕсене Венецири кимĕçĕсем те юрланă.

**Трюфĕл** — ют патшалăхран кӳртернĕ хаклă кăмпа.

**Туалет** — тумтир, çи-пуç.

**Феокрит** — авалхи грек поэчĕ, сăввисенче кĕтӳçĕсен пурнăçне илемлетсе кăтартнă.

**Флора** — чечексен хĕр-турри.

**Фоблас** — Француз писателĕ Ливе де Кувре романĕсен геройĕ. Фоблас — ĕмĕрне тĕрлĕрен юрату мыскарипе ирттерекен çын.

**Фонвизин** — «Недоросль» çырса хăварнă вырăс драматургĕ.

**Фортуна** — авалхи Рим мифологийĕнчи телей, шăпа хĕртурри.

**Фрак** — малти аркисене касса кăларнă, хыçалтисене ансăр хŷре пек хăварнă арçын тумтирĕ.

**Царьград** — Стамбул, тĕрĕк патшалăхĕн ĕлĕкхи тĕп хули (Константинополь). Хаклă чĕлĕмсем Российăна çавăнтан кŷртернĕ.

**Цех** — ун чухне пĕр пек ĕçлĕ çынсен пĕрлешŷне пĕлтернĕ. Хастар цех — писательсем.

**Чадаев** (тĕрĕсрех — Чаадаев) — писатель, Пушкин тусĕ. Питĕрпе Мускаври «çŷлте тăран» çынсем хушшинче вăл раснах илемлĕ çи-пуçĕпе палăрнă.

**Чайльд-Гарольд** — Байронăн «Чайльд-Гарольд çулçŷревĕ» ятлă поэма геройĕ.

**Шаховской** — драматург тата театр тĕлĕшпе ĕçлекен.

**Швейцар** — пĕр-пĕр пурăнакан çуртăн е учрежденин алăкĕ умĕнче хурал тăракан.

**Энеида** — Рим поэчĕ Виргилий çырнă поэма.

**Эпиграмма** — пĕр-пĕр çынна хаяррăн тăрăхласа çырнă кĕске сăвă е каланă сăмах.

**Эпиграф** — автор хăйĕн произведенийĕ умне е унăн пайĕ умне çырса лартнă пĕр-пĕр кĕске цитата, сăвă, ваттисен сăмахĕ т. ыт. те.

**Ювенал** — авалхи Рим сатирикĕ.

**Ярус** — театрта стена çумĕсемпе тунă темиçе хутлă лармалли вырăнсем.

## ИККĔМĔШ ПАЙĔ

**Бригадир** — авалхи çар чинĕ, генералпа полковник хушшинчи.

**Геттинген** — хăйĕн университечĕпе палăрнă пысăках мар нимĕç хули.

**Гёте, Шиллер** — нимĕç поэчĕсем.

**Грандисон, Ловлас** — Ричардсон романĕсен геройĕсем.

**Дриадăсем** — авалхи грексен мифологинчи вăрман сывлăшĕсем.

**Кант** — нимĕç философĕ, идеалист.

**Мадригал** — кĕске кăна мухтав сăвви.

**Мĕскĕн Йорик!** — мыскараçă (шут) пуçчашкине курсан Гамлет каланă сăмахсем.

**Очаков медалĕ** — 1788 çулта тĕрĕк крепоçне Очакова илнĕ чух çапăçнăшăн панă медаль.

**Пырсам ман ылтăн кермене** — XIX ĕмĕр пуçламăшĕнче сарăлнă «Днепр вутăшĕ» ятлă фантазиллĕ оперăран.

**Ричардсон** — XVIII ĕмĕрти акăлчан писателĕ, **«Грандисон»** тата **«Клариса Гарлоу»** ятлă романсен авторĕ.

**Çурçĕр ен поэми** — вырăс поэми тенине пĕлтерет.

**Фармазон** — пăсса каланă сăмах «франкмасон». Çав ятпа хăйне евĕр тĕнпе политика тытакан пĕтĕм тĕнчери вăрттăн ушкăн членĕсене чĕннĕ. Российăра хăш-пĕр масон пĕрлешĕвĕсем тӳре-шарана хирĕç пулнă. Тĕттĕмрех улпутсен ăсĕпе «фармазон»—революционер, турăсăр тенине пĕлтернĕ.

**Франт** — шукăль.

## ВИÇÇĔМĔШ ПАЙĔ

**Агасфер** — авалхи легенда геройĕ, питĕ нумай çылăхлă çын. Хăйĕн çылăхĕсемшĕн ăна, ĕмĕрех вилмесĕр, тĕнче тăрăх сĕтĕрĕнсе çӳремелле тунă имĕш.

**«Благонамеренный»** — 1816—1826 ç.ç. тухса тăнă журнал.

**Богданович** — XVIII ĕмĕрти вырăс поэчĕ.

**Вампир** — Байрон ячĕпе çӳрекен «Вампир» ятлă фантазиллĕ повесть геройĕ. Анчах ăна Байрон çырнă тени — тĕрĕс мар, тет Пушкин.

**Ван-Дейк** — XVII ĕмĕрти Голланди художникĕ.

**Вензель** — пĕр-пĕр çыннăн ячĕпе хушамачĕн малтанхи саспаллисене пĕрлештерсе илемлĕ эреш туни, çырни.

**Вертер** — Гёте çырнă «Çамрăк Вертер асапĕсем» ятлă роман геройĕ.

**Галлицизм** — француз чĕлхинчи евĕрлĕ сăмах çаврăнăшĕ.

**Де-Линар** — француз писательници Крюднер çырнă «Валерия е Густав де-Линарăн Эрнест де-Г. патне янă çырăвĕсем» ятлă роман геройĕ.

**Дельфина** — француз писательници Сталь çырнă «Дельфина» ятлă роман героини.

**Ĕçке-çике те хурлăха та сăвăлакан** — Баратынский поэт.

**Клариса** — Ричардсонăн «Клариса Гарлоу» ятлă романĕн героини.

**Кокетка** — тĕрлĕ меслетпе арçынна юрасшăн, ăна çавăрасшăн тăрăшакан хĕр е хĕрарăм.

**Кумир** — пуççапмалли кĕлетке.

**Мадонна** — турă амăшĕн кĕлетки.

**Малек Адель** — француз писательници Коттень çырнă «Матильда е Хĕрес вăрçисем» ятлă роман геройĕ.

**Мельмот** — акăльчан писателĕ Матюрэн çырнă «Мельмот-çӳревçĕ» ятлă роман геройĕ.

**Парни** — XVIII ĕмĕрти француз поэчĕ, юрату сăввисем йышлă çырнă.

**Сар шаллĕ семинарист, калпаклă академик** — вĕреннĕ хĕрарăмсем.

**Сбогар** — француз писателĕ Ш. Нодье çырнă «Жан Сбогар» ятлă роман геройĕ.

**Светлана** — Жуковскин «Светлана» ятлă балладинчи хĕр.

**Феб е Аполон** — авалхи грексен мифологинчи хĕвел турри. искусствăсене хӳтĕлекенскер.

**Филлида** — сентименталлă сăвăсенче час-часах тĕл пулакан ят.

**Фрейшиц** — Веберăн «Асамлă ухăçă» ятлă чаплă оперин ниМĕçле ячĕ.

**Хут çыпăçтаркăç** — вăл саманара конверт-тавраш сахал тыткаланă. Çырусене сургучпа пичетленĕ е юри тунă хут çыпăçтаркăçпа çыпăçтарнă.

**Эклога** — ялти кĕтӳçĕсен пурнăçне илемлетсе çырнă калаçуллă сăвă. Кунта Онегин, эклога тесе, Ленский ял пурнăçне мухтанине калать.

**Юли Вольмар юратнă ар** — Жан-Жак Руссо çырнă «Çĕнĕ Элоиза» ятлă роман героини юратакан çын — Сен-Пре.

**Юлия** — Руссо çырнă «Çĕнĕ Элоиза» ятлă роман героини.

## ТĂВАТТĂМĔШ ПАЙĔ

**Аи** — шампань эреххисен пĕр сорчĕ.

**Асту, мĕн тенĕччĕ сатирик** — кунта Дмитриев çинчен каланă. Вăл хăйĕн «Чужой толк» ятлă сатиринче пĕр талантсăр та намăссăр ода çыракана тăрăхланă. Чее лирик тесе Пушкин çав «Чужой толк» геройне калать.

**Бордо** — хĕрлĕ эрех, шампань эреххинчен хăватсăртарах.

**Вальтер Скотт** — Шотландин чаплă писателĕ.

**Геллеспонт** — авалхи грексем Дарданел проливне çапла каланă. Байрон пĕринче çав пролив урлă ишсех каçнă.

**Ипокрена** — авалхи грексен мифологинчи хавхалану çăлкуçĕ, вăл Геликон тăвĕ çинче юхса выртнă имĕш.

**Клико, Моэт** — шампань эреххин чи лайăх фирмисем.

**Лафонтен** — кил-йыш пурнăçĕ çинчен нумай роман çырнă француз писателĕ.

**Ни йыт ни кашкăр** — Пушкин, шӳт туса, каçхи ĕнтрĕке пĕлтерекен француз сăмахне пат тӳрĕ куçарать.

**Ода** — çĕкленсе çырнă мухтав сăвви, пĕр-пĕр героя е историллĕ ĕçе мухтани.

**Прадт** — француз писателĕ; публицист, сатирик.

**Сатурн** — авалхи Рим мифологинче вăхăтăн тата ӳсентăран çимĕçсен турри шутланнă.

**Толстой** — Пушкин саманинчи паллă художник, иллюстратор.

**Хĕрлĕ кĕлесемпе пудра сапнă шурă париксем** — XVIII ĕмĕрти шукăльсен çи-пуçĕ.

**Шатобриан** — XIX ĕмĕр пуçламăшĕнчи француз писателĕ.

**Элеги** — хурлăхлăрах лирикăллă сăвă.

## ПИЛЛĔКМĔШ ПАЙĔ

**Аврора** — авалхи Рим мифологинчи шурăмпуç хĕр-турри.

**Альбани** — XVII ĕмĕрти Итали художникĕ.

**Бламанже** — хăймаран е миндаль сĕтĕнчен юрнă кĕсел пек апат.

**Бостон, ломбер, вист** — карт вăййисем.

**Буянов** — Пушкин мучĕш Василий Львович Пушкин шӳт туса çырнă «Хăрушă кӳршĕ» ятлă поэма геройĕ.

**Зизи** — Пушкин тусĕн А. Н. Вульфăн йăмăкĕ.

**Карикатура** — тăрăхласа ӳкернĕ сăн.

**Кушак юрри** — Пушкин халăх юррине илсе кăтартать:

Кушак аçи амине
Чĕнет кăмака хыçне.

Ку — час туй пуласса пĕлтернĕ.

**Мальвина** — Коттень çырнă темиçе томлă роман.

**Мармонтель** — XVIII ĕмĕрти чаплах мар француз писателĕ.

**Омир** — Гомер.

**Петриада** — Аслă Петĕр патша çинчен çырнă эпосла поэма. Грузинцевăн поэми «Петриада» ятлах пулнă, Ширинский-Шихматовăн «Аслă Петĕр», Сладковскин те «Аслă Петĕр» пулнă.

**Расин** — француз драматургĕ, «Федра», «Гофолия» т. ыт. те çырнăскер.

**Сенека** — авалхи Рим писателĕ.

**Советник** — ĕлĕкхи пĕр-пĕр учреждени членĕ, должность е чин.

**Çăкăнас** — чĕркуççие хутлатса, пуçтайса илни.

**Тепĕр поэт ....** — Пушкин кунта Вяземскин «Малтанхи юр» сăвви пирки калать.

**Финн пикине кăмăллакан** — Баратынский «Эда» ятлă поэмăра Финлянди хĕлне кăтартса панă.

**Халдейĕн ăрăмçи** — вăтам ĕмĕрсенче юмăç пăхса тăранса пурăнакансене çапла каланă. Халдея (урăхла — Вавилон) — хĕвелтухăçĕнчи авалхи патшалăх, унта чаплă çăлтăрçăсем-ăрăмçăсем пурăннă.

**Цимлянски** — Дон çинчи çав ятлă станица таврашĕнче тăвакан эрех.

## УЛТТĂМĔШ ПАЙĔ

**Барьер** — кунта дуэльре çапăçакан çынсем валли виçсе панă вырăн чиккине палăртакан йĕр.

**Вери** — Парижри ресторан хуçи.

**Гораций** — авалхи Рим поэчĕ, хăйĕн сăввисенче хула пурнăçне вăрçнă, ял пурнăçне мухтанă.

**Дельвиг** — поэт, Пушкинăн лицейри тусĕ.

**Дуэль** — иккĕн куçма-куçăн тăрса хĕçпе-пăшалпа, хăй майлă правилăсене пăхăнса, çапăçни.

**Лепаж** — чаплă пăшал ăсти.

**Регул** — авалхи Римăн çарпуçĕ, тăшман тыткăнĕнче хăйне хăй паттăрла тытнипе чапа тухнă. Пушкин унпа Зарецкине тăрăхласа кăна танлаштарать.

**Секундант** — дуэльре çапăçаканăн свидетелĕ, шаннă çынни.

## ÇИЧЧĔМĔШ ПАЙĔ

**Архив йĕкĕчĕсем** — ют патшалăх ĕçĕсен министерстви архивĕнче ĕçлекен вĕреннĕ çамрăк çынсене, шӳт туса, çапла чĕннĕ.

**Вăрахăн** — хăйсен лашисемпе, çул тăршшĕпех улăштармасăр.

**Вяземский** — поэт. Пушкин тусĕ.

**Гяурпа Жуан юрçи** — Байрон.

**Жеманлă** — курнăçланакан.

**Кий** — бильярд патакки.

**Кузина** — пĕр тăван çынсен хĕрĕсем.

**Левшин** — хуçалăх тĕлĕшпе чылай кĕнеке кăларнăскер.

**Лета** — авалхи грексен мифологинчи манăç çырми.

**Мельпомена** — авалхи грексен мифологинчи трагеди музи.

**Пăхăр пукане** — Наполеон кĕлетки.

**Приам** — авалхи грексен халлапĕ тăрăх—Трояри нумай ачапăчаллă патша. Ял-тавраш Приамĕ—ялта пурăнакан нумай килйышлă улпутсем.

**Пуштăпалан** — пуштă лаши тесе хысна лашисене каланă, вĕсене кашни станцăрах улăштарнă.

**Талия** — комеди музи.

**Форейтор** — вĕçе-вĕçĕн темиçе мăшăр лаша кӳлсен вĕсене тытса-йĕркелесе пыракана çапла каланă, хăй вăл пĕр малти лашине утланнă.

**Эпикурçă** — авалхи грек философĕ. Эпикур вĕрентнĕ пек пурăнакан: пурнăçра ĕçсе-çисе, юратса т. ыт. çавăн пек ырлăхпа киленсе ирттерме юратакан.

## САККĂРМĔШ ПАЙĔ

**Апулей** — авалхи Рим поэчĕ, «Ылтăн ашак» авторĕ.

**Асамлă кристалл** — юмăç пăхмалли кĕленче шар; çын ун витĕр пăхса хăйĕн пулас шăпине курнă имĕш.

**Бель** — француз писателĕ (XVIII ĕмĕр).

**Биша** — паллă француз тухтăрĕ, анатомипе физиологи кĕнеки çырнăскер.

**Вакханка** — авалхи грексен эрехпе çимĕç туррине Вакха пуççапакан хĕр.

**Вульгăр** — вульгарлă, илемсĕр, килĕшӳсĕр.

**Гердер** — нимĕç философĕ, поэчĕ, критикĕ, халăх сăмахлăхне пуçтараканĕ (XVIII ĕмĕр).

**Гиббон** — XVIII ĕмĕрти Англи историкĕ.

**Демон** — Пушкинăн чаплă сăвви (1823). Демон сăнарĕ—нимĕне ĕненмен, пурин пирки те иккĕленнĕ çынна пĕлтерет.

**Квакер** — Англири секта. Вĕсем патшалăх тĕнне, чиркĕве, пупсене йышăнман.

**Клеопатра** — авалхи Египетра пулнă хĕрарăм патша, хăйĕн илемĕпе чапа тухнăскер.

**Ком иль фо** — епле кирлĕ—çапла.

**Космополит** — нимĕнле халăха та тăван темен çын, тĕнче гражданинĕ.

**Ленора** — нимĕç поэчĕ Бюргер çырнă балладə героини.

**Магнетизм** — ун чухне гипнотизм, гипноз сăмаха пĕлтернĕ.

**Манзони** — XIX ĕмĕрти Итали поэчĕ, романисчĕ.

**Сади (е Саади)** — XIII ĕмĕрти Иран поэчĕ.

**Сен-При** — çамрăк офицер, Питĕрти çӳлте тăран çынсен альбомĕсенче талантлă карикатура ӳкернĕскер.

**Тиссо** — паллă француз тухтăрĕ, наукăллă кĕнекесем çырнăскер.

**Турăлла пуплеме манчĕ** — классикла литературăра турă сăмахĕ тесе поэзи чĕлхине каланă.

**Фонтенель** — француз писателĕ (XVIII ĕмĕр).

**Ханжа** — хăйне юри ырă кăмăллă пек, юри турра ĕненекен пек кăтартакан икĕ питлĕ çын.

**Цицерон** — Рим писателĕ, патшалăх деятелĕ.

**Шамфор** — Францири революци саманинче çырнă чаплă публицист.

**Шишков** — писатель, вăл вырăс чĕлхине ют сăмахсем кӳртесшĕн мар пулнă.

---

КОМСОМОЛЬСКАЯ
РАЙОННАЯ БИБЛИОТЕКА
ИНВ. № 9906.

Редактор *А. Алга*
Техн. редак. *Н. Степанов*

НТ 05415. Послано в производство 22-III-1950 г. Подписано к печати 20/VI-1950 г. Объем 11 п/л. Уч.-изд. л. 8,93. Бумага 84×108/32. Тираж 5000 экз. Заказ № 904.
Цена 6 руб.

Типография № 1 Чувашполиграфиздата при Совете Министров ЧАССР

г. Чебоксары, ул. Володарского, 5.

## АСӐРХАНӐ ЙӐНӐШСЕМ

| *Стр.* | *Йĕрке* | | *Çапӑннӑ* | *Вуламалла* |
|---|---|---|---|---|
| 14 | 17 | аялтан | çине пусать, | çинчен утать |
| 31 | 5 | „ | Ун | Ку |
| 35 | 14 | „ | танлаштармастпӑр | та туслашмастпӑр |
| 45 | 19 | „ | Ватти | Ватта |
| 47 | 13 | „ | тесе | теес |
| 53 | 14 | çӳлтен | Çав çын | Кирек |
| 116 | 8 | аялтан | хӑрайĕ | хӑрайрĕ |
| 119 | 13 | çӳлтен | куççулĕ | куççуллĕ |
| 128 | 11 | „ | юрттарчĕ | юрттарчĕç |

А. С. Пушкин. Евгений Онегин.